Шурӑмпуҫ

Пуш 2024

«Сувар» хаҫат ҫумӗнчи «Сунтал» пӗрлешӗвӗн литература кӑларӑмӗ

При поддержке Комиссии при Раисе РТ по вопросам сохранения, развития татарского языка и родных языков представителей народов, проживающих в Республике Татарстан

Кӑларакан ушкӑн:

Тӗп редактор И.Ф.Трифонова

Яваплӑ секретарь В.В.Александрова

Верстка С.Н.Колесникова

Корректор И.Н.Кузьмина, О.Н.Бердникова

Художник Ю.С.Капитонов

Редакци адресӗ: 420066, Тутарстан Республики, Хусан хули, Декабристсен урамӗ, 2-мӗш ҫурт, «Сувар» хаҫат редакцийӗ. Тел/факс 8(843) 518-33-75

Ал ҫырусене рецензилемеҫҫӗ, тавӑрса памаҫҫӗ. Кӑларӑмра редакци тата авторсен харпӑр архивӗсенчи, «Татар-информ» ИА сӑнӳкерчӗкӗсемпе усӑ курнӑ.

Адрес редакции: 420066, Республика Татарстан, г. Казань, ул. Декабристов, д. 2. Редакция газеты «Сувар». Для писем: 420066, г. Казань а/я 64. Сдано в набор 2024 г. Подписано к печати 12.03.2024. Формат 70×100 (1/16). Печать офсетная. Тираж 1000 Заказ № Отпечатано в типографии ИП Сорокина А.В. «Новое время», г. Чебоксары, ул. Мичмана Павлова, 50/1. Тел. (8352) 41-27-98.

ШУРĂМПУÇ КИЛМЕСĔР КУН ТЫТĂНМАСТЬ

«Шурăмпуç» журнал чăваш журналистикин аталанăвĕшĕн, чăваш культуришĕн питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнă. Шутласа каятăн та тĕлĕнетĕн, çав çăмăл мар тапхăрта та литература ĕçне аталантарма тăрăшнă. Совет влаçĕ йĕркеленнĕренпе çулталăк ытларах вăхăт кăна иртнĕ, лару-тăру лăпкă мар. Тепĕр енчен пăхсан, вăхăтлă та. Сăмахăн вăйĕ пысăк. Çамрăк правительствăн хăйĕн идеологине халăхра сармаллах. Мĕнле майпа? Хаçат-журнал урлă, авторитетлă çыравçăсен, журналистсен витĕмлĕ сăмахĕпе.

Çапла 1919 çулхи январĕн 15-мĕшĕнче «Шурăмпуç» журналăн 1мĕш номерĕ пичетленсе тухать. Ăна Нацисен ĕçĕсемпе Халăх Комиссариачĕн Чăваш уйрăмĕн органĕ кăларнă. Ятне ăнсăртран çеç паман. «Шурăмпуç каç тĕттĕмне сирсе çĕнкун килнине систернĕ пек пирĕн журнал та чăваш халăхĕн культура чĕрĕлĕвĕ пуçланнине пĕлтерет. Çавăнпа ăна «Шурăмпуç» ят паратпăр та», – тенĕ умсăмахра.

Ĕмĕрĕ кĕске пулсан та чăваш культуринче тарăн та пĕлтерĕшлĕ йĕр хăварнă вăл. Икĕ çул ытларах пичетленнĕ журнал редакторсен енчен пуян пулать. Тĕрлĕ вăхăтсенче кăларăма А.П.Лобов, Д.Е.Ефимов, А.В.Васильев, А.Л.Лукин, Е.Ф.Фадеев, Н.А.Андреев, В.И.Токсин ертсе пыраççĕ. Пурĕ 18 номер пичетленет, хăш-пĕр номерсене пĕрлештерсе кăларнипе пурĕ 11 кĕнекен тухнă. Юлашки 15–18 номерсем Хусанта 1921 çулта кун çути курнă. Граждан вăрçи вăхăтĕнче кадрсем енчен те, хутпа чăваш шрифчĕ енĕпе те çитменлĕхсем пулнине кура вăл хупăнать.

«Шурăмпуç» чăваш халăхĕ хушшинче политика ĕçĕсене илсе пырас енĕпе пысăк усă кӳнĕ, унсăр пуçне унпа шкулсенче те вĕреннĕ. Революципе, литературăпа çыхăннă статьясемсĕр пуçне наука ĕçĕсем те пичетленнĕ. Вĕрентӳ пособийĕ пекех пулса тăрать вăл.

Паллах, тĕп вырăнта литература ĕçĕсем. Ун страницисенче К.В.Ивановăн

«Нарспийӗ», М.Ф.Федоровăн «Арçурийӗ», Н.В.Шупуççыннин «Хитре чӗкеçӗ», çав шутра вырăс классикӗсен хайлавӗсем те пичетленнӗ.

Каярах йӗркеленнӗ «Сунтал», «Ялав» журналсемшӗн те вăл хăй евӗр флагман пулса юлать.

«Шурăмпуç» журнал пирки вăл йӗркеленнӗренпе 76 çул иртсен – 1995 çулта, Хусанта пурăнакан чăваш интеллигенцийӗ аса илет. Истори тапхăрӗ те пӗрешкелтерех. Ун чухне Совет влаçӗ йӗркеленнӗ пулсан халӗ Совет çӗршывӗ арканнă хыççăнхи самана. Çӗнӗ Раççейӗн пӗрремӗш утăмӗсем... Обществăри шухăшлавсем тӗрлӗрен, сапаланчăк... Шăп çак тапхăрта Тутарстанра наципе культура автономийӗсем йӗркеленме тытăнаççӗ.

Хусанта пурăнакансем те пуçтарăнса 1993 çулта хăйсен пӗрлешӗвне йӗркелеççӗ. Тепӗр икӗ çултан журнала çӗнӗрен чӗртсе ярас ӗç хута каять. Ку ӗçре паллă вырăн «Сувар» хаçатăн ун чухнехи редакторӗ Н.М.Сорокин йышăнать. Журнал Тутарстанра пурăнакан чăваш çыравçисемшӗн пичетленмелли тӗп площадка пулса тăрать. Шел те, тӗрлӗ сăлтава пула регистрациленнӗ журналăн ӗçӗ каллех путланса ларать. Çапах та ӗçӗ юлать.

«Суварăн» çӗнӗ редакторӗсем А.К.Иванов та, К.А.Малышев та «Шурăмпуçа» 2-3 çула пӗрер номер кăларсах тăраççӗ, журналăн регистраци номерӗ çук пулин те. Чăваш культури аталанăвӗшӗн çунакан меценатсем пулăшнипе, редакци ӗçченӗсем тăрăшнипе ун ӗмӗрӗ татăлмасть.

Паян сирӗн аллăрта шучӗпе 9-мӗш номер. Кăçал «Шурăмпуç» йӗркеленнӗренпе 105 çул çитрӗ, юбилей сумлă. Литература кăларăмӗ тетпӗр ăна халь. Анчах ку пӗлтерӗшлех те мар пулӗ. Чи кирли – «Шурăмпуç» тухса тăни. Ку умӗнхи номер «Татмедиа» Пичетпе массăлла коммуникацисен агентстви грант парса пулăшнипе кун çути курчӗ. Хальхинче ТР Раисӗ çумӗнчи Тутар чӗлхине тата Тутарстанра пурăнакан ытти халăхсен чӗлхисене аталантарассипе комисси тӗрев панипе кăларма пултартăмăр. Пысăк тав сăмахӗсем калатпăр Комисси Председательне, ТР Патшалăх Канашӗн Председателӗн çумне Марат Ахметова, ТР Патшалăх Канашӗн Вӗрентӳпе культура, наука тата наци ыйтăвӗсемпе комитет председательне Айрат Зарипова. Вӗсем тӗрев панипе Тутарстанри чăваш çыравçисен хайлавӗсем вулакан патне çитеççӗ, литература кăларăмӗпе пӗрле ӗмӗрлӗхе историе кӗрсе юлаççӗ.

Паллах, «Сувар» хаçат редакцийӗнче ӗçлекен журналистсене пысăк тав сăмахӗсем каламалла. Хаçат ӗçне туса пынисӗр пуçне журнал валли те вăхăт тупаççӗ. Нумайăшӗн ӗçӗсем ку номерте пичетленнӗ.

Тата каласа хăвармаллах, кăларăма «Шурăмпуç» журнал йӗркеленнӗренпе 105 çул çитнине кăна мар, «Сувар» 30 çул тултарнине те халалланă. Хаçатăн тӗп редакторӗн çумӗн Вера Александрован статйине вуласа хаçат историйӗпе паллашатпăр. Ирина Кузьмина ятарлă çар операцийӗ пирки авторла курăмӗ чуна пырса тивет, шухăшлаттарать. Çакăнтах Константин Малышевăн хайлавӗсемпе паллашма пулать.

Авторсем. Вӗсем пулмасан литература кӑларӑмӗ мӗнле тӑрӑшсан та тухаймасть. Чи пӗлтерӗшли – тытӑм, шухӑш. Ҫӗнӗ кӑларӑма Тутарстанра пурӑнакан чӑваш писателӗсемпе поэчӗсен хайлавӗсем кӗнӗ. Темисем тӗрлӗрен, тӗп геройсемпе пӗрле Аслӑ вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи, хыҫҫӑнхи ҫулсене утса тухатӑн, чун ыратӑвне чӗре витӗр кӑларатӑн. Валери Туктарӑн «Ялтӑрмипе» Лидия Угахинан «Марье» калавӗсем шӑпах ҫав вӑхӑта илсе каяҫҫӗ. Аскольд Де Герсо «Таврӑнни» хайлавӗнче ҫемье проблемисене ҫӗклет. Ҫӗнӗ автор Ирина Большакова ачалӑха ӑсатать. Николай Андреевӑн «Усӑллӑ тӑкак», Ухтияр Илюхинӑн «Ма чӗнеп-ши?» камитле калавӗсене вуласа кулленхи хӗвӗшӳрен вӑхӑтлӑха та пулин уйрӑлса канса яратӑн.

Тутар ҫыравҫисене те вырӑн панӑ. Ренат Харисӑн «Турӑ Амӑшӗн Хусан турӑшӗ» поэмине, Разиль Валеевӑн, Равиль Файзуллинӑн, Зиннур Мансуровӑн, Айрат Галимзяновӑн, Галимзян Гильмановӑн сӑввине кӗртнӗ.

Уйрӑммӑн ятарлӑ ҫар операцине халалланӑ пай ҫинчен каласа хӑвармалла. Маргарита Литтапа Ирина Кузьминан статйисемсӗр пуҫне Николай Нестеровпа Алексей Романов сӑввисене кӗртнӗ унта. Вӗсем иккӗшӗ те нацистсене хирӗҫ кӗрешӳре пӗрремӗш ретре. Вӑрҫӑ хӑрушлӑхне куҫран пӑхнӑ чухне алӑ калем патне туртӑнни хӑйех сӑмах вӑйне кӑтартмасть-и? Вӗсем поэтсем мар, анчах чӗререн тухнӑ сӑмах чылай хаклӑрах.

Литература улӑпӗсен – Николай Зиминпа Анатолий Малышевӑн хайлавӗсем вара кӑларӑма сум кӳреҫҫӗ.

Хитре пулса тухрӗ пур енчен те «Шурӑмпуҫ» – шухӑшӗпе те, тытӑмӗпе те, авторсен тӗрлӗлӗхӗпе те. Шурӑмпуҫ килмесӗр кун тытӑнмасть, апла малашне те пурӑнӗ пирӗн юратнӑ «Шурӑмпуҫӑмӑр».

Ирина ТРИФОНОВА,
тӗп редактор.

ПАР АЛЛУНА, ТĂВАН ХАÇАТ «СУВАР»!

Тутарстанри чăвашсен хаçачĕн 1-мĕш номерĕ 1993 çулхи август уйăхĕнче кун çути курнă. Хаçатăмăр 30 çул тултарчĕ.
30 çул Хусанта пичетленсе эрнесерен вулакан патневаскать вăл. Халĕ, чылайранпа ĕнтĕ, республикăри чăвашсем патне кăна мар, Раççейĕн тĕрлĕ регионĕнче пурăнакан йăхташăмăрсем патне те çитет. «Сувара» Чăваш, Пушкăртстан, Марий Эл республикисенче, Ульяновск, Самара, Челябинск, Ленинград облаçĕсенче çырăнса илсе вулаççĕ.

Минтимер Шаймиев пулăшнипе

Мĕнле çуралнă-ха «Сувар» хаçат? Камсем тăрăшнă 30 çул хушши тăван чĕлхепе тухакан хаçатсăр пурăннă чăвашсене çĕнĕрен пичет кăларăмĕллĕ тăвас тесе? 1921-1922, 1936 – 1963 çулсенче Хусанта тухса тăнă «Хĕрлĕ ялав» (1960 çултан – «Ленин ялавĕ») хупăнсан Тутарстан чăвашĕсем виçĕ теçетке çул хăйсен республика шайĕнчи хаçачĕсĕр пурăннă. Ыйтман мар йăхташăмăрсем хаçат кăларма, анчах ĕç вырăнтан хускалман. Иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсен пуçламăшĕнче çеç тахçантанпа кĕтнĕ пичет кăларăмне кун çути кăтартма май килнĕ.

Аса илер-ха эппин хаçатăн историне. Ăна уçас тесе нумай çын тăрăшнă иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче. Вĕсенчен пĕри – Николай Степанович Степанцев. Вăл «Суварта» нумай çул ĕçлерĕ, Хусанти П.Хусанкай ячĕллĕ Чăваш обществăпа культура центрне йĕркелесен чи малтан председатель пулса ертсе пыраканĕ те вăлах. Акă мĕн çырать Н.С.Степанцев çав çулсем пирки Сувар» хаçатăн 1998 çулхи августăн 28-мĕшĕнче пичетленнĕ «Хаçатăн тумхахлă çулĕ» статйинче: «Сувар» Тутарстанри халăхсен пĕрремĕш Президенчĕ Минтимер Шарипович Шаймиев пулăшнипе уçăлчĕ. Унччен хаçат уçас никĕсе Аксу, Октябрь, Çарăмсан, Елабуга, Теччĕ, Пăва, Çĕпрел тата ытти районсенчи общественность хыврĕ. 1992 çулхи февральте Хусанта Чăвашсен обществăпа культура центрĕ йĕркеленчĕ. Ăна Чăваш халăх поэчĕн Петĕр Хусанкайăн ятне патăмăр. Мана унăн председательне суйларĕç. Çакăн хыççăн пысăк пуçлăхсен пӳлĕмĕсене кĕрсе тухма та çăмăлланчĕ.

1992 çулхи майăн 19-мĕшĕнче Г.Камал ячĕллĕ театрта Тутарстанри халăхсен пĕрремĕш съезчĕ иртрĕ. Унта чăваш халăхĕн çивĕч ыйтăвĕсемпе эпĕ те тухса калаçрăм. Уйрăмах республикăри чăвашсемшĕн тăван чĕлхепе республика хаçачĕ кирли пирки чарăнса тăтăм. Республика ертӳçисем шухăша ырларĕç те Хусанта чăваш хаçатне уçма ирĕк пачĕç. Унччен эпир Хусанти нумай нациллĕ организацин председателĕпе ТР Вице-президенчĕ

Василий Лихачев патĕнче пулнăччĕ, каярах ТР Информаципе пичет министерствине кĕрсе тухрăмăр.

1993 çулхи май уйăхĕнче чăваш хаçатне йĕркелесе ярас пирки эпĕ, Владимир Данилов тата Николай Сорокин Президент патĕнче йышăнура пултăмăр. Çакăнта çирĕплетрĕмĕр те ĕнтĕ «Суварăн» пĕрремĕш редакторне – Владимир Ильич Данилова, ТАССР Аслă Совечĕн депутатне, «Известия Татарстана» хаçат корреспондентне».

Пĕрремĕш пепке

«Суварта» нумай çул ĕçленĕ Виталий Елтов та (йывăр тăпри çăмăл пултăр) хаçат уçăлсан кăна хăй калашле «ăнсăртран кĕмсĕрт» редакцие килмен. Хăй çуралса ӳснĕ ял – Аксу районĕнчи Аслă Сĕнчел – çыннисем чăвашла хаçат уçма ыйтса çырнă уçă çырупа вăл СССР халăх депутачĕ Ф.Г.Григорьев патне 1990-мĕш çулсен пуçламăшĕнчех кайнă. Депутат чăвашсен пуçарăвне ырланă, пулăшма килĕшнĕ. Чăн та, нумай алăксем уçа-уçа кĕнĕ вăл пысăк пуçлăхсем патне чăвашсене хаçат уçма пулăшас тĕллевпе. Нумай та вăхăт иртмен, «Республика Татарстан» хаçатра чăваш хаçачĕ уçăласси пирки хыпар пичетленнĕ. Анчах пĕр кĕтмен çĕртен СССР саланса кайнă та Фирс Григорьевич Григорьев депутат статусне çухатнă, пуçланă ĕçе вĕçне çитерме май килмен.

Çапах та унăн эстафетине Хусанти хĕрӳ чĕреллĕ чăвашсем тытса илнĕ. Виталий Филимонович Елтовăн статйинчи йĕркесемпе паллашар-ха: «Тӳрех калатăп: «Сувар» хаçата уçассине Аслă Ăнă чăвашĕсем, Николай Степанович Степанцевпа Николай Михайлович Сорокин, тахçанах Хусанта тĕпленнĕскерсем, пысăк тӳпе кĕртрĕç. Вĕсем саманана ăнланса илсе Хусанта чăвашсен обществăпа культура центрне никĕслесе йăхташсене ун тавра чăмăртарĕç. ЧОКЦ тăрăшнипе часах Хусан хумĕсемпе чăвашла кăларăм – «Çич çăлкуç» – радио итлекенсем патне çитрĕ. Шăп Николай Степанович «Çич çăлкуç» редакторне Петр Михайлович Мирова панă интервьюран пĕлтĕм Тутарстан Правительстви республикăри чăвашсемшĕн хаçат уçма постановлени йышăннине, унăн редакцийĕнче тăван чĕлхене лайăх пĕлсе çыракансем кирлине.

Николай Степанцевпа тĕл пултăм. Вăл тĕп редактор телефонĕсене пачĕ. Владимир Ильич Данилов мана Патшалăх Канашĕнче кĕтсе илчĕ. Халăх депутачĕ пулнăран унăн ĕç пӳлĕмĕ те пурччĕ. Хампа пĕрле «Хусан» альманахра пичетленнĕ «Йĕтес кĕпи» калава, «Республика Татарстан» хаçатра пичетленнĕ статьясене илнĕччĕ. Вĕсемпе паллашсан Владимир Ильич ыррăн кулса илчĕ.

– Шутламан та Хусанти чăвашсен хушшинче тăван чĕлхепе тĕплĕ çыракан çын пур тесе. Халех заявлени çырăр. Сире ырантанах çур ставкăпа совместительство никĕсĕпе ĕçе илĕпĕр, – терĕ вăл мана.

Çапла 1993 çулхи июль уйăхĕнчен эпĕ «Суварта» ĕçлеме пуçларăм. Август пуçламăшĕнчен редакцие тăтăшлăхах куçрăм…

Часах Шупашкартан «Суварӑн» пӗрремӗш номерне кӳчӗҫ. Савӑнтӑмӑр ӑна вуласа. Темиҫешер хут тишкерсе тухрӑмӑр. Ҫырнӑ чух асӑрхайман кӑлтӑксене тупса кулянтӑмӑр. Владимир Ильич та тем пекех хӗпӗртерӗ. Мӗнле савӑнмӑн – ку вӑл унӑн, коллективӑн пӗрремӗш пепки! Вӑл уралантӑр тесен уншӑн пӗчӗк ачашӑн тӑрӑшнӑ евӗр вӑй хумалла.

Ҫав кун коллективӑн пухӑвӗ те иртрӗ. Владимир Ильич пурин умне те тӗллевсем лартрӗ: ҫул вӗҫлениччен тата тепӗр номер кӑлармалла, ун валли, ҫӗнӗ ҫултан тӑтӑш тухакан номерсем валли материалсем хатӗрлемелле. Халӗ вара тӗп вырӑнта – пичетленнӗ тиража республикӑри мӗнпур чӑваш ялӗсенче салатса йышлӑрах ҫырӑнтарассине йӗркелемелле.

Редакци «Волги» кансах тӑмарӗ ун чухне. Водителӗ те пултарулличчӗ. Ильдар абый ӗлӗкрех Минтимер Шарипович Шаймиева турттарнӑ. Ҫитес ҫӗре хӑвӑрт ҫитеретчӗ. Владимир Ильич хӑй те руль тытма ӑстаччӗ. Темиҫе хутчен те унпа пӗрле шофӗрсӑрах командировкӑсене тухса ҫӳренӗ. Унта та вӑл ӗҫ кунӗ вӗҫленсен «ӗҫшӗн тав сире» тетчӗ...» – ҫырать хӑйӗн статйинче Виталий Елтов (Сувар, 28.08.1998).

Хаҫат чӑрмавсӑр ҫуралмасть

Пӗрремӗш номере салатнӑ май иккӗмӗш валли те материалсем пухса ҫитернӗ редакцире ӗҫлекенсем. Ӑна ӗнтӗ Шупашкарта мар, Хусантах кӑларасшӑн. Анчах... сасартӑк октябрь уйӑхӗнче тӗп редактор вилсе кайнӑ. Эрнесерен тухма ӗлкӗреймесӗрех хаҫат тӗп редакторсӑр тӑрса юлнӑ. Уяр кун аҫа ҫапнӑ пек пулнӑ ку ырӑ ӗҫе пуҫӑннӑ Хусан чӑвашӗсемшӗн.

«Тӳсме йывӑр. Анчах та вӑхӑт иртет, Ҫӗнӗ ҫулччен икӗ уйӑхран та кая юлчӗ. 1994 ҫулхи январьтен пуҫласа хаҫата кашни эрнере кӑларма тытӑнмалла. Ислам Ахметзянов министр мана редактор пулма сӗнет, ИТАР-ТАСС ӗҫне пӑрахмасӑрах ӗҫлӗн тет. Мӗнрен тытӑнмалла-ши? Шухӑшласан – пуҫ ҫаврӑнать. Пӗрремӗш йывӑрлӑх – пичетлекен машинкӑсене чӑвашлатасси. Специалистсемпе калаҫатпӑр. «Сахалтан та ҫур ҫул кирлӗ», – теҫҫӗ. «Чи нумайӑи – уйӑх ҫурӑ», – тетӗп. «Ҫук, пултараймастпӑр», – теҫҫӗ. Тепӗр кун татах ҫакӑн пек калаҫу.

– Юрӗ, хӑтланса пӑхатпӑр, – терӗ тинех ӑстаҫӑ. – Кунӗн-ҫӗрӗн ӗҫлемелле пулать, хакне ӳстерӗр.

Тинех килӗшрӗмӗр. Каччӑсем шантарнине пурнӑҫласси пирки иккӗленме пӑрахрӑм, хаҫатӑн ҫӗнӗ ҫулӑн 1-мӗш номерне хатӗрлессипе ӗҫлерӗмӗр. Ҫемьепе пӗрле 1994 ҫула кӗтсе илме хатӗрленнӗччӗ ӗнтӗ, сасартӑк типографирен шӑнкӑравларӗҫ:

– Саспаллисем ҫапӑҫаҫҫӗ!

Эп малтан шӳтлеҫҫӗ пуль тесе, ҫӗнтерӗве палӑртма ҫапла шӳтлесе чӗнеҫҫӗ пуль мана тетӗп. Анчах та кунта ҫӗнтерӳ шӑрши те ҫук иккен. Программистсем йӗменни кӑна. Саспаллисем чӑнах та «ҫапӑҫаҫҫӗ» иккен, юнашар йӗркесене текстран тӗрте-тӗрте кӑлараҫҫӗ. Ку чӑваш алфавитӗнчи саспаллисен тӑрринче тата аялта ҫекӗлсем пуррипе

çыхăннă. Текстра нумай тата вĕсем. Вĕсене пула йĕркесем хулăнланаççĕ, йĕркене вырнаçмаççĕ – тепĕр йĕркене тĕртсе кăлараççĕ те текст ăнланмалла мар пулса тухать.

Программист-каччăсем килĕсене шăнкăравласа Çĕнĕ çула кĕтсе илме кая юлса килетпĕр тесе пĕлтерчĕç те малалла ĕçлеме пуçларĕç. 5 талăк ырми-канми тăрăшрĕç, çывăрма килĕсене те каймарĕç. Январĕн 6-мĕшĕнче компьютерсем тинех чăвашла тĕрĕс «калаçма» пуçларĕç. Программистсем те, эп те савăнтăмăр, ĕç ăнăçлă вĕçленнине паллă тăватпăр. Çав вăхăтра районсенче скандал çĕкленнĕ.

– Шантарнă хаçата илмерĕмĕр. Çырăнакансене улталарĕç! – тесе тĕрлĕ инстанцисене шăнкăравлаççĕ чăвашсем.

Редакцире вара хĕрсе ĕç пырать – журналистсем пĕрлештернĕ икĕ номере кăларас тесе чупкалаççĕ. Çĕнĕ çулăн иккĕмĕш эрни вĕçĕнче тин пирĕн 1-мĕшпе 2-мĕш номерсем йĕкĕрешлĕ тухрĕç. Вулакансенчен каçару ыйтса çыртăмăр, урăх кун пек тăсмăпăр тесе сăмах патăмăр. Тинех хаçат кашни чăваш ялне çитрĕ. Вулакансем кăмăллă. «Тавтапуç!» – тесе çырнă çырусем килеççĕ редакцие.

Хĕрарăмсенчен ача çуратма çăмăл марри пирки пĕрре мар илтнĕ. Хам та вĕсен асапне чун-чĕрепе, кĕлеткепе туйрăм – хаçат çуратни ĕмĕр асра юлчĕ. Кун пирки хамăр ентеш, Чăваш халăх поэчĕ Порфирий Афанасьев сăвăласа пуринчен илемлĕрех каларĕ:

Пар аллуна, тăван хаçат «Сувар»!
Асаплăн, тертлĕн çуралан пулин те.
Эс вăйлă пуласса шанатăп питĕ –
Ӳс, аталан, хĕм сап, кĕреш, пултар!» –

аса илет хăйĕн «Чĕререн тухакан сăмахсем» статйинче (Сувар, 26.03.2004) тата «Свети, мой Млечный путь» кĕнекинче «Сувар» хаçатăн иккĕмĕш редакторĕ пулнă Николай Сорокин (йывăр тăпри çăмăл пултăр).

Пĕчĕк коллективпах пысăк ĕç тăватпăр

Çапла йывăрлăхсене çĕнтере-çĕнтере малалла талпăннă Хусан чăвашĕсем. Малтанах редакцин хăйĕн кулленхи пӳлĕмĕсем те пулман – виçĕ çул хушши вырăнтан вырăна куçса çӳренĕ суварçăсем. Каллех Тутарстан Президенчĕ Минтимер Шаймиев чăвашсен хутне кĕнĕ – Чистопольская урамĕнчи 5-мĕш çуртра пӳлĕмсем уйăрса панă. Унта хаçат ĕçченĕсем 2013 çулхи кĕркуннеччен ĕçлерĕç. Унтан çулталăк Академическая урамĕнчи 2-мĕш çуртра, 2014 çулхи октябрь уйăхĕнчен паянхи кунччченех Декабристсен урамĕнчи 2-мĕш çуртра «ТАТМЕДИА» АОна кĕрекен ытти хаçат-журналсен редакцийĕсемпе пĕрле тăрăшаççĕ.

Хаçатăн ăнăçлă аталанăвĕнче тĕп редакторсен тӳпи питĕ пысăк. Вĕсем тăрăшса ертсе пынипех «Сувар» паянхи кун та вулакансем патне çитме

васкать. Кашни редактор тав сӑмахне тивӗҫлӗ: пӗрремӗш редактор Владимир Ильич Данилов та, ун хыҫҫӑн 1998 ҫулхи март уйӑхӗччен коллектива ертсе пынӑ Николай Михайлович Сорокин та, 2003 ҫулхи августчен тӑрӑшнӑ Александр Кириллович Иванов та, 15 ҫул ертӳҫӗ тилхепине тытса пынӑ Константин Анатольевич Малышев та. 2019 ҫулхи май уйӑхӗнчен пуҫласа «Сувара» питӗ пултаруллӑ журналист тата ҫыравҫӑ Ирина Федоровна Трифонова ертсе пырать. Вӑл ӗҫе пӗлсе йӗркелесе пынӑран пӗчӗк коллективпах пысӑк ӗҫ туса пыраҫҫӗ паян суварҫӑсем. Тираж чакса пыни кӑна хурлантарать пире. Вӑхӑтӗнче 6 пин экземпляртан та иртнӗ «Суварӑн» тиражӗ. Халӗ пурин аллинче те смартфон пулни те пичетленсе тухакан хаҫатӑн пӗлтерӗшне чакарать пулӗ. «Эпир интернетра вулатпӑр», – теҫҫӗ хӑш-пӗрисем. Ҫапах та типографирен пичетленсе тухнӑ хыпарӑн вӑйӗ пысӑкраххине шанас килет. Ентешӗмӗрсем мӗнле йывӑрлӑхсене ҫӗнтерсе чӑвашла хаҫат уҫнине хисепе хурса «Сувара» пӗтме парар мар, пурте пӗрле тиражне ӳстерме тӑрӑшар, хаклӑ вулаканӑмӑрсем.

Чӑваш пулар, пӗрле утар!

Вера АЛЕКСАНДРОВА,
тӗп редактор ҫумӗ.

Суварçăсем, 2019 çул.

Редакци коллективĕ, 2022 çул.

2014 çул.

2004 çул.

ЭРНЕКУН ПАРНИ
ЧĂВАШ ПУЛАР, ПĔРЛЕ УТАР
СУВАР
ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ЧĂВАШ САССИ
ЧĂВАШ ПУЛАР, ПĔРЛЕ УТАР
САВАР
АТТЕ, ПУÇЛĂХ, ТУРĂ
В.И.Данилов
1-мӗш редактор

Н.М.Сорокин
2-мĕш редактор

А.К.Иванов
3-мӗш редактор

К.А.Малышев, 4-мĕш редактор

Тутарстанри чăвашсен хаçачĕ
Сувар
30
çул
лет
ÇĔНĔ 2019 ÇУЛПА
Сувар
КРОСС НАЦИИ 2012
СТАРТУЕТ ВСЯ РОССИЯ!

ҪĔНĔ 2019 ҪУЛПА САЛАМЛАТПĂР!
Сувар
Сувар
HEARTWAY
село
Диплом
2 место

Николай ЗИМИН

Николай Трофимович Зимин 1939 çулхи çу уйăхĕн 15-мĕшĕнче Пăва районĕнчи Элшел ялĕнче çуралнă. Ялти шкулта вăтам пĕлӳ илсен Теччĕри Çеçпĕл Мишши вĕреннĕ педучилищĕне кайса кĕнĕ. 1960 çулта диплом илсе учитель ĕçне кӳлĕннĕ.

1962 – 1965 çулсенче Совет Çарĕнче хĕсметре тăнă. Ракетчик. Демобилизаци хыççăн Хусанти В.И.Ульянов (Ленин) ячĕллĕ патшалăх университетĕнчен вĕренсе тухнă. Хĕрĕх çул ытла тĕрлĕ шкулсенче ачасене вырăс чĕлхипе литературине вĕрентнĕ. Çав шутран 30 çул директор лавне сĕтĕрнĕ.

РСФСР тата СССР халăха вĕрентес ĕç отличникĕ. Тутарстан Республикин тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕ. Специальноçпа – филолог, чунпа – поэт. «Пĕтĕм кăмăлтан» кĕнеке авторĕ. Валентин Урташ ячĕллĕ преми лауреачĕ. ТР ЧНКА çумĕнчи Чăваш çыравçисен союзĕн пайташĕ.

КĔТНĔ ЫВĂЛ ПЕК КИЛСЕ ÇУРАЛТĂН

Пĕрре мар пире Хусан хăтарнă
Кирлĕ чух чăвашсене тĕрев,
Пирĕн халăх уншăн пархатарлă –
Тус-тăванлăх юлнă ĕмĕре.

Куç умне тухаççĕ асăнсассăн
Чăвашсен ят-сумлă çыннисем:
Ак Никольский, Яковлев, Ашмарин,
Хусанкай та Тайăр, ыттисем.

Хусанта çуралчĕ те сас пачĕ
Иртнĕ ĕмĕр пуçĕнче «Хыпар».
Чăвашсемшĕн шанчăк, чун апачĕ,
Вăл пĕрремĕш çăлтăр – манар мар.

Хут тĕнчи, пĕлетпĕр, хăй пĕр ашăм,
Салатать вăл халăхра хыпар,
Çăварна уçма ан ман, чăвашлăх,
Ирĕк шухăш чăваша ют мар.

Арăш-пирĕш çавăрса тустарчĕç
Чăвашсен пĕрремĕш хаçатне:
Кирлĕ мар чăвашсене хыпарçă,
Кирлĕ мар чĕнни малаш патне.

Пăлтăр-палтăр пурнăç
çавраçилĕ,
Советсен хатарлă самани
Чăваша чĕлхесĕр (аса илĕр)
Хăваратчĕç – халăх çук тени.

Çĕршывра пулать иккен
пĕр наци –
Коммунизмăн çĕнĕ çыннисем,
Пулăшать ăна ассимиляци
Пĕтĕ, тет, чăваш та ирĕлсе.

Çĕнĕ вăхăт – пирĕн халăх чĕрĕ,
Чĕрере çунатлă ĕмĕтсем,
Чăвашсен тахатлă ывăл-хĕрĕ
Çĕнĕлле пурнасшăн вăй илсе.

Вăхăт, пар пире чăваш хаçачĕ,
Шухăш-туйăма уçма ан чар.
Кĕтнĕ ывăл пек килсе çуралчĕ
Чăвашсен чĕре сури – «Сувар».

Вăтăр çул пире вăл паллаштарчĕ,
Пĕрлештерчĕ те пĕр чăмăра,
Халсăр мар чăваш, хиври те тачă
Халь туятпăр эпир хамăра.

Пуç таять сан умăнта, хаçатăм,
Çыракан та вулакан эртел,
Эпĕ те чĕре ăшшине патăм
Вăтăр çул сана хам ĕмĕрте.

Ĕçлĕ çын ятне çӳле çĕклетĕн,
Паттăрсем тупатăн халăхра.
Бизнесмен-и, фермер-и – пĕр ретĕн
Кар тăрса ĕçлер-ха Çĕршывра.

МАН ПУЯНЛĂХ

Çук ман ылтăн çăраллă çурт-замок,
Мерседес те çук, яхта та ман.
Çутçанталăк хăвачĕ, шансамăр,
Ашкăнма мана хăй пил паман.

Пухаймарăм эп ылтăн та кĕмĕл,
Миллиард?!
Миллион та çук ман.
Тĕрлĕрен тĕрĕ евĕр ман ĕмĕр –
Çавăнпа эп чамасăр пуян.

Пур Çĕршывăм ман – тăнăç тĕрекĕ,
Ун çинче çут хĕвеллĕ тӳпе,
Пурăнатпăр – пирте ун кĕрнекĕ –
Хамăрла, чăвашла, ерипе.

Тух çурхи уй-хире чун туртсассăн –
Саламлаççĕ сана тăрисем.
Кайăк хур картинче те пур сасă –
Илĕртеççĕ вĕçме хĕтĕртсе.

Кам илтсе киленмен-ши çу каçĕ
Шапасен янăравлă хорне?
Ĕшнере шăпчăксем алхасаççĕ –
Ку та маншăн чи хаклă парне.

Кĕр çитсен кĕренленнĕ тавралăх
Тунсăхне парнелет ман чуна,
Чунăма ăшăтса хĕл касмалăх
Вăйĕ пур ун – упрасчĕ кăна.

Сунара çӳресси хăй наука
Йĕркине-картине пĕличчен,
Пиллĕкри ман юратнă мăнукăм
Мулкача, тет, тытап хӳринчен.

Тӳпере çăлтăрсем йăл куласçĕ,
Куç хĕсеççĕ кама, те мана?
Çăлтăр пек Çăлтăрписем тухаççĕ
Каçсерен ман çумри çарана.

Мĕн пурри – пил тулли, кăмăл сапăр,
Хапсăнман эп пӳрмен çăкăра,
Пĕр чĕлле пай çине пайламасăр
Пурăнман тус-йышпа ачаран.

Нишлĕ мар эп пур чух хамăр халăх
Мĕн сунсан та каварлă шăпа.
Сывă пулччăр çеç пуç, мăшăр алă –
Пурнăçа вĕрететпĕр йышпа.

Çук ӳпкев, кӳлешӳ никама та,
Эп сутман, сутăнман нихăçан,
Пат татса ĕненӳллĕ калатăп:
Тус-йышпа, тăванпа эп пуян.

Пур пирте аттесен вут-кăварĕ,
Аннесен иксĕлми чун ăшши.
Ман пуянлăх – чĕлхе, йăх тымарĕ,
Ман пуянлăх – çуралнă Çĕршыв.

ЭСĔ ПИРĔН ПĔРТЕН-ПĔР…

Таня хĕрĕме

Çитрĕ кĕр, ĕç майран – тĕпĕр-тепĕр,
Кайăк хур карăнать кăнтăра.
Эпир пур çĕнĕ кайăк кĕтетпĕр,
Пил ыйтса кĕлтăватпăр Турра.

Эсĕ пирĕн пĕртен-пĕр тĕпренчĕк,
Турă панă чи хаклă хăват.
Çав çулхи кĕркунне чечекленчĕ
Эс çуралнă ятпа пирĕн сад.

Чечекре вăл çулла та, хĕлле те –
Сан ăшра çур хĕвелĕ пуртан,
Ĕненетĕп, шанатăп, пĕлетĕп –
Çын çинче эс çынран уйрăлман.

Мĕн вăл тивĕç, ĕçри чыс-тирпейлĕх?
Пурте пур вĕсем санăн – ĕнен,
Çавăнпа эс ĕçре те телейлĕ,
Эс килте те телейлĕ анне.

Пĕччен мар эс, пурришĕн пул сапăр,
Çумăнта ачусем те кĕрӳ.
Пухăнсан калаçатпăр, кулатпăр,
Ĕç тума та ансат та хĕрӳ.

Эс ӳссе, çитĕнсе çемьелентĕн –
Çаплипех чечекре пирĕн сад.
Хамăра систермесĕр тĕренчĕ
Сан çине пирĕн ватлăх хăйса.

Пурсăра та пĕрле ыталатăп,
Ытама шăнăçман чĕппĕмсем.
Эпир халь аннӳпе – икĕ ватă,
Хамăра йăпататпăр кĕтсе.

Шав кĕтетпĕр – ирпе те, каçпа та,
Килейместĕр пулсан та куллен.
Кил тĕпелĕ те сирĕнсĕр катăк,
Çут хĕвел те сӳнет пек хуллен.

ӲКСЕ АН ЮЛ, ЧĂВАШЛĂХ,
ÇУЛ ХĔРНЕ

Сĕвĕрĕлет чăваш чĕлхин хăвачĕ –
Те пур, те çук чăваш халь çĕр çинче.
Çавна сиссе-ши ĕсĕклет шăркалчă
Типсе çухалнă кӳлĕ хĕрринче.

Сӳнмен-ха Çеçпĕл пехилленĕ шанчăк,
Ăшра çунать вăл чĕртнĕ вут-кăвар,
Ху чĕлхӳпе калаç эс, кам пулсан та,
Хăвна, чăваш, чĕлхесĕр ан хăвар.

Ăçта эсир чăваш пулса çуралнă,
Чăваш тĕнчин «аташнă» ачисем?
Сире чĕнет пĕтме пуçланă халăх
Чăваш пулма чăваш йышне кĕрсе.

Сирте чупать пулсан чăвашăн юнĕ,
Çӳле хăпарнă тĕрлĕрен тӳре,
Пуçна ан каçăрт, кам сана çын тунă?
Ху халăхна курмасăр ан çӳре.

Пăлхавлă вăхăт – çирĕм пĕрмĕш
ĕмĕр –
Ăса-пăса пăсать халь интернет.
Асапланать, чĕвен тăрать
тĕнчемĕр –
Ӳксе ан юл, чăвашлăх, çул хĕрне.

* * *

Эс пуррипе хĕвел те çутă,
Тӳпе те тăрă, сеп-сенкер,
Çурхи чечен чечек пек ху та
Килсе кĕретĕн тĕлĕке.

Çул улшăнать, чакать хаваслăх,
Кашнин хăйне кура шăпи,
Пурнатăп эп çаплах хам ăслă,
Хам май чупать кун урапи.

Пур ĕмĕт ман, тен, пур вăл сан та,
Çул юххине чарма: тăхта!
Чĕре вутла хыпса çунсан та
Таврăймасть яш вăхăта.

Ăçта васкаççĕ кун та, çĕр те?
Ĕлкĕрейместпĕр пурăнма,
Ман тĕлĕке хăйсах эс кĕр те,
Анчах ан тĕкĕн туйăма.

Анатолий МАЛЫШЕВ

Анатолий Меркурьевич Малышевӑн ҫуралнӑ ҫӗршывӗ – Тӑхӑрьял. Вӑл ҫакӑнти Пӳркел ялӗнче 1940 ҫулта тӗнчене килнӗ. «Вӑрҫӑ ачи» ҫамрӑклах сӑвӑ тӗнчипе туслашнӑ. Пуҫласа паллашнӑ чӗрӗ сӑвӑҫӑ – Валентин Урташ. Хӑйӗн хӑтланӑвӗпе, сӑввисемпе ҫамрӑкӑн тӗнчекурӑмне тӗпрен улӑштарса янӑ вӑл. Ҫав ҫулсенче ҫуралаҫҫӗ те ӗнтӗ Анатолин пӗрремӗш сӑввисем. Анчах пичетшӗн мар, юлташӗсемшӗн, тусӗсемшӗн.

Пурнӑҫ Анатолий Малышева ҫӗршыв тӑрӑх ӑҫта кӑна – Якутие, Сахалина, Итурупа, Кунашир утравӗсем ҫине, виҫӗ ҫула салтака, Алтай, Саратов, Пенза тӑрӑхӗсене – илсе ҫитерсен те тӗнчене сӑвӑсем урлӑ курнӑ Малышев. 1964 ҫулта Атӑл тӑрӑхӗнче чӑвашла тухса тӑракан хаҫат-журналсенче пичетленме тытӑнать.

Пӑва тӑрӑхӗнче чӑвашлӑх «пуҫ ҫӗкленинче» унӑн тӳпи те пур. 1992 ҫулта Тӑхӑрьял чӑвашӗсен ятӗнчен Чӑваш наци конгресӗн I пухӑвне хутшӑннӑ. Пуҫаруллӑ ӗҫленӗшӗн ЧНК президиумӗн (2013), ТР ЧНКА (2012), Чӑваш халӑх ӑслӑлӑхпа ӳнер академийӗн Хисеп хучӗсемпе (2015) наградӑланӑ. 2010 ҫултанпа Чӑваш халӑх ӑсчахӗ.

А.Малышевӑн (Маланмер эль Пӳркел хушма ятпа та ҫырать) ҫак кӗнекисем тухнӑ: «Тӑхӑрьялӑм-анне» (Хусан, 2003), «Вӑрҫӑ ҫӑпанӗсем» (Шупашкар, 2010) «Страницы жизни села Бюрганы» (Шупашкар, 2011), «Сторонка родная» (Мускав, 2012, М.Ложников куҫарнӑ), «Пуҫ сырман шухӑшсем» (Шупашкар, 2020). Вӗсемсӗр пуҫне унӑн этнографилле ӗҫӗсем «Буинские просторы» (Хусан, 2010), «Чуваши Татарстана» (Шупашкар, 2005) кӗнекесене кӗнӗ.

Анатолий Малышев – ТР ЧНКА ҫумӗнчи Чӑваш ҫыравҫисен союзӗн пайташӗ. Валентин Урташ ячӗллӗ литература премийӗн лауреачӗ. 1998 ҫултанпа И.Н.Юркин этнографӑн тата ҫыравҫӑн Пӳркелӗнчи музейне ертсе пырать.

ЧĂН ЧĂВАШ МОНОЛОГĔ

Пуласси вăл хăçан та тĕтреллĕ,
Иртсе кайнă кунсем çех уяр.
Курăнаççĕ хитре те йĕркеллĕ…
Ăслайса кăларнисĕр те мар.

Пурнăçра те кая юлнă эпĕ
Е çуралнă ытла иртерех?
Чăвашла пурнăç, ĕмĕт-сипетĕм
Сарă Кун Çĕршывне сĕтĕрет.

Пурте сапăр, тату, килĕшӳллĕ,
Ĕç те юрă, паян та ыран.
Кĕлĕ вĕçĕ хĕвел пекех çӳллĕ,
Пихампар çĕр çине аннăран.

Эй, çав ĕмĕрти йăхăн этемĕ!
Мĕн ăспа тата хăш вăхăтра,
Ăс-пуçне арпаштарнă этем пек
Пӳлĕхçе ăшаларăн вутра?

Çавăн хыççăн чăвашлăхăн ĕçĕ,
Ылмаштарнă кун-çул йĕркине.
Выçлăхсем, синкерсем вĕçе-вĕçĕн
Çумăр пек çунă пирĕн çине.

Чăркăш марччĕ авал пирĕн халăх
Ăрури, çын çинчи пурнăçра.
Ăмсану, пĕр-пĕрне курайманлăх
Чир пек ерчĕç пире Тухăçран.

Вăрçăсем, пăтăрмахĕ-пăлхавĕ
Паян кун та тухмаççĕ асран.
Вут çинчи Пихампарăн ылханĕ
Пĕр сĕвем те юлмарĕ хыçран.

Çав ĕçе каçармасть вăхăт, ĕмĕр.
Ман чăвашлăх çинчи çылăха
Сирме çук ӳкĕнсе, унăн сĕмĕ
Ерипен тĕп тăвать халăха.

Икĕ-виçĕ хутчен тĕн ылмашрĕ
Пĕр хĕçпе, пĕр вутпа, пĕр шывпа.
Тарăн аннă чӳклевлĕх тымарĕ
Юнлă çĕр ăшне. Пурпĕр хăрман.

Кĕнеке пуххине «ĕне çирĕ»,
Кив чулсем те арканчĕç чăлпар.
Ют хире çаврăнмасть атте çĕрĕ,
Халь чăваш-и эпир? Е вăл мар.

Тухйине тăхăнмасть чăваш хĕрĕ,
Юррисем, сассисем пирĕн мар.
Сурпансем пусĕнчи кивĕ тĕрĕ –
Авалхи чăвашсен куар-код йĕрĕ…
Вулама нумай ăс кирлĕ мар.

Тинĕсри утравсем пек сахаллăн,
Чунсенчи юлашки хал çинче,
Пурăнать ĕмĕрхи чӳкçĕ халăх
Хуларан аякри ялсенче.

Çавăнта халь чăвашлăхăн чунĕ:
Çĕнĕ çул, Сурхури, Çăварни…
Савăнаççĕ этемĕ, чĕрчунĕ –
Ваттисем вĕрентсе хăварни.

Çурмалла пайланать сар улма та,
Пĕр чĕлхелĕх вăрçа та сирет.
Çич ютпа ыр вăртах пек пулма та
Несĕлсем пил хăварнă пире.

Хунсемпе хурăнташлăччĕ эпĕр,
Тутарсем те пире çур тăван.
Вырăссен пупĕсем кĕпĕр-кĕпĕр
Хуса кĕртнĕренпе Атăла,
Сăхсăхса, хĕреспе тĕркĕшетпĕр –
Сăн-питне улăштарчĕ чăваш.

Пурте мар. Йышлă мар ун хисепĕ,
Хĕвелпе юманах пуç таять.
Çав çынсен пĕр тĕпренчĕкĕ эпĕ
Юлнине пĕр çĕре пуçтарап.

Çавăнпа шухăш-ĕмĕтĕм йăвă,
Чун чирне пуç çĕклет темелле.
Хамшăн хам эп апас та мăчавăр,
Юлташсемшĕн эптер, мамале.

Пурăнатпăр пĕрмай, кĕлĕ çитнĕн,
Пурнăçра çуккине пур туса.

Çурхи тан пек вуншар ĕмĕр витĕр
Чăвашсен иртнĕ кунĕ тухать.

Хĕвелтен хал илсе мел çитсессĕн
Пат! та пат! шыв тухать пăр çине.
Тен, сисетĕн, туятăн пуль эсĕ,
Çав халра пирĕн сăн пуррине.

Çĕпĕрте Чӳклеме ирттереççĕ,
Нурлатра пуç çĕклерĕ Уяв.
Сиктĕрме… ЧНКА ĕçĕ теççĕ…
Куçкĕрет урăхла тĕс куран.

Кăннара та Учӳк хăтлă иртрĕ,
Кушкăри Ырсене асăнса.
Те ун чунĕ, те хăй Иван Юркин
Курăнмасăр сăнать савăнса.

Пурăнасчĕ ман хуйхă пĕлмесĕр.
Сывă пулччăр чӳксем, кĕлĕсем.
Чăвашсен асĕнчи шĕпĕнсемсĕр
Ахах пек ваттисен пилĕсем.

Ак тата эп мĕскер асăрхарăм.
(Аякран пит аван курăнать)
Ĕмĕрсен йĕркине парăнмасăр
Çур Раççей чăвашла пурăнать.

Шанчăка пач çухатнăччĕ эпĕ,
Чăнлăхсем хамăртан тарнăран.
Пуçиле çухалаççĕ пуль теттĕм,
Çук иккен! Çĕршыва сарăлать.

Ячĕ çех хăйсемле – толерантность.
Чăвашсен йăх паллин вăррине
Ялава çавăрса чиксе лартрĕç
Мускаври Шурă Çурт тăррине.

Çук, хăрман-ха чăвашăн юманĕ,
Çĕр çине сапалать йĕкелне.
Çыннисем çех ĕрчев йĕрне маннă,
Те çанталăк памасть мехелне?

Çĕнĕ ĕмĕр. ЮНЕСКО ултавĕ
Кунĕн-çĕрĕн улать анчăкла.
Чĕлхене çулăхать унăн шавĕ
Пĕтерсе юлашки шанчăка.

Сĕмленсе, çулсăр-мĕнсĕр утатăп
Усалпа ырăсен хушшипе.
Çав-çавах пурăнма тăрăшатăп
Асатте-асанне хушнă пек.

* * *

Асатте ĕçлеме ӳркенмерĕ,
Ăсталатчĕ сĕтел те пукан.
Унăн пысăк карал галерейи
Тĕрлĕ тĕслĕ, ытла та пуян.

Çавсене аллипе перĕнмерĕ.
Тĕрлĕ халлă ĕç хатĕрĕнчен,
Ал сави пиллесе парнелерĕ.
Çав мула эп усрап халиччен.

«…Тĕрĕслевĕ самай çут тĕнчен.
Эс çыравçă. Ларса ĕçлекен.
Кам пуканĕ сан кут айĕнче?
Тен, пур саншăн пăта вĕçлекен?

Çавăнпа та ан ман сых çинчен.
Сак тени вăл ай-хай япала…
Хыç тĕлне хăрпăк-шăрпăк ан кĕтĕр,
Лариччен савупа савала..!»

Тав сана, асаттеçĕм, парнӳшĕн,
Пурнăçра кирлĕ пулчĕ мана.
Авалхи чăнлăха хӳтĕлевçĕн
Савапа çĕнмелле тăшмана.

Тăшмансен саккисем илĕртӳллĕ,
Якатмасăр пĕрне те ларман.
Çак йăла кашни кун, ӳлĕм-ӳлĕм
Куçса пытăр ламран та лама.

* * *

Асанне тутисем йĕрĕлчеччĕ.
Шӳт ăсти пытармастчĕ пиртен.
(Еккипе ача пек сӳпĕлтиччĕ)
«…Аслаçу каччă чух анкăль пекчĕ,
Чуптуса йăлăхтарчĕ питрен.

Туйăмсен тăвăлне чăтаймарăм
(Хĕр çынна ун пекки аван мар).

Хам çине çылăх илтĕм, каларăм:
«Тутаран чуптусан аванрах».

Тип çырма пек вĕри сĕтĕн йĕрĕ
Май памастчĕ мана савăнма.
Çимĕк каç пĕр сăмахсăр итлерĕ…
Шухăшларĕ вара авланма.

Аслаçу чуптуса тикĕслерĕ
Тутари вĕри сĕтĕн йĕрне.
Йĕрĕлче тутапа ĕмĕрлерĕм
Ĕмĕре, ăнланса пĕр-пĕрне».

Асанне тутисем йĕрĕм-йĕрĕм –
Тахçанхи вĕри сĕт ĕçĕ ку.
Ватăлсан та çавна ас илетчĕ,
Турăха та вĕрсе астиветчĕ,
Тăхăр хут, çичĕ хут, виçĕ хут.

Пирĕн ĕмĕр компьютер меслетлĕ,
Пурнăçа çавăрать юмаха.
Няння пек тăхăр хут тĕрĕслетчĕ
Çăвартан тухакан сăмаха.

* * *

Иртнĕ ĕмĕрсен кĕмĕл тусанĕ,
Ылтăн сулă, ахах вăчăра.
Тухьясем, хушпусем, тум, сурпанĕ
Сыхланатчĕçĕ хуп арчара.

Çиелте çăпата! Пушăт çимĕç.
Парадокс! Пирĕн чăн çакăнта.
Курăнать анса сарнă çич ĕмĕр
Унăн символĕ çав çăпата.

Йышăнап пушăтне, кĕмĕлне те
Пурте хамăрăн. Пӳрнĕ шăпа.
Хыçăмри несĕле те пиллетĕп
Çавсене ăнланса йышăнма.

Чăвашла пурăнмашкăн аннеçĕм
Ачаран хăнăхтарнă мана:
«…Усалсем чулпа печĕç пулсан эс.
Çăкăрпа пер усал тăшмана.

Эп шанатăп Сар Кунĕ те çитĕ
Юлташланăр, анчах та сыхлан,
Систермесĕр, пусна та ан çитĕр
Тăванла çăкăрна кăшлакан!»

Тăшмансем те пулаççĕ тĕрли.
Хăшĕ выçă е тутлăх курман.
Кашни сăввăм – пĕр çăкăр чĕлли,
Запасра хăпарту-ха пур ман.

* * *

Маншăн тĕслĕхчĕ кӳршĕ тăхлачă,
Ватă карчăк уксах Укçанкка.
Кашни çул çаруранах танккатчĕ
Пӳлере, ырсене пуç çапма.

Çитмĕл çухрăм. Мăн Атăл кĕперсĕр,
Тус-юлташсăр çав çул çăмăл мар.
Таврăнсан çичĕ талăк канатчĕ,
Вĕрентсе, ăс парса калаçатчĕ:
«Çулташу хăвăнтан та ирттертĕр
Çынлăхпа, чысĕпе, кăмăлпа…»

* * *

Икĕ пин çирĕм виççĕмĕш çулăн
Ячĕ тухрĕ. Культура…Йăла…
Пĕр çултах тума çук пысăк утăм,
Вăхăт шăвĕ, туман ĕç юлать.

Тутарстан акара. Мĕнле
тухăç пухĕ?
Самана çĕнĕ юхăм шырать.
Йăласенĕн çĕр çулĕ, культура эпохи
Пире кирлĕ пулĕç ыран.

Евгений ТУРХАН

Евгений Андреевич Турхан 1950 çулхи çу уйăхĕн 19-мĕшĕнче Чăваш Енри Елчĕк районне кĕрекен Турхан ялĕнче çуралнă. Вăрнарти совхоз-техникумран, И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн историпе филологи факультетĕнчен вĕренсе тухнă. Патăрьел районĕнчи «Авангард», Хусанти «Сувар», «Казанские ведомости» хаçатсенче ĕçленĕ.

Митта Ваçлей, Алексей Талвир, Кашкар Махмучĕ, Сажида Сулейманова ячĕллĕ премисен лауреачĕ, Чăваш халăх академикĕ. «Пăла таврашĕнче», «Тайна обелиска», «Последний эльтебер», «Ăçта эсĕ, юратăвăм?», «Каганлăх тĕпренчĕкĕ», «Туслăх çула кĕскетет», «Мăн асаттесен йĕрĕпе», «Пăрала» тата ытти кĕнекесен авторĕ. Г.Тяманов-Акташăн «Хасан Туфан тата унăн ентешĕсем» кĕнекине вырăсла, тутар çыравçин Ринат Маннанăн «Вăрçă паттăрĕсем» кĕнекине чăвашла куçарнă.

ТР Писательсен союзĕн, ТР ЧНКА çумĕнчи Чăваш çыравçисен союзĕн пайташĕ, «Сувар» хаçат çумĕнчи «Сунтал» литпĕрлешĕве ертсе пырать.

ТĔЛПУЛУ

Поэма сыпăкĕсем

* * *

Хĕвел хĕртет, сапаласа пĕр шавсăр,
Хăй шевлине ĕшеннĕ çĕр çине.
Çул тусанне вĕрсе пусараймасăр,
Çил, лăпланса, чăмать Пăла шывне.

Тăри юрлать çич тӳпере ытарлăн,
Тăнлать хитре сасса тырпул пусси.
Чупать ăрша ун çийĕнваскаварлăн,
Тата ăçта капла илем пур-ши?

Çак вырăна таçтан пырса
капланнă,
Чи усă сывлăш тыткăна илет…
Ача чухне ват мучисем каланă
Пулса иртни тăрук аса килет.

Вăл тапхăртан çĕр çул ытла та катнă,
Çавах каласа парăп маниччен.
Чылай çултан, пĕрне-пĕри юратнă
Ик чун савнин тĕлпулăвĕ çинчен.

* * *

Малтан каланă ĕнтĕ, ĕмĕр иртнĕ,
Çав çуллахи ытарайми кунран.
Утать хирпе вăтăралла тин çитнĕ
Çын, сулланса хал кайнăран.

Ун асĕнче тăрать манми ӳкерчĕк,
Хитре пике, юратнă чун савни.
Çавах Эртюкăн шухăш
иккĕленчĕк:
Миçе çул иртнĕ: шырăн – тупăн-и?

Чĕкеç шатриллĕ питĕнче илемлĕн,
Юхать йăл кулă шур шăлсем хыçне.
Куç харшисем, чăнах, тĕкме ку
тейĕн,
Хупса усраççĕ чакăр куççене.

Тути-çăварĕ пĕчĕк те тирпейлĕ,
Питçăмарти – хĕп-хĕрлĕ панулми.
Унпа çумма ларсан – çухалĕ эрлĕк,
Чуна тулать хаваслăх иксĕлми.

Ăсмашкăн шыв валак патне
кайсассăн,
Такам киленĕ унăн уттипе.
Маттур яшсем, курсан, сывлаççĕ
ассăн,
Хăпмаççĕ улахра каçпулттипе.

Пӳ-сийĕпе вăл хурăнтан иртерĕ,
Хуп-хулăн çивĕт пилĕкрен иртет.
Саппун хĕррисенче чечен пуштĕрĕ...
Чăнкăртатса сасне парать тевет.

Алка çинче тенкĕлĕхсем сулмаклă,
Ама тăрать шап-шакăр кĕмĕлтен.
Тулли ури кĕрен сăран пушмаклă,
Ăна çĕлетнĕ чи паха тиртен.

Çапла кĕрсе ĕмĕрлĕхех вырнаçнă,
Кĕлпи сăнарĕ качча чĕрине.
Тăвата хут анчах унпа калаçнă,
Çав самантсем тухаççĕ куç умне:

* * *

Юхма пасарĕ çав кунне кĕрлетчĕ,
Уйăракан вĕлле сĕрленĕ пек.
Эртюк ун чух кукашшĕпе пĕрлеччĕ,
Ватти çӳрен лаша шыратчĕ тек.

Пуян пасар, сутаç унта тем те пĕр,
Йĕп-çĕçĕрен ĕне-лаша таран.
Хупах иртен шавларĕ тĕпĕр-тепĕр,
Кунтан тухаç ял çыннисем аран.

Таварсене ăнăçлă сутнă хыççăн,
Ачисене илсессĕн кучченеç.
Çĕр ĕçченсем пыраççĕ умлăн-хыçлăн
Хупах патне. Ĕçмешкĕн чей, кĕреç.

...Пĕри ĕне тума пăру туяннă,
Ку сутса янă сарă туллине...
Тата ăçта-ха хупахри пек канăн,
Хăçан тата-ха тухăн çын çине?

Кукашшĕ ăйăр ун чухне туянчĕ,
Ут шăвармашкăн хушрĕ мăнукне.
Хăй хупаха «лаша çума» ăсанчĕ,
Управшăн ăна пачĕ енчĕкне.

Ара, хупах вăрăсемпе тулли-çке,
Кăларĕç-илĕç хăй çумне хурсан.
Ку енчĕкре хресченĕн пĕтĕм ĕçĕ,
Çука еретĕн енчĕк çухалсан.

Иртенпелех кĕрлет, шавлать пасарĕ,
Пуçтарнă вăл тем тĕрлĕ халăхсем.
Кунта пур çармăсĕ, мăкши, тутарĕ,
Чĕмпĕртенех ав килнĕ вырăссем.

Тăрать кулкаласа чикан-усламçă,
Лашисене сутасшăн шав мухтать.
Симпыл сĕнет витрепелех утарçă,
«Ирçе çăпатине» ирçе сутать.

* * *

Пасар кĕрлет, шăв-шав, хаваслă юрă,
Пĕр саманта та лăпланмасть кунта.



Ăйăри пек сар хĕрĕсем, ав, шурĕç,
Пĕр пек вĕсем – атлас та, пурçăн та…

Яш каччăсен шлепки куштанчăк,
чалăш,
Лавкка пирусĕ хыпнă çăварне.
Хĕр суйлама ятарласа чылайăш,
Çĕр çухрăмран килеççĕ пасарне.

Эртюк йăл кулчĕ – вăл та аякран-тăр,
Кукашшĕ – кӳршĕри кĕпĕрнерен.
Ялне çитме пулмасть-ха вăтăр
çухрăм,
Çавах та туйăнать пек – инçетрен.

Ара, ют кĕпĕрне ют кĕпĕрнех-çке,
Пач урăх пуçлăх, урăхла йĕрке.
Кунти хĕрсем маттуртарах та теççĕ,
Çапла, ютри çеçке ялан хитре.

Шăп çав шутпах кукашшĕ пĕрле илчĕ,
Часрах авлантарасшăн мăнукне.
Пасар тавра виç-тватă хут та иртрĕ,
Мухтарĕ шав Юхма хĕрĕсене.

Усси çукрах, Эртюкăн куçĕ хупă,
Курмасть вăл пĕр хĕрне те пурпĕрех.
Палюк пĕлмест – мăнукĕ шухăш
тытнă,
Ун авланма, шутлать вăл, иртерех.

* * *

Çак шухăшпа канăçланса пыруçăн
Юхма хĕрне çитерчĕ лашине.
Шыв хĕрринче илемлĕх –
сывлăш усă,
Ырса çитсе тур учĕ кĕçенет.

Аяларах тата лаша кĕçенчĕ,
Сар хĕрĕ шăварать шур лашине.
Мĕн пулчĕ-ши? Сасартăках
именчĕ,
Хĕп-хĕрлĕ сăн сапайрĕ каччине.

Эртюк васкарĕ, аллисем
чĕтреççĕ,
Ура йĕнер пускăчине шырать.
Ун умĕнче çăтмахăн пирĕштийĕ –
Асамлă гури – хăй тăра парать.

Ик мăшăр куç йăлтăртатса çунаççĕ,
Ун-кун чупаççĕ темĕне сиссе.
Вĕсем темскер ыйтаççĕ, тархаслаççĕ,
Илтмеççĕ нимĕн каччă хăлхисем.

* * *

Çапла Кĕлпипеле Эртюк паллашрĕ,
Пĕр пек ик чун тĕл пулчĕç пĕр-пĕрне.
Куçсемпеле тем-тем çинчен калаçрĕç,
Чĕнмерĕç пĕр сăмах тĕрĕссипе.

Пасар шавлать, шывра утсем тăраççĕ,
Туртаççĕ, пĕрлешесшĕн, чĕлпĕрне.
Пĕр-пĕринчен ăмăртмалла тараççĕ,
Ик мăшăр куç, шуйханнă ик чĕре.

Чылай тăрсан Эртюк сăмах хускатрĕ,
Сасси аран тухайрĕ чĕтресе:
– Каçар, пике, сăну чуна вăратрĕ,
Тен, паллашар, чĕнес-ши кам тесе?

Эп хам – Эртюк. Кавал Палюк
тесессĕн,
Пĕлменнисем сахал кукаçине.
Кайри Пăла хĕрне пырса çитсессĕн,
Такам кăтартса парĕ ун тĕлне.

Ăçтан ху эсĕ? Кам тесе ят хунă?
Яту, туятăп, ху пекех хитре, –
Чĕнмерĕ хĕр, çут кӳлĕ евĕр кулă,
Çиçейрĕ илĕртӳллĕн сăн-питре.

Вăрт çаврăнса пасаралла уттарчĕ,
Васкатрĕ хăйĕн хыççăн кĕсрине.
Урисене мĕн-ма аран шутарчĕ?
Вут-çулăм хыпрĕ ахăр чĕрине.

«Пĕтмен-ха шанчăкăм», – тесе
шутларĕ,
Çакна курсассăн каччă ăшĕнче.
Шыв хĕррипе унта-кунта хутларĕ,
Ут утланса юрттарчĕ хыçĕнчен.

Палланă кĕсререн куçне илмесĕр,
Çитсе вăл тухрĕ халăх хушшине.
Хĕр çакăнта-мĕн, нимĕн те чĕнмесĕр,
Кулса пăхать вăл юланут çине.

Речĕпеле лавсем кунта лараççĕ,
Кĕтеççĕ хуçисем таврăнасса.
Хĕрсем пĕрле пуçтарăнса шавлаççĕ,
Хыпар-халап параççĕ каласа.

Йĕкĕчĕсем пĕр ушкăн чăмăртаннă,
Ыйтса пĕлесшĕн хĕрĕсем çинчен.
Ара, мĕн авалтан-тăр паллаштарнă,
Пасар пĕр-пĕринпе çамрăксене.

* * *

Çитсессĕн çамрăк чуншăн ăш
хыптармăш,
Чи чаплă вăхăт – тус шырас самант.
Чĕнсен те, чĕнмесен те ашшĕ-амăш,
Ывăл-хĕрсем пĕр пасартан юлман.

Паллах, ку пулнă лайăх аслисемшĕн –
Лав сыхлакан пулать-çке пасарта.
Хаксем пĕлни пĕр лайăх ваттисемшĕн,
Хĕр-каччă канăç тупĕ вырăнтах.

Хуран-чӳлмек ретне вĕсем каймаççĕ,
Ĕне-лаша яшсемшĕн кирлĕ мар.
Ваттисем пек тырпул хакне ыйтмаççĕ –
Пĕрне-пĕри курмашкăн вăхăт пар.

Чун туртнине куллен кунта шыраççĕ,
Чи çывăх тус тупакансем нумай.
Кĕр мăнтăрне хĕр килĕшме яраççĕ,
Савнисене пĕлсе çитсен самай.

* * *

Шăп çавăн пек яланхилле ӳкерчĕк,
Эртюкăн куç умне тăрать тухса.
Ав, пĕр пики шур тутăрне ӳкерчĕ,
Каччи илсе парать, пуçне ухса.

Тепри хăй каччине чăнах савать-тĕр,
Çупăрласан та вырăнтан сикмест.
Сар çӳçлĕ каччă авланма та хатĕр:
– Кĕç хăтана яратăп, – илĕртет.

Ку йĕкĕт хĕрсене юрасшăн ахăр:
Канфет-пĕремĕк вĕсене сĕнет.
Паллашнă хĕр ăна-кăна курмасăр,
Эртюк çине пăхса темскер кĕтет.

Мала иртсе кайма хӑтланнӑ майӑн,
Эртюк хускатрӗ кӑшт урхамахне.
Хӗр ҫумнелле ҫывхарчӗ, ҫӑмӑлттайӑн,
Ҫӗклерӗ пусӗнчи шур шлепкине:

– Салам сана, чун савнӑ сар пикеҫӗм,
Хӑҫан-ха пӗлӗп-ши хитре ятна?
Васкатӑп питӗ, тахҫанах кӗтеҫҫӗ,
Ятна кала та, шутсӑр ан ятла.

Ут умӗнчен хӗр пӑрӑнчӗ вӑр-варрӑн,
Авкаланса хускалчӗ кӳлепи:
– Ан йӗрлесем ялан, чӑнах, ят ярӑн,
Пачах та хитре мар ман ят – Кӗлпи.

Кунтисем мар, Пӑла хӗрне вырнаҫнӑ
Ҫуралнӑ ялӑм. Шакӑр йывӑҫсем.
Ҫурт тӑррине лаштра йӑмра кармашнӑ,
Юнашарах ретпе улмуҫҫисем.

Вӗсем Пӑла хӗрринеллех анаҫҫӗ,
Унтах хӑмла валли ҫӗршер шалча.
Кӑвакалсем шыв ҫийӗн ярӑнаҫҫӗ,
Арман пӗвийӗн хӗрринче мунча.

Сад пахчинче пыл хурчӗсем сӗрлеҫҫӗ,
Каска вӗлле улт теҫетке ытла –
Ман аттене Мелей тесе чӗнеҫҫӗ,
Ытла пуян тесе эс ан шутла, –

Хӗр питӗнче чее хӗлхем ялтрарӗ,
Тем шухӑш пырса кӗчӗ-тӗр пуҫне.
– Чӑнах саван-тӑк, – шухӑшлӑн каларӗ, –
Хӑвах шыраса тупӑн хӑш ялне.

Е савмасассӑн кирлӗ мар та ялӗ,
Атте ятне пӗлни те кӑлӑхах.
Атя, васка ху ӗҫӳпе эс халӗ,
Уйрӑлӑпӑр санпа яланлӑхах.

Пӑрӑнчӗ утрӗ хӗр, манми янрарӗ,
Эртюкӑн хӑлхинче хитре сасси.
Хӑй чӗрине шӑп ҫурмалла пайларӗ,
Ҫухалчӗ уншӑн лӑпкӑ пурнасси.



* * *

Çухалчĕ канăç, чăтăмсăррăн кĕтрĕ,
Эртюк чунтан çитес пасар кунне.
Çук, кăлăхах-мĕн, хĕр хыпарсăр çĕтрĕ,
Тупăнчĕ тин, иртсессĕн кĕркунне.

Хĕл ларнăччĕ ун чух, Кĕлпи тăратчĕ,
Юхма кĕперĕн карлăкне тытса,
Тавраналла тем хурлăхлăн сăнатчĕ,
Курмастчĕ нимĕн, шухăша путса.

Ыталасан каччи, хĕр сасă пачĕ:
– Салам! Хавас! Сунманччĕ курасса,
Çапах та тĕл пулмашкăн Турă пачĕ,
Ахальтен мар-тăр килтĕм халь тарса.

Мана атте вăйпа качча парасшăн,
Паснапуçри Пасай Арханейне.
Ăна савмастăп-çке. Тахçан тарасшăн,
Хупса атте усрарĕ кĕлетне.

Сана саватăп эп, илсен – пыратăп,
Тĕнче хĕрне пулсан та нимĕн мар.
Анчах кунта тăма чăнах хăратăп,
Илсем мана пĕрле, часрах тарар.

– Кĕлпи, савниçĕм, сан çавна
пĕлесчĕ,
Çав пасартан пĕрне те сиктермен.
Чăнах, часрах тăван яла çитесчĕ,
Хавас çеç пулĕ кукаçи, пĕлсем.

Тăхта кăштах, пĕр самантрах çитетĕп,
Эп каялла, урхамаха илсе.
Сана куç хупиччен яла çитерĕп,
Пăхсамччĕ, ав, лаша тăрать кĕтсе.

Эртюк часрах пасараллаваскарĕ,
Унта сыхлатчĕ тусĕ лашине.
Анчах та каччă чунĕ тем вăркарĕ,
Шанма-тăр йывăр пулчĕ телейне.

Юлташĕ чăн-чăн çывăх çын Эртюкăн,
Кукашшĕ патĕнче вăл пурăнать.
Хăр тăлăхскер, Тукаш мăрса
тавращĕ,
Палюк усранă пĕчĕкрен ăна.

* * *

Тăваттă çеç Аттай ун чух тултарнă,
Пĕччен Палюк илсессĕн усрава.
Пĕчченлĕхрен вăл ват çынна хăтарнă,
Йăпатмăш пулнă уншăн ватлăхра.

Эртюк килсен Аттай унпа туслашнă,
Пĕрле çӳренĕ пĕртăван пекех.
Час-час пĕрле ик каччă каварлашнă,
Калаçнă иртнисем çинчен текех.

Пасарсенче вĕсем пĕрле шыранă,
Эртюкăн пач çухалнă савнине.
Паян та ак, пĕрле тухма тапраннă,
Аттай, юлса, сыхланă утсене.

* * *

Эртюк кайсан, Кĕлпи хаваслăн кулчĕ:
– Тинех хăтăлтăм, – терĕ, – инкекрен.
Сасартăк çывăхрах çуна вăл курчĕ,
Ăна ярса та илчĕç пилĕкрен.

Тăлăппала хупларĕç, илчĕç печĕç,
Хĕре пукане пек çуна тĕпне.
Тилхепине пĕр туртсанах итлерĕç
Виç тĕп лаша. Вĕçтерчĕç мал енне.

Хĕр сассине кĕтмен çĕртен илтсессĕн,
Эртюк васкавлăн пăхрĕ çаврăнса…
Хăй хуçине йĕнер çинче сиссессĕн,
Ун урхамахĕ сикрĕ çеç тапса.

* * *

Хĕр вăрласси мĕн авалтан пырать-тĕр
Чăвашсенче. Пĕлеймĕн тымарне.
Кĕлпи тесессĕн тем тума та хатĕр,
Лаша вăрри тавращĕ – Арханей.

Хĕр хăй те мар, ун мулĕ çеç хускатнă,
Пасай ачин хапсăнчăк чĕрине.
Ашшĕпеле сăмах калаçнă-татнă:
«Вĕçертес мар Мелейĕн пурлăхне».

Ара, мĕн чуль пуянлăх: çурчĕ, сачĕ…
Арманĕ хăй кăна мĕне тăрать.
Ачи тек çук, ку укçа-тенкĕ склачĕ,
Веçех Кĕлпи çине кайран куçать.

Çак пурлăха пĕччен мĕнле-ха тытăн?
Ĕçлес канмасăр, çакă мул парать.
Çук тарçăсем, алли Мелейĕн «ылтăн»,
Ĕçченлĕх вĕресе кăна тăрать.

Ĕçчен Мелей те, арăмĕ, Кĕлпи те,
Аслашшĕнчен мул юлнă чылаях.
Пĕр пус çумне пус, миллион та çитĕ,
Салатăнсан самант каять сая.

* * *

Шăп çавăнпа пĕр тăхтамасăр кайнă,
Пасай хĕр килĕшме Мелей патне.
Пусăрăнса, мĕскĕнленсе пуç тайнă,
Пĕр пулштухне те чикнĕ сых ятне.

Хăта пулас çынсем часах çырлахнă,
Тĕв тунă ирттерме хĕлле туйне.
Анчах ĕçе сăлтавĕ чăрмантарнă –
Арханее яман хĕр яхăнне.

Кучченеçе кĕтесселле вăл пенĕ:
– Атте, мана ку каччă кирлĕ мар,
Шыва сиксе вилетĕп эпĕ, – тенĕ, –
Тархасшăн ирĕксĕр качча ан пар.

Мелей çилленнĕ, вăрçнă, ӳкĕтленĕ,
Çавах пулман тĕшши ӳкĕтĕнче.
Хĕр кăмăлне вăйпа тупма пикеннĕ,
Ăна хупса усранă килĕнче.

Çапла ик уйăх иртнĕ, юр та ларнă.
Шухăшĕнчен хĕр нимĕн пăрăнман.
Тăшманĕсем вара татах тĕв тунă,
Шутланă вăрламашкăн пасартан.

* * *

Тĕп виç лаша юр сирпĕтсе чупаççĕ,
Çуна вĕçет çĕмрен пек шăхăрса.
Вăрлакансем пĕр шиксĕр савăнаççĕ,
Сисмеççĕ тавăру кĕç пуласса.

Вăл çывăхрах – паспа шап-шурă
пулнă,
Ик кимĕ пек юхаç юланутсем.
Тарăхупа, хаярлăхпа та тулнă,
Таркăнсене йĕрлеççĕ çут куçсем.

Çуна ӳркевлĕн айккине ӳпленчĕ,
Тăкăнчĕç юр çине лараконсем.
Шăв-шав та çуй пĕлĕтелле çĕкленчĕ,
Шап-шур хирте çыхланчĕç мĕлкесем.

«Чикеп, усал!..» «Ах Тур, куçа
шăтарчĕ!...»
«Вĕçерт мана, ку эпĕ-ха, пастай»…
Улт тăшманпа пĕччен вăрçа пуçарчĕ,
Кĕреш пек çирĕп пăхаттир Атай.

Хĕр вăррисем те пурте вăйлă, çӳллĕ,
Çапăçăва пĕрре çеç хутшăнман.
Ку хурахсем, лаша вăррийĕн çулĕ,
Пĕр тăтăш канăçпа савăнтарман.

Нумай пымарĕ çапăçу. Шăпланчĕ
Пĕри ӳксе варланнă юр çине.
Тепри ун хыççăн çĕрелле ăсанчĕ,
Чăтайманран Атайăн чăмăрне.

Ак ӳкрĕ виççĕмĕш, тата тепри ахлатрĕ,
Атай ури тапса сирпĕтнипе,
Сасартăк çĕçĕ сывлăшра ялтрарĕ,
Чыхăнчĕ паттăр каччă юнĕпе.

Эртюк çитсе çапăçăва кĕрсессĕн,
Юлташ выртатчĕ унăн сывлайми.
Арханейре пăшал. Кĕçех пересссĕн
Тытса ăна, пăхать вăл курайми.

Юлташ-хурахĕ çĕççине çĕкленĕ,
Çут тимĕр тăрăх юн çĕре тумлать.
Çак юн шăпах, Атайĕн, тусĕн юнĕ
Тавăрупа часрах тухма хушать.

Эртюк васкавлăн кĕсйине ухтарчĕ,
Ун çумĕнче те пур юлташ – наган.
Ăна туртса вăл самантрах кăларчĕ,
Çук, çĕклеймерĕ, тухрĕ вут куçран.

Пăшал сасси аслати пек кĕрлерĕ,
Юн çăлкуç пек тумларĕ питĕнчен.
Эртюк çапах та тăруках ӳкмерĕ:
Кĕç хирĕç шартлаттарчĕ улт хутчен.

Савни патне шуса çитме пултарчĕ,
Пăхмасăр вилнĕ тăшмансем çине.
Хĕре шăналăк айĕнчен кăларчĕ,
Хуралчĕ куç, çухатрĕ тин тăнне.

* * *

Тăна Эртюк касаматра çеç кĕчĕ,
Сывалчĕ тĕрмери больницăра.
Атай вилнишĕн темиçе хут йĕчĕ
Вăл тĕрмере, кайран каторгăра.

Кĕлпишĕн питĕ хытă тунсăхларĕ,
Вилмеллисен камеринче чухне.
Савни сăнарĕ асĕнчен тухмарĕ,
Кайран, улăштарсан приговорне.

Этаппала, сăнчăрпала пыруçăн,
Кĕлпи ялан тухатчĕ куç умне.
Иртсен çулталăк, икĕ çул та уççăн,
Çумри пекех куратчĕ савнине.

Кĕлпи сăнарĕ хăтăлма хистерĕ,
Май тупса пачĕ Çĕпĕртен тарма.
Чăн юрату çĕрти чуна вĕçтерĕ,
Çынна, çук, пултараймĕ путарма.

* * *

Хĕвел хĕртет, вăл сапалать пĕр
шелсĕр,
Хăй шевлине ĕшеннĕ çĕр çине.
Эртюк утать, каламăпăр: «тĕллевсĕр»,
Тĕллевĕ пур,васкать савни патне.

* * *

Таса тӳпе. Тăри таçта сас пачĕ,
Хăй курăнмасть, юхать сасси çӳлтен.
Пуçне усса Эртюк салхуллăн анчĕ,
Çӳл çырантан хуллен Пăла хĕрне.

Вĕçленчĕ çулĕ. Çук иккен савниĕ,
Пулман нихçан та вăл Пăла çинче.
Ăна йăлт тухрĕ каччă, шывăн çийĕ,
Çук, кăтартмарĕ тусĕн сăнарне.

Юхăмпала вăл Сĕвене те çитрĕ,
Тĕпчерĕ таврари вырăнсене.
Сар хĕрĕн йĕрĕ чăннипех те çĕтрĕ,
Эртюк халь таврăнать тăван ялне.

Кукашшĕ ялĕ айлăмра вырнаçнă,
Шыв уйăрнă яла çĕн Пăваран.
Пăва вара чăн сарлака, мăнаçлă,
Сад пахчисем пăхаççĕ катаран.

Умра Пăла, ун леш енче Курнавăш,
Ик çухрăмра тетте пек курăнать.
Кунтах вара, шап-шурă, калăн, акăш,
Кĕвентепе пике шыва анать.

Чĕкеç шатриллĕ питĕнче илемлĕн,
Юхать йăл кулă шур шăлсем хыçне.
Утать вăл ярăнса, хитрен те меллĕн…
Кĕлпи тем? Каччă сăтăрать куçне.

Тути-çăварĕ пĕчĕк те тирпейлĕ,
Питçăмарти – хĕп-хĕрлĕ панулми.
Эртюк пек кам тата паян телейлĕ?
Камра çиçет хаваслăх иксĕлми?

Савни кунтах-мĕн, ак вăл тĕлĕнтермĕш,
Улталамасть куç, чăн, Кĕлпи умрах,
Пач ют çĕрте ăна шыранă имĕш,
Ак мĕншĕн тупайман çапла вăрах.

Сăлтав ансат. Пăла пĕрре çеç мар-çке,
Пур икĕ шыв – Асли те Кĕçĕнни.
Асли çинче вăл савнине шыранă,
Кĕлпи çуралнă Кĕçĕнни çинче.

Андриян ГРИГОРЬЕВ

Андриян Александрович Григорьев 1963 çулхи кăрлачăн 27-мĕшĕнче Нурлат районĕнчи Хуралту ялĕнче çуралнă. Вăтам пĕлӳ илнĕ хыççăн икĕ çул хушши Украинăра çар хĕсметĕнче тăнă. Таврăнсан Хусанти медицина институтне вĕренме кĕнĕ. Унтан вĕренсе тухсан Ульяновск облаçĕнчи Çĕнĕ Малыклара врач-невролог пулса ĕçлеме тытăннă. 1993 – 1995 çулсенче Хусанти медицина академийĕнче неврологипе ординатурăра вĕреннĕ. Çав вăхăтра Максим Горький музейĕнче иртекен литература пĕрлешĕвĕн ларăвĕсене час-час хутшăннă. 2002 çулта çемйипе Нурлат хулине куçса килнĕ.

Андриян Григорьевич икĕ чĕлхепе çырать – вырăсла та чăвашла. Сăвăсен çичĕ пуххин авторĕ: «Ступени», «Мелодии сердца», «Первый снег/ Пĕрремĕш юр», «Была зима», «Хĕл илемĕ», «Ветер озорник/Витĕр çил», «Ӳстересчĕ чунра ыррине. Пройдет хандра».

**ЧИРĔСЕМ ТЕ НУМАЙ,
ЧИРЛИСЕМ ТЕ НУМАЙ**

Чирĕсем те нумай, чирлисем те нумай;
Ахлатни, макăрни пăлхатать чунăма.
Чирсемпе, инкекпе кĕрешсессĕн пĕрмай,
Сайрарах тытăнан савăнма та кулма.

Чирсемпе кĕрешсе ытларах пăлхансан,
Сахалрах тытăнан çывăрма каçхине;
Вăрăм çĕр хушшинче пĕрре мар вăранса,
Шикленсе асăрхатăн чĕре тапнине…

Чирĕсен, чирлисен халĕ шучĕ ӳсет,
Лăпкă мар, çăмал мар самани пулнăран;
Чăтăмпа вăй-хăват çитменни сисĕнет, –
Вĕсене пуççапса ыйтмалла Турăран!

ӲСТЕРЕСЧĔ ЧУНРА ЫРРИНЕ

Пур ырри те, усалли те
Кашни çыннăн ăшĕнче;
Пур тасалăх, пур пăтранчăк
Чĕринче те чунĕнче.

Лайăххи те, начарри те
Пурăнаççĕ пĕр çынрах.
Шуррине те, хурине те
Тупма пулĕ пĕр чунрах.

Ырăрах та пулкалатпăр,
Пулкалатпăр усалрах;
Мĕн кӳртетпĕр, ӳстеретпĕр,
Пирте çавă ытларах...

Усалпа варланас марччĕ –
Пурăнас тасалăхра;
Ыррине кăна кӳртесчĕ,
Ӳстересчĕ чунăмра!

КĔРХИ ВĂРМАНТА

Вырсарникун паян – канар.
Çӳлтен хĕвел пăхать – уяр.
Кĕрхи вăрман инçех те мар;
Кăмпа пухма унта каяр.

Кăмпи те пур, çынни те пур
Кĕрхи илемлĕ вăрманта.
Кăмпи пайтах – шыра та кур –
Тинкерсе пăх унта-кунта.

Шалтан шала, ширанă май,
Кĕрсе пыратпăр вăрмана.
Унта, шалта, кăмпи нумай –
Ӳркенмесен пуçтар кăна...

Епле асамлă кун паян –
Кăмпи нумай, хитре вăрман!
Шыра та пух, анчах ан ман –
Шикленмелле аташасран.

ЮРАТСА ЧĔРЕ ТАПСАН

Юр та, пăр та ирĕлет
Сар хĕвелĕн ăшшипе.
Кӳренӳ чунра пĕтет
Эсĕ ăшшăн пăхнипе.

Юр та, пăр та ирĕлсен,
Чечексем хуплаç çĕре;
Кӳренӳ чунра пĕтсен,
Юратса тапать чĕре!

Чечексем ӳссе тухсан,
Илемленĕ çут тĕнче!
Юратса чĕре тапсан,
Эп телейлĕ çĕр çинче!

НАРĂС УЙĂХĔ АК ÇИТРĔ

Нарăс уйăхĕ ак çитрĕ
Çил-тăманлă, нумай юрлă,
Çулсене юрпа вăл витрĕ,
Утма йывăр кĕртсем урлă.

Кунĕпе тăман тустарчĕ –
Урама тухас килмерĕ.
Каç енне пăртак лăпланчĕ:
«Пултаран тухмашкăн», – терĕ.

Каç пулсан тухма хăтлантăм,
Алăка уçма пикентĕм.
Тĕртрĕм, тĕртрĕм, уçаймарăм:
«Килĕмрех ларас-ха», – терĕм.

ХАКЛИ ÇУК-ТĂР, ЧĂН ТА, СЫВЛĂХРАН

Чирлесессĕн эмелсем шыратпăр,
Сывă чух вĕсем кирлех те мар.
Чирлĕ чух пĕлетпĕр те туятпăр –
Сывлăхсăр епле кичем, начар.

Сывă чух ăçта кăна каймастпăр,
Мĕн кăна ыйтмастпăр Турăран...
Чирлесен çеç лайăх ăнланатпăр –
Хакли çук-тăр, чăн та, сывлăхран.

ÇĂМĂЛ МАР ÇĔНТЕРМЕ

Усалпа çийĕнчех хытăрах пулмасан –
Чармасан, ватмасан, тымарне
çăлмасан,
Çĕнĕрен вăй илсе вăл ӳсет çĕр çинче,
Пултарать хăпарса сарăлмашкăн
инçе.

Сарăлса кайнине çăмăл мар çĕнтерме,
Çăмăл мар çĕнтерме, аркатма,
пĕтерме...
Усалпа – тăшманпа çапăçаç
паттăрсем,
Тăшмана пурпĕрех аркатаççĕ вĕсем!



ÇĔНТЕРӲ УЯВĔ
ÇĔРШЫВПА ПЫРАТЬ

Çĕнтерӳ уявĕ çĕршывпа пырать.
Пирĕн халăха вăл пĕрлешӳ парать.
Кунĕпе янраççĕ пирĕн юрăсем,
Каç пулсан кĕрлеççĕ чаплă салютсем!

Паттăрлăхĕ пулнă вăрçăра пĕрмай,
Çĕнтерӳшĕн вилнĕ салтаксем нумай.
Çавăнпа чарайнă вăйлă тăшмана,
Çĕнтерме пултарнă аркатса ăна.

Паттăрсен хăвачĕ пĕтмĕ ĕмĕрне.
Пуç тайса чыслатпăр халĕ вĕсене!
Çĕнтерӳ уявĕ пытăр çĕршывра,
Паттăрсен хăвачĕ пултăр халăхра!

Ирина ТРИФОНОВА

Ирина Федоровна Трифонова 1977 çулхи ака уйăхĕн 3-мĕшĕнче Çĕпрел районĕнчи Хулаçырми ялĕнче çуралнă. Хусанти патшалăх педагогика университечĕн вырăс филологийĕн факультетне, Раççейри халăхсен хушшинчи туризм академине, Туполев ячĕллĕ Хусанти патшалăх техника университетĕнчи «Стиль» Раççей-Итали шкулне пĕтернĕ.

1997 çултанпа «Сувар» хаçат редакцийĕнче ĕçлет. 2019 çулхи май уйăхĕнченпе Ирина Федоровна «ТАТМЕДИА» акционерлă обществăн «Сувар» хаçат редакцийĕ» филиалĕн ертӳçи – тĕп редакторĕ.

«Асра юлнă кунсем», «Шурă туй кĕпи», «Тăлăх» кĕнекесен авторĕ. «Литературăллă Чăваш Ен: çулталăк кĕнеки – 2003» конкурсăн «Ача-пăча валли çырнă чи вуланакан кĕнеке» номинацийĕн çĕнтерӳçи. «Экзерсис» конкурс призерĕ. ЧР Профессиллĕ писательсен союзĕн пайташĕ. 2021 çултанпа Тутарстан Республикинчи ЧНКА çумĕнчи Чăваш çыравçисен союзне ертсе пырать.

КĔПЕ

Калав

Пĕр кана купăс сасси лăпланчĕ пек, çук иккен, Петя тете каллех урисемпе хыттăн тăпăртатса, пуçне уха-уха купăсне тепĕр хут тăсса ячĕ. Унăн тулли те çаврака пичĕ тăрăх, тăнлавĕсем тĕлĕнчен шултра тар пĕрчисем юхса анса кĕске мăйне йĕпетсе кĕпе çухави ăшĕнче çухалаççĕ. Тăваткал кĕлеткеллĕ, кĕске те кăтра çӳçлĕ мăнтăр хĕрарăм пĕрмай ун пуçне шурă алшăллипе шăла-шăла илет. Такмак каласа ташланипе урай хăмисем чĕтренсе тăраççĕ. Çынпа пĕрле кравачĕ те, комочĕ те сикет, хутран-ситрен кăмака та чĕтренсе илет. Чаршав хыçĕнче выртакан хĕрачана ĕçсе-çисе савăнакан халăх ĕнтĕ ĕмĕрлĕхех кунта юлассăн туйăнать. Хăшĕ сĕтел хушшинчен тухмасăр пĕр вĕçĕмсĕр çăварне мĕн-тĕр чикет те чикет, тепри ларнă çĕртех çывăрса кайнă. Арçынсем пĕр кĕтессе пуçтарăнса картла

выляççĕ. Пĕри, пит çивĕч чĕлхеллĕскер пулас, мĕн-тĕр каласа парать те ыттисем лахлатса кулма тытăнаççĕ. Хĕрарăмсем вара купăсça çавăрса илнĕ. Ташласа ывăнчĕç куран, юрăсем тăсса ячĕç. Таньăн амăшĕ кăна пĕр вĕçĕмсĕр тĕпелтен малти пÿрте чупрĕ. Апат юлашкиллĕ савăтсене йăтса тухать те каялла каллех мĕн те пулин хурса илсе кĕрет.

Таньăн килти шăплăха каялла тавăрас килчĕ çак самантра. Хăçан кайĕç-ши кусем тесе пăхса выртрĕ вăл савăнакан халăх çине. Çĕнĕ çул каçне уявлама килнĕскерсем çурçĕр иртмесĕр те каймаççĕ пулĕ-ха. Ак хайхи сехет йĕпписем çурçĕр тĕлне çитсен çапма пуçларĕç.

– Çĕнĕ çулпа! Çĕнĕ çулпа, тăвансем! – пĕр-пĕрне ыталаса кăшкăрма пуçларĕç хăнасем.

– Çĕнĕ çул! Çĕнĕ çул! Камăн-тăр çуралнă кун! – ку Таньăн куккăшĕ пулчĕ.

– Анна, чăнах, сан аслин çуралнă кун марччĕ-и-ха?

– Чĕн-ха, чĕн ăна! Ăçта-ха хăй? – темиçе çын пĕр харăссăн кăшкăрашнипе Таня çумĕнче тутлăн çывăракан аппăшĕ вăранчĕ.

– Марина, хĕрĕм, тух-ха йăпăртлăха, сана чĕнеççĕ, – чаршава сирсе чĕнчĕ амăшĕ хĕрне. Ыйхăллă-хутăшлă пулнипе Марина хăйĕнчен мĕн кĕтнине ăнланмасăр пĕр кана куçне мăчлаттарса тăчĕ.

– Акă вăл, пирĕн маттурскер! – куккăшĕ Маринăна йăтса илсе тенкел çине çĕклесе тăратрĕ. Кĕпĕрленсе тăнă халăх хыттăн алă çупса саламлама пуçларĕ.

Ăнланчĕ Марина хăйĕнчен мĕн кĕтнине. Класĕнче чи лайăх вĕренекенскер питĕ нумай сăвă пĕлет вăл. Пĕрин хыççăн теприне пĕр такăнмасăр шатăртаттарчĕ те шатăртаттарчĕ сăвăсене.

– Ай маттуркка, ай пултарать, – кашни кĕтесрен мухтани илтĕнет.

Унтан Маринăна хăшĕ печени пачки, хăшĕ конфет курупки, тепри пукане тыттарать. Самантрах хĕрачана парне айне турĕç.

– Ман хресной хĕр вĕт вăл, апла паян кĕпе тăхăнтартмасăр пулмасть. Эп хатĕрленсе килнĕ, ан шутлăр маннă тесе, – кĕпĕрленсе тăнă çынсене тĕрткелесе Марина умне Ваççа пиччĕшĕ пырса тăчĕ. – Хреснашшĕ парнеленĕ кĕпе вăл асамлă. Ача чирлесен-мĕн тусан хĕреснашшĕне е хреснамăшне кĕпе тăхăнтартма кăна каламалла – ача çийĕнчех чĕрĕлет. Чăвашсен авалтан пыракан йăли ку. Хальхи çамрăксем ăна пурне те пĕлсе пĕтерейменççĕ. Çавăнпа итлĕр мана, – хутаçран хутпа чĕркенĕ тĕркеме кăларнă май калаçрĕ Ваççа пичче.

Хутне салтса пĕтерсен çынсен умне тĕлĕнмелле илемлĕ хĕрлĕ кĕпе тухса тăчĕ. Пурçăнскер Ваççа аллинче йăр та яр шăвать. Электричество çутинче ахах-мерченĕн çутатать. Кун пек кĕпе Таня халиччен курман. Аппăшне мухтаса парне айне тунă чухне Таньăн пырне ахаль те хытă чăмакка питĕрсе лартнăччĕ, çăтас тесен те çăтма çук. Халĕ пушшех сывлама памасăр ыраттарма пуçларĕ. Çук, хăйне кĕпе паманшăн мар. Çак темиçе теçетке çынран пĕри те пулсан ун çинчен аса илсенччĕ. Никам та ăна шырамарĕ, амăшĕнчен ыйтса пĕлмерĕ. Ăçта вăл? Пур-и, çук-и – пурпĕрех. Хăйне никама кирлĕ мар пек туйрĕ хĕрача.

– Марина, ну-кă тăхăнса кăтарт! Юрайрăм-ши, килĕшĕ-и? – çаплах

пакăлтатрĕ аппăшĕн хреснашшĕ. Марина йăпăр-япăр тенкел çинчен сиксе анса кĕпепе пĕрле чаршав хыçĕнче çухалчĕ. Çакна курса тăнă Таня вырăн çине лап ӳкрĕ те çывăрам пекки турĕ. Марина нумай кĕттермерĕ, кĕпене тăхăнса çын умне тухрĕ.

Пӳлĕм варрине тухса вăр та вăр çаврăнма пуçларĕ. Сарлака кĕпе арки парашют пек çĕкленсе хĕрачан çинçе кĕлетки таврă çаврăнчĕ. Çак хушăра çынсем сывлама та чарăнчĕç тейĕн. Гипноз тыткăнне лекнĕн çăвар карса пăхса тăчĕç çаврăнакан хĕрлĕ кĕпеллĕ ачана. Хĕрачан кăлкан пек шурă çивĕчĕ те саланса кайса хумлăн-хумлăн çурăмĕ çине ӳкрĕ.

– Чисти принцесса! Ăçтан кăна пулма пĕлнĕ-тĕр? – купăсçă тарне шăлакан хĕрарăм чăтайманнипе алă çупса ячĕ.

– Марина, хреснаçуна мĕн темелле? – асилтерчĕ хĕрĕ çумне пырса тăнă амăшĕ.

– Сăпаççипă, – вырăс сăмахне чăвашлатса каларĕ хĕрача.

– Сывлăха, сывлăха, хĕрĕм, – хĕпĕртесе хушрĕ халăха тĕлĕнтернĕ Ваççа.

Ара, тăхăр вуннăмĕш çулсенче кун пек кĕпе тупни хăйне пĕр тĕлĕнтермĕш. Лавкка сентрисем пуш-пушă, укçа пулсан та ним те илме çук. Хула халăхĕ пач выçă ларать теççĕ. Юрать ялта пахча çимĕç туса илетĕн, выльăх-чĕрлĕхне усратăн. Аш-пăшĕ те, сĕт юр-варĕ те пур. Лавккаран туянмасăрах пурăнма пулать. Ытлашши пуян пулмасан та выçлăх хăратмасть. Мускавра пач выçăпа аптранине калаçаççĕ. Ваççа вара ют çĕршывра туса кăларнă кĕпе тупса килнĕ. Кун хыççăн тăванĕсен умĕнче вăл тата пĕр шит ӳсрĕ пулинех.

Таня кăна хăйне пуринчен телейсĕр туйрĕ. Çилленни, кӳренни, хитре кĕпене ăмсанни – йăлт пĕр çыхха пуçтарăнса хĕрачан пуçне ыраттарчĕ, лăпчăтса хучĕ. Темшĕн хăйне хăй те кураймарĕ çак самантра. Çынсемшĕн, уйрăмах тăванĕсемшĕн йĕрĕнчĕк пулнă пек туйрĕ. Никам та вăл пуррине аса илмерĕ, ăна шырамарĕ. Пĕр сас кăлармасăр ĕсĕклерĕ хĕрача, минтер пичĕ те лачкам йĕпенчĕ. Йĕре-йĕре тĕлĕрсе кайма пуçланăччĕ ĕнтĕ, чашăк-тирĕк шăкăртатнă сасăпа вăранса кайрĕ. Амăшĕ сĕтел çинчен пуçтарать иккен. Тинех хăнасем кайса пĕтнĕ. Пӳртре шăп. Кĕрлесе тăракан шăв-шавран йĕр те юлман. Пӳрт стенисем те тасалса канса кайнăн туйăнчĕç хĕрачана. Марина та çумра мăшлатса лăпкăн çывăрать. Кĕпине тирпейлĕн тенкел пуçне çакса хунă. Тем пулчĕ çак самантра Таньăна, кĕпене карт туртса тенкел çинчен сӳсе илчĕ. Унтан кравать айне кĕрсе ларса пĕтĕм вăйран енчен-енне турткаларĕ. Тӳрех парăнмарĕ пурçăн пусма. Таня кĕпене арки вĕçĕнчен тата хытăрах туртрĕ, тинех пурçăн çиппине ситрелентерсе чăрр! туса çурăлса кайрĕ. Куççульпе чыхăначыхăна çурчĕ те çурчĕ кĕпене хĕрача. Тĕрĕссипе, хăй мĕн туса хунине те ăнланмарĕ. Часах чĕтрекен аллинчен таткаланса пĕтнĕ пусма татăкĕ шуса тухса урайне лаплатрĕ. Шурă пăнчăллă хĕрлĕ пусма татăкĕ... Çак самантра тин Таня тӳрлетейми йăнăш туса хунине ăнланса илчĕ. Пĕчĕк аллисемпе пурçăн таткаланчăка пуçтарса илсе шăлчĕ, якатрĕ, анчах çурăлса пĕтнĕ аркă енчен енне пĕтĕрĕнсе тек пуçтарăнасшăн пулмарĕ. Хурланса йĕрсе ячĕ Таня. Мĕн тейĕ халь ăна аппăшĕ? Куншăн вăл ăна

нихăçан та каçарас çук. Пытарса хурас, никам та ан тупайтăр. Хĕрача васкаса татăк-кĕсĕке пуçтарчĕ те матрас айне чиксе хучĕ. Кайран нумайччен çывăрса каяймасăр нушаланса выртрĕ. Ир енне тин тĕлĕрсе кайрĕ.

– Анне, ăçта ман кĕпе? Ăна çакăнтах çакса хунăччĕ. Ăçта, ăçта вăл? – Марина хытă кăшкăрашнипе вăранса кайрĕ Таня.

– Лайăхрах шыра, пурçăнскер урайне ӳкме те пултарнă.

– Çук ниçта та, кравать айне те кĕрсе пăхрăм, – халĕ ĕнтĕ Марина йĕме пуçларĕ. – Тĕлĕкре кăна курман-çке эп ăна, хреснатте алăранах тыттарчĕ вĕт…

– Эс пытарса хунă, – тăк тĕртрĕ вăл çывăрса выртакан йăмăкне аякĕнчен.

Ним калама аптраса Таня пуçĕпе кăна енчен-енне сулласа илчĕ. «Тытман», – тесшĕнччĕ те, сасси çĕтрĕ.

– Кусăнтан пăхсах пĕлетĕп, эс тытнă кĕпене. Пар халех, – тилмĕрчĕ Марина.

Намăс пулса кайрĕ Таньăна, хăйне тĕнчере те чи ирсĕр ĕç тунă пек туйрĕ. Мĕн пулать те мĕн килет, ан тив вăрçчăр ăна, тен, хĕнеме те пултарĕç, анчах çак вăрттăнлăхпа малашне пĕр кун та пурăнаймĕ. Нушаланса пурăниччен луччĕ халь чăтса ирттерес тесе матрас айĕнчен пурçăн çĕтĕке туртса кăларчĕ. Марина аллипе куçне шăлса типĕтсе йăл кулса ячĕ. Кăпăр-капăр кĕпине ярса илсе тӳрлетес шутпа силлесе илчĕ. Вĕл! турĕç енчен-енне аркă касăкĕсем.

Маринăн ахаль те пысăк куçĕсем чарăлнипе ала пек пулса кайрĕç. Лăстăр-лăстăр тутарчĕ вăл пурçăн кĕпене, шанас килмерĕ ĕнерхи хитрелĕхрен татăк-кĕсĕк кăна юлнине. Пăрçаран та пысăкрах куççуль тумламĕсем пичĕ тăрăх шăпăртатса юхса анса урайĕнче сарăлса выртнă шурă пăнчăллă хĕрлĕ пурçăн кӳлĕре путрĕç.

* * *

Унтанпа нумай вăхăт иртрĕ. Маринăпа Таня ӳссе çитĕнсе пĕрин хыççăн тепри тăван килĕнчен тухса кайрĕç. Вĕренсе тухса çемьеллĕ те пулчĕç. Çавах Таня ача чухне аппăшне кӳрентернине манмарĕ. Ун çинчен пĕр вĕçĕмсĕр шутласа çӳремерĕ, çук. Çавах чĕре тĕпĕнчи айăп канăç памасть, комплекса çаврăнчĕ темелле-ши ăна? Çитĕнӳсем пур пулсан та туллин савăнаймасть вĕсемпе, тивĕçсĕр пек туять. Айăп туйăмĕ шап-шурă хут листинчи хура пăнчă пек канăçсăрлантарать.

Пĕррехинче хула урамĕпе утса пынă чух куç тĕлне пусма тавраш сутакан лавкка пулчĕ. Витринăна тĕрлĕ тĕслĕ, тĕрлĕ фактурăллă пусмасемпе капăрлатнă манекенсем илем кӳреççĕ. Марина алăка уçса шала кĕчĕ. Пурçăн та сатин, атлас та креп, чĕнтĕрлесе тунисем йĕри-тавра. Хĕрарăм тирпейлĕн лартса тухнă сентресем хушшипе майĕпен утрĕ. Кăмăла кайнисене тыта-тыта пăхрĕ. Шурă вак пăнчăллă хĕрлĕ пурçăн умне çитсе тăрсан тăп чарăнчĕ. Асра çурса пĕтернĕ кĕпе сывлăшра чӳхенсе урайне хум пулса ӳкни, Маринăн хĕрелсе кайнă куçĕсем чĕррĕн тухса тăчĕç.

– Мана ак çак пусмана виçсе параймастăр-ши? – терĕ вăл сутуçа пусма татăкне кăтартса.

– Паллах, сире мĕн чухлĕ кирлĕ?

– Ман пек хĕрарăма пĕр кĕпе тухмалăх, – аллипе пурçăна ачашласа йăл кулчĕ телейлĕ хĕрарăм.

Константин МАЛЫШЕВ

Константин Анатольевич Малышев 1977 çулхи çу уйăхĕн 18-мĕшĕнче Пăва районĕнчи Пӳркел ялĕнче çуралнă. Шкул хыççăн Пăвара çар водительне вĕреннĕ. Хусанти патшалăх педагогика институчĕн вырăс филологи факультечĕн чăваш уйрăмне пĕтернĕ. Тутарстанри чăвашсен «Сувар» республика хаçатĕнче корреспондент, тĕп редактор (2003 – 2019), сайт редакторĕ пулса ĕçленĕ.

ТР ЧНКА председателĕн пĕрремĕш çумĕ, Раççейри Чăвашсен федераллă наципе культура автономийĕн председателĕн çумĕ, Хусанти П.Хусанкай ячĕллĕ ЧНКЦ председателĕ, ТР ЧНКА çумĕнчи Чăваш çыравçисен союзĕн пайташĕ.

Пĕлтĕр, 2023 çулта, Константин Малышевăн «Ачалăхăм» ятлă пĕрремĕш кĕнеки кун çути курчĕ.

УКÇА

Калав

Шкулта вĕреннĕ вăхăтра киле кайнă чух шав лавккана кĕреттĕмĕр – мĕн çĕннине илсе килнине тĕрĕслемелле пирĕн. Кĕркунне унта виноград е улма илсе килетчĕç. Хакĕ пуспа кăна, ещĕкĕпех туянатчĕç. Пĕррехинче пăхатăп – чи çӳллĕ сентре çинче купăс ларать. «Чайка» тесе çырса хунă. Ман вăл вăхăтра питĕ кармун (хуткупăса пирĕн ялта çапла калаççĕ) калама вĕренес килетчĕ. Сулахай Сашшук ĕнтетчĕ кăна ташă кĕввине, Радипе Михха Куля тетесенчен вĕреннĕ. Пирĕн купăс çук, ăçтан вĕренес? Аннене пырса йăлăнтăм, çирĕм тăвата тенкĕ хаклă тет. «Виççĕмĕш класра кăнаха, ӳссен илсе парăпăр», – тесе йăпатать.

Илмерĕç. Купăс лавкка сентри çинче хăй хуçине кĕтет-ха, никам та туянман ăна. Кашни кĕмессерен ун çине пăха-пăха ассăн сывлатăп. Пирĕн пек пысăк çемьере хуткупăс туянассисĕр пусне урăх тăкаксем те пулнă-тăр ĕнтĕ, анчах ача ăсĕ çакна ăнланас темен çав.

Пĕррехинче кĕрхи каникул вăхăтĕнче Яппун Андрейĕ патне кайса килес терĕм. Урамра урăм-сурăм пылчăк, çынсем решеткесем хĕррипе кăна утса çӳреççĕ. Вăл вырăнсем те сукмакланман-ха, çумăрпа лӳшкенсех тăраççĕ.

Эпĕ атăпа. Утатăп Сухал Евтук аппасен пахчи çумĕпе решеткесенчен

тытӑнса. Ура айне пӑхрӑм та – пылчӑк ҫинче 25 тенкӗлӗх хут укҫа выртать парать! Вӑл вараланса та ёлкӗреймен-ха. Апла-тӑк ӑна нумай пулмасть кӑна ҫухатнӑ. Урамра никам та ҫук. Вӑл тӗлтен ман умран иртсе кайнӑ ҫынсене те астумастӑп. Илтӗм. Сирень чечекӗ тӗслӗ ҫирӗм пилӗк тенкӗ пысӑк укҫа шутланатчӗ. Пире лавккана ҫӑкӑр е ыттине илме ун пеккисене парса ямастчӗҫ. Вӑт ӑнчӗ тетӗп. Савӑннӑ хам. Ӗмӗтре «Чайкӑн» хурапа шурӑ тӳмисем ташӑ кӗвви кӑлара пуҫларӗҫ. Ҫапах укҫа хуҫи ӑна шыраса таврӑнмӗши тесе кӗтсе тӑрас терӗм. Вӑл енче нумай пенси карчӑкӗ пурӑнатчӗ, урӑх камӑн тухса ӳктӗр? Юри пӑрахса хӑвармаҫҫӗ ёнтӗ ун пысӑкӑш укҫана...

Килекен ҫук. Ҫаврӑнтӑм та килелле уттартӑм. Лавккана пӗччен купӑс илме кайнин усси ҫук, ҫавӑн пек хаклӑ япалана Зина аппа сутуҫӑ хама кӑна парса ямасса та пултарать. Тата пылчӑкра эп ӑна пӗччен йӑтса ҫитереес те ҫук.

Пӳрте кӗтӗм. Октябрёнокӑн улталама юрамасть, тӗрӗс воспитани илнӗскер асаннене веҫех каласа патӑм.

– Халь купӑс илсе параҫҫӗ-и мана? – тесе ыйтатӑп. Яланах ман майлӑ пулакан асанне сӑнран улшӑнчӗ.

– Мӗн тума илтӗн? Ӑна вӗт тухатласа пӑрахма пултарнӑ, – тет хайхи.

Вӑл ун пек тӗшмӗшсене ёненетчӗ. Унтан тата:

– Кам-тӑр ҫухатнӑ ёнтӗ, шырать-тӗр, – терӗ Сухалсен енне пӑха-пӑха.

Манӑн ёмӗт татӑлса пынине сисрӗм. Ҫирӗм пилӗк тенкӗлӗхе аннене пама тиврӗ.

– Хуҫи тупӑнмасан хӑвна юлать, – тесе вӑл укҫа ҫухатнӑ ҫынна шырама Ҫӗткӗлсен тӗлӗнчен пуҫласа ретрен килсем тӑрӑх кайрӗ. Анне киле хаҫатпа чӗркенӗ канфетпӗремӗкпе килсе кӗни укҫан хуҫи тупӑннине пӗлтерчӗ. Анчах та ҫак пылак мана темшӗн савӑнтармарӗ.

Атте ёҫрен таврӑнсан кӑна эрленме пӑрахрӑм. Вӑл мана хӑй пӗчӗк чух лавккана ҫӑкӑр илме парса янӑ кучченеҫ укҫине ҫухатни ҫинчен каласа пачӗ. Питӗ хуйхӑрнӑ ҫаканшӑн. Лавкка патӗнче темӗнччен кӗтсе те тӑнӑ, анчах укҫине тупса паракан тупӑнман.

Ун чухне вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи выҫӑ вӑхӑтсем иртмен пулнӑ-ха. Вӑл мана тупнӑ укҫана аннене панӑшӑн мухтарӗ. «Ҫынна ырӑ тӑвӑр, ырӑ туни усал тунинчен икӗ хут ытларах ҫаврӑнса килет, мӗншӗн тесен ӑна йывӑр – вӑл сире валли икӗ хут нумайрах пархатар йӑтса килет», – тесе вӗрентетчӗҫ аслисем.

ЮРАТНĂ ХĔР

Калав

Юрату туйăмĕ манра ача садĕнчех палăра пуçларĕ. Садике çӳрекенсем тăхтавсенче коридора тухса хĕрачасене хăвалама тытăнаттăмăр. Хăваласа тытсан питĕнчен чуптумалла. Чуптусан – вăл сан хĕр шутланать, чуптăваймасан – çук. Кинори Аватар асамлă лашине утланнă пекех. Хĕрачасем тыттармастчĕç, пăрăнатчĕç. Хăваласа çитсе ăлăкпа хĕстереттĕмĕр те пурпĕр чуптăваттăмăр. Пĕшкĕннĕ хĕрачана тута хăçан çамкичен, хăçан çӳçĕнчен лекетчĕ. Çапах çакнашкал чуптуни амурлă вăйăра çĕнтерни шутланатчĕ. Хăйне евĕр çитĕнӳ.

Пĕрремĕш класа кайнă çĕре манăн хĕр пурччĕ ĕнтĕ. Тĕрĕсрех каласан, пире садикренех каччипе хĕрĕ тесе тăрăхлатчĕç. Çуллахи вăхăтра Лена аппасемпе кӳршĕри Калюк аппасем килле вылятчĕç. Эпĕ, Сергей, тăкăрлăкри Натали – вăйăри ачисем.

Аппасем пĕр кун килле выляççĕ. Пушă консерв савăчĕсене хăйăр тултараççĕ те «пăтă» пăлхатаççĕ, йăмра çулçи «укçа» шутланать. Пуканисем вырăнне «чĕрĕ экспонатсем» – кĕçĕннисем.

Тепĕр кун туйла выляççĕ. Ача-пăча фантазийĕ мĕн таран çитнĕ-тĕр ĕнтĕ. Наталипе манран каччӑпа хĕрне тăваççĕ. Ларатпăр килтен илсе

тухнă пĕчĕк минтерсем çинче пĕр-пĕрин çине вăтанчăклăн пăхса. Хĕрĕн пĕркенчĕк пекки пур. Аппасем чуптутарса ахаль те хĕрлĕ питсене тата та хĕретсе яраççĕ.

Иксĕмĕр те çӳллĕ пулнăран воспитательсем пире юнашар тăратса юрлаттаратчĕç. Хывăнса тăхăнмалли шкапсен алăкĕсем те юнашарччĕ. Манăн ракета ӳкерсе хунă, унăн – юла. Çакă мана самай вăтантаратчĕ пулсан та ним те тăваймастăн. Ун пек ятсем ачалăхра хăпăтайми çыпăçса лараççĕ. Çапах та савни пурри хама ыттисенчен кăшт аслăрах туйтаратчĕ-тĕр.

Пурăнма та эпир юнашар пурăнаттăмăр. Пирĕн ушкăна мĕнпур ача килнĕ кунсенче мана çывăрмалли сехетсене час-часах анне кабинетĕнчи яслине выртаратчĕç. Аслăрах ушкăнсенче кăнтăрлахи апат хыççăн çывăрмастăн ĕнтĕ, пăшăлтатса выртатăн, интереслĕ вĕт. Кунта эсĕ заведующи кабинетĕнче пĕчченех, кичем. Юратуран ирĕксĕр уйăраççĕ.

Наташăпа çыхăннă пĕр интереслĕ япала асра. Пирĕн çемьере тăватă ывăл, вĕсен виçĕ хĕр. Кĕçĕнни Оксана çуралсан Наташăна йăмăкне коляскăпа уçăлтарма кăлараççĕ. Вăл нумай шухăшласа тăмасть, йăмăкне пирĕн пата арçын ачапа улăштарма илсе килет. Умра асанне ларнă пулнă, Сергея парса яман.

Пĕрремĕш класра та Наташăпа пĕр парта хушшинче лартăмăр. Пĕтĕмпех аванччĕ, иксĕмĕр те лайăх паллăсемпе çеç вĕренеттĕмĕр, çуралнă кунсене те пĕрле тăваттăмăр. Юратни пирĕн çав таранччен пулнă-тăр ĕнтĕ, аларан алă тытăнса çӳренинчен иртмен. Пире вăл та çитнĕ. Хăçан вĕсен асламăшĕ варенипе чей ĕçтерет, хăçан пирĕнни сĕтпе турăх пăтратса парать.

Анчах Наташăсен çемйи Шупашкара куçса кайсан пирĕн çыхăну татăлчĕ. Пĕр-икĕ çыру яркаларăмăр пек. Анчах мĕн çинчен калаçмалла хуларисемпе? Эпир унта мороженăй çиме кайсан кăна пулнă, вăл пурнăçа ăнланмастпăр.

Çуллахи каникула асламăшĕ патне килсен вĕсем ĕнтĕ вырăсла перкелешме пуçларĕç. Çавă та сивĕтрĕ-тĕр тус-тантăшран…

Чим-ха, чим! Калава кунпа вĕçлеместпĕр, манăн ыйту пур: мĕншĕн эпир ача садĕнчи е пĕрремĕш класри савнисене манмастпăр-ха? Вăл пулăмсем тахçанах иртнĕ вĕт, темĕскер палăртмалли те çук çав хутшăнусенче. Тен, ун вăрттăнлăхĕ – чунра пĕрремĕш туйăмсем çуратакан самантсем урăх нихăçан та тĕл пулас çуккине асра тытни? Çав туйăмсене эпир, черчен чечек çеçкисене çил вĕрсе салатасран хӳтĕленĕ пек, чĕре тĕпĕнчи чи инçетри «çӳлĕк» çинче ачашшăн упратпăр.

Антонида САУШКИНА

Антонида Александровна Саушкина 1957 ҫулта Лениногорск районĕнчи Ҫĕнĕ Шешкел ялĕнче ҫуралнă. Шкул хыҫҫăн Хусанти педагогика институтне пĕтернĕ, 42 ҫул хушши тăван ялĕнчи шкулта вырăс чĕлхипе литературине вĕрентнĕ, директорăн воспитани парас енĕпе ҫумĕ пулса ĕҫленĕ. РФ ҫутĕҫ отличникĕ. Халĕ канура.

Икĕ чĕлхепе – чăвашла тата вырăсла – ҫырать. «Путь к себе» сăвăсен пуххин авторĕ. Вырăсла сăввисем Мускаври «Сельская новь» журналта, ытти хаҫат-журналта пичетленнĕ. Чăвашла сăввисем «Ялав», «Тăван Атăл», «Шурăмпуҫ» журналсенче, «Самар ен», «Сувар» хаҫатсенче пичетленнĕ.

Антонида Саушкина – ТР ЧНКА ҫумĕнчи Чăваш ҫыравҫисен союзĕн пайташĕ, вырăсла ҫыракансен «Российский союз писателей» пĕрлешĕвĕнче тăрать. Тăватă сăввине юрра хывнă.

ТĂВАН ЧĔЛХЕ

Чăваш чĕлхи, тăван чĕлхе
Хакне епле-ши пĕлтерем?
Чунри чи ҫепĕҫ хĕлĕхе
Ун ячĕпе эп сĕртĕнем.

Инҫе каям, таҫтах ҫитем –
Пĕр-пĕр яла е хулана –
Тăван сăмах – ачаш чĕлхем
Ҫемҫе ҫил пек лăпкать чуна.

Хальччен пĕртте курман ҫынпа –
Вăл чăвашла пуплет пулсан –
Тĕл пулнă евĕр тăванпа
Чун-чĕререн эс калаҫан.

Тăван сăмах илтĕннипе
Хаваслă кăмăл таврăнать,
Анне чĕлхи пулăшнипе
Ҫын инҫетпе ҫывăхланать.

Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхем!
Ăна епле-ши ман хаклас?
Чĕре ҫине сапан хĕлхем
Тесе-ши ун пирки калас?

Пилленĕ сисĕмлĕх хăлат,
Сар кайăк – сас янравлăхне.
Ăс-хакăлна ан хавшаклат
Манса йăх панă чĕлхене.

Ют сăмахпа ан чухăнлат
Тăван чĕлхе пахалăхне.
Унра – илем, унра – хăват,
Пĕрле упрар малашлăхне!

ТĂВАН ЯЛĂМ

Инҫете эп каяймарăм
Хам ҫуралнă кил-ҫуртран.
Каяймарăм мар – каймарăм
Ют ҫĕре чун туртманран.

Чӗререн кӑлараймарӑм
Хамӑн ансӑр сукмака.
Ют ҫулпа улӑштармарӑм
Вӑл пулсан та сарлака.

Йӑлтӑр-ялтӑр мар ман ялӑм:
Илӗртмест вӑл таҫтанах.
Пурпӗрех мӗнпур вӑй-халӑм
Уншӑн пултӑр яланах!

ӐСАТУ

Эп ӑсатрӑм куҫҫуле тӑкмасӑр
Салтака пӗртен-пӗр ывӑла.
Уйрӑлаҫҫӗ, терӗҫ, макӑрмасӑр.
Ырӑ паллӑ, терӗҫ, ҫак йӑла.

Юлашки хут аллуна сулларӑн
Алӑк хыҫӗнтан хупӑниччен.
Эс телейлӗ: куҫҫуле курмарӑн,
Ҫирӗп тӑтӑм эсӗ кайиччен.

Эсӗ кайрӑн – уҫӑлчӗ пуль ҫулӗ –
(Мӗн тӑвайӑн амӑш чӗрине?)
Юхрӗ, юхрӗ чарӑнми куҫҫулӗ,
Вӑл йӗпетрӗ алӑ тутрине.

«Ҫитӗ, ҫитӗ, – хам хама питлетӗп, –
Йӑлана пӑсни вӑл лайӑх мар».
Ывӑла чипер ҫул-йӗр пиллетӗп,
Майӗпен йӑшать ӑшри кӑвар.

Пурпӗрех пӗлетӗп эп: пӗр ҫулӗ
Пӗр хут ҫеҫ-и макӑртӗ мана?
Пултӑр – юхтӑр савӑнӑҫ куҫҫулӗ,
Хуйхӑ ҫеҫ ан хуҫтӑрччӗ чуна…

Эп ӑсатрӑм куҫҫуле тӑкмасӑр
Салтака пӗртен-пӗр ывӑла.
Уйрӑлаҫҫӗ, терӗҫ, макӑрмасӑр…
Ырӑ паллӑ пултӑр ҫак йӑла.

КУС ЭС, КУСТӐРМА!

Кус эс, кустӑрма,
Ырӑ кун паян.
Йыхӑрчӗ курма
Аякри тӑван.
Пырӗ ак тӑван
Кантӑкӗ умне,
Куҫ илми, чунтан
Пӑхӗ ҫул ҫине.

Кус эс, кустӑрма,
Тикӗс те сатур.
Тӑвана курма
Манӑн кӑмӑл пур.
Хатӗрлӗ тӑван
Ӗҫкӗ-ҫикине,
Кӑларӗ шӑрттан,
Лартӗ хуплуне.

Кус эс, кустӑрма,
Хӑвала ҫиле!
Тӑвана курма
Манӑн ҫитмелле.
Кӑпӑкӗ сӑран
Тӑрӗ чашкӑрса,
Хапхине тӑван
Хурӗ ак уҫса.

Кус эс, кустӑрма,
Ман ҫула кӗскет,
Тӑвана курма
Чун-чӗре хистет.
Ҫӗнӗ юрӑсем
Кӗвӗлӗ тӑван,
Ӑшӑ сӑмахсем
Пулӗҫ чи малтан.

Кус эс, кустӑрма,
Ан шелле вӑйна,
Тӑвана курма
Ҫитерсем мана.
Тӗл пулас тӗле
Ҫитӗп нимсӗр мар:
Хире-хирӗҫле
Ҫӑкӑрпа тӑвар.

Кус эс, кустӑрма,
Ҫӗмрен пек вӗҫтер,
Тӑвана курма

Хăвăртрах çитер.
Çак хутшăнури
Туслăх туйăмне,
Атьăр, тăвар-и
Пĕр-пĕрне парне?

Кус эс, кустăрма,
Савăнăç паян:
Йыхăрчĕ курма
Аякри тăван!

ÇУРХИ ЮРĂ

Тӳпе, тĕс илнĕ майăн,
Шыв тĕкĕрне пăхать.
Çӳлте çурхи сăрнайăн –
Тăрин сасси юхать.
Ун евĕр вĕçеесчĕ
Çунатлă пулайса,
Сана савни теесчĕ,
Эс савнине туйса.

Каçхи ĕмĕтĕмре те
Чĕнетĕн эс мана,
Ирхи тĕлĕкĕмре те
Илетĕн ытамна,
Пĕр сан çинчен çыратăп
Хĕвел шевлипеле,
Пĕр сан çинчен юрлатăп
Çурхи çилпе пĕрле.

Эс инçетре пулсан та
Асрах-çке йăл куллу.
Пин ĕмĕр тăсăлсан та
Çак вĕçсĕр уйрăлу,
Пĕрех сана каçарăп
Манса ыратăва,
Янрав юрра куçарăп
Сӳнми юратăва.

ВУЛАКАНПА КАЛАÇНИ

Эс калатăн: «Сăвă çырасси –
Вăл хитре сăмах çеç шырасси.
Килĕшуллĕ рифма тĕл пулсан
Çĕнĕ сăвă кун курать те сан!»

Эс калатăн: «Сăвă çырасси –
Вăл тулли валак çеç тупасси!»
Хуравлатăп: «Уçăлĕ çăлкуç –
Çĕрĕпе те хупмасассăн куç.

Çавăн чух эп – тĕнчере пĕччен,
Çавăн чух ман аллăмра – мерчен.
Тăрăшатăп çанă тавăрса,
Чĕрене вут витĕр кăларса.

Çавăн чух куççуль ахахланса
Хут çине ӳкет – сăмах пулса.
Çăмăл мар-çке сăвă çырасси –
Пулайсан вăл чăн та чун сасси!»

ШУХĂШСЕМ

Мĕн çинчен эп шухăшлатăп
Хĕвелпе пĕрле тăрсан?
Мĕн пирки пуçа вататăп
Ик алла пĕр ĕç тытсан?

Питĕ аслă-çке тĕнчийĕ!
Çак мăнаçлăх çумĕнче
Мĕн эп – пĕр тусан пĕрчийĕ,
Эп – хирти пĕччен чечек?

Эп хальччен ăс-хакăл пухнă
Кулленхи ĕçре пиççе,
Хамăн алă витĕр тухнă
Кукăль-çăкăра çисе.

Ывăл-хĕр пăхса ӳстернĕ,
Сӳнтермен юратăва,
Тăванпа тӳссе ирттернĕ
Пур инкек-ыратăва…

Мĕн эп – пĕр ыраш калчийĕ,
Эп – ирпе ӳкен тумлам?
Питĕ аслă-çке тĕнчийĕ!
Хуравне камран ыйтам?

Пулĕ халăх пĕр канашлă:
Çак чечен пĕрчĕсенче
Çуралса тупать малашлăх
Вĕçсĕр, вилĕмсĕр тĕнче!

Мăнаçланатпăр сирĕнпе,
паянхи кун паттăрĕсем!

Ирина КУЗЬМИНА

Ирина Николаевна Кузьмина Çĕпрел районĕнчи Матак ялĕнче 1974 çулхи пуш уйăхĕн 15-мĕшĕнче çуралнă. Шкул хыççăн И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче тата Хусанти социаллă гуманитари вĕрентӳ центрĕнче аслă пĕлӳ илнĕ. Чăваш чĕлхипе литература вĕрентекенĕ, журналист, логопед-дефектолог.

1997 – 2002 çулсенче Çĕпрел районĕнчи «Тăван ен», 2002 – 2004 çулсенче «Хыпар» Издательство çурчĕн «Чăваш хĕрарăмĕ» хаçатсенче тăрăшнă. 2004 çултанпа «Сувар» хаçатра, 2020 çултанпа Хусанти «Елена Нуруллина» логопеди центрĕнче ĕçлет.

ЧР Президенчĕн стипендиачĕ (2003), журналистсен ĕçĕсен «Щит и перо – 2010», «Фемида года – 2019» республика конкурсĕсенче палăрнă.

ВĔСЕН АЛЛИНЧЕ ÇĔРШЫВ МАЛАШЛĂХĔ, ШĂПИ

Ятарлă çар операцийĕнчи ентеш-салтаксемпе вĕсен ашшĕ-амăшĕсене халаллатăп.
Автор.

Кашни вăрçăн хăйĕн сăнĕ, ятарлă çар операцийĕн те пур. Маншăн вăл – Михаил Афанасьев сăнĕллĕ: шухăшпа, ӳт-пӳпе çитĕнсе çитнĕ, тĕреклĕ, ырă кăмăллă салтак, спортсмен, чăн-чăн хӳтĕлевçĕ.

2014 çул. Украинăра Майдан кĕрлет. Политикăран аякри çынсем эпир те телевизор экранĕ çумнех çыпăçса ларса е пушă вăхăт тупăнсанах телефон тытса кӳршĕллĕ çĕршывра мĕн пулса иртнине тимлĕн сăнатпăр. Ача чухне хăюсенчен пуç кăшăлĕсем туса украинла ташласси модăра пулнипе-ши, çак халăха белоруссенчен те çывăхрах кураттăмăр эпир.

Олимпиада пек пысăк ăмăртусенче украин спортсменĕсем мала тухсан мĕнле савăнаттăмăр тата, ара, хамăрăннисем вĕт, медаль юта каймасть. Çавăнпа Украинăн çĕнĕ влаçĕ 2014 çулхи апрель уйăхĕнче Донбасри хăй халăхĕ çинех танксем яни, майăн 1-мĕшĕнче Одессăри Профсоюзсен çуртĕнче çынсене чĕрĕлле çунтарни пуçа шăнăçман япаласем пулчĕç, çакна тӳрех шанас та килмерĕ. Унтан кайрĕ вара Раççей çине лачака сапасси: тӳремсенче пин-пин çамрăк пире вилĕм сунса сикесси, факелсем çутса урамсем тăрăх утасси… Тăванла халăхшăн Раççей хăçан тăшмана çаврăннине сиссе те юлаймарăмăр.

Мĕн кĕтет-ши сире, ачамсем?

Майдан алхаснă вăхăтра пĕррехинче пĕр телекăларăмра 20-мĕш çулсенче вăрçă пулассине Ванга каласа хăварнине асăнчĕç. Чĕрем тӳрех сисчевлĕн яш! чиксе кайрĕ.

– Эпĕ унччен пурăнаймăп ĕнтĕ, ачамсем, сире мĕн кĕтет-ши? – ассăн сывларĕ манпа пĕрле телевизор пăхса ларакан 90 çула çывхаракан ват аннем.

Тăван çĕршывăн Āслă вăрçи вăхăтĕнче тăван ялне, Теччĕ районĕнчи Чакăлтăма, Украинăран çынсене эвакуациленине анне час-часах каласа паратчĕ. Мăнтарăнсене ял-йыш пĕр сăмахсăрах çемьесене йышăннă, хăйсем те выçăпа касăхсан та çăкăра пĕрле пайланă. «Пур – пĕрле, çук – çурмалла» йăлапа пурăннă вĕт ĕлĕкрен чăваш. Анне Оля ятлă украин хĕрачипе питĕ туслашнине, кайран пĕр-пĕринчен йĕре-йĕре уйрăлнине тунсăхлăн аса илетчĕ. Шел, нихăçан та çыхăнăва татмастпăр тесе сăмах панă хĕртуссене тепре тĕл пулма Турă пӳрмерĕ.

– Эх, Оля, мĕнле-ха капла, нивушлĕ сан ачусем ман ачасене перĕçши? – терĕ хурлăхлăн аннем хăй ăшĕнче ачалăхри хĕр-тусĕпе калаçса.

Икĕ халăх хушшинче ыран-паян вăрçă тухасси ун чухнех сывлăшра явăнатчĕ ĕнтĕ. Юн шăршине риснĕ украин неонацисчĕсем Минск килĕшĕвне пурнăçлама шутламарĕç те. 8 çула тăсăлчĕ вĕсен террорĕ Донбасра.

2021 çулхи хура кĕркунне пĕррехинче ирпе ирех ĕçе кайнă чух Хусан хулинчен тухнă çĕрте çар колонни чарăннине асăрхарăм. Çакăн чухлĕ çар техникине Çĕнтерӳ парачĕсемпе çар училищисен территорийĕсĕр пуçне урăх ниçта та курманран чĕрем ырă мара сиссе сӳ туса кайрĕ. «Ăçта каяççĕ кун чухлĕн?» – пăраларĕ пуçа шухăш. Çав каçах ентешсен социаллă сетьсенчен пĕрин ушкăнĕнче 60 ытла техникăран тăракан çар колонни Çĕпрел районĕнчи Āслă Аксу çулĕпе кăнтăралла кайнине çырчĕç. Мĕнле кăна версисем пулмарĕ-тĕр комментарисенче. Пĕри кăна: «Украинăна каяççĕ…» – çырчĕ шӳтлĕн. Тӳрре килчĕ. Хăйсем ăçта тата мĕн тума кайнине салтаксем хăйсем сисрĕç-ши? Пирĕн район урлă кăнтăралла каймалли çул пуррине пĕрремĕш хут пĕлтĕм ун чух.

2022 çул. Ăçта мĕнле пуль те, эпир, хусансем, ăна яланхинчен нумайрах фейерверк-салют ярса кĕтсе илтĕмĕр. Çĕнĕ çул каç тавралăх кисренсе тăчĕ. «Ырра кăна пултăрччĕ», – хам сисмесĕрех сасăпа

пăшăлтатрăм черетлĕ салютăн вут-чечекĕ каçхи тӳпере çурăлнине хваттер чӳречинчен сăнанă май. Темшĕн ку илем мана савăнтарас вырăнне тата ытларах сисчĕвлентерчĕ. Ахальтен мар иккен.

Чунăм йышăнасшăн пулмарĕ

Февралĕн 24-мĕшĕ, кĕçнерникун… Украинăра ятарлă çар операцийĕ пуçланни çинчен ĕçе çитсен илтрĕм. Шанма халăм çитменнипе-ши те хаçат номерĕпе держурнăй пулнипе, кунĕпе те питех тимлĕхе илмерĕм-ха тĕнчипе кĕрлекен хыпара. Каçхине киле таврăнсан Дон-çи-Ростоври йăмăка Светланăна шăнкăравларăм.

– Пенĕ-сирпĕннĕ сасăсем леш енчен хытă илтĕнет теççĕ ĕçрисен чикĕ хĕрринче пурăнакан тăванĕсем. Тĕрĕс хыпар, – терĕ хайхи.

Çавах чунăм йышăнасшăн пулмарĕ çакна. Канмалли кунсенче кунĕпе телевизорпа кашни хыпар кăларăмне, аналитика программине пĕрин хыççăн теприне сывламасăр пăхрăм. Мĕн пулса иртни калама çук хытă пăлхантарса ячĕ. Манăн та пĕртăван пилĕк тете, вĕсен тата аппан ывăлĕсемпе кĕрӳшĕсем, иккĕмĕш сыпăкри пиччен çарта контрактпа тăракан ывăлĕ пур вĕт тата хам та аслă шкулта çулталаскăхлăх медицина курсне пĕтернĕ çын. Пуç кĕç-вĕç сирпĕнес пек шавлать. Çапла виçĕ каç куçа чĕптĕм те хупаймарăм: «Америка астаракан япала нумая пырĕ-ха ку, хамăр атьсене шел, миçе анне ывăлне пытарĕ-ши тата?» – вĕçĕмсĕр явăнать пуçра шухăш. Çав кунсенче эпĕ те вут пек çунтăм пулсан, мĕнле чăтрĕ-ши салтак амăшĕн чĕри?!

Вăхăтĕнче ман çемье Украинăна куçса кайма пултарнине аса илетĕп те хăрушă пулса каять. Кукамай Елена Григорьевна 1939 çулта тĕрĕс йышăну туман-тăк, мĕн курма тиветчĕ-ши вĕсен? Кукаçи Архип Дмитриевич Семенов ун чух Украинăри Горловка шахтине ĕçе вырнаçнă иккен. Авланнăскер, пĕринчен тепри ачисем пĕчĕккипе инçе çĕре малтан хăй кăна кайса пăхма шутланă. Тепĕр темиçе уйăхран чăнах та çемйине илсе каяс тĕллевпе таврăннă вăл. Анчах кукамай те чунĕ сиснипе, те тăванĕсенчен уйрăлас теменнипе: «Каяссу килсен – кай, ачасене сĕтĕрсе тĕнче тăрăх çӳреймĕп-ха», – тенĕ пулать çирĕппĕн. Çемйи çĕнĕ çĕре пурăнма куçма килĕшменрен кукаçи те урăх каяс темен ахăр. Çапла хăтăлса юлнă ман çемье Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин нуши-тертĕнчен. Йывăрлăхне курмаллипех курнă-ха, кукаçи 1942 çулхи февраль уйăхĕнчех, чăннипе темиçе уйăх маларах та, Мускава хӳтĕлесе хыпарсăр çухалнă пирĕн, кукамай пилĕк ачипе тăлăха юлнă, çавах та вăрçă вутне курман.

Ятарлă çар операцийĕ пуçланнă самантранах çухатусем пысăк пуласси паллăччĕ, пурпĕр ыррине шанас килет вĕт-ха. Усал хыпар утпа çӳрет тенĕн, нумай кĕттермерĕ хăйне, Кайпăç, Апас, Пăва районĕсене хурлăхлă хыпар çите пуçларĕ, унтан Çĕпрелне… Чăваш Çĕпрел каччине, контрактпа çарта тăракан, Сирире те пулма ĕлкĕрнĕ çап-çамрăк Игорь Арьяхова чи малтан килсе пытарчĕç… Салтак тупăкне хăв куçпа курман-тăк, усал хыпара пурпĕр шанас килмест-çке.

Кĕҫех кун пек май та пулчĕ. Хула хĕрринче пурӑнаканскер лӑк тулли автобусра ĕҫе каятӑп. Ҫул ҫинче яланхи пекех пробка. Пĕр ача вĕҫĕмсĕр йĕрмĕшет, ыйхи тӑранманччĕ-тĕр пĕчĕкскерĕн. Сасартӑк пирĕн автобуспа икĕ катафалк танлашрĕ, водительпе юнашар ҫар ҫыннисем лараҫҫĕ – Хусана груз 200 кӳреҫҫĕ... Машинӑсем пĕрре пиртен иртсе каяҫҫĕ, тепрехин эпир вĕсенчен... Ҫапла сехете яхӑн. Автобус салонĕнче ҫул тӑрӑх йĕрмĕшсе пыракан ача та калама ҫук пысӑк хуйхӑ юнашарах пынине ӑнланчĕ-ши – тӑрук йĕме чарӑнчĕ. Ура пусма та вырӑн ҫук автобусра шӑп, мотор шаккани ҫеҫ илтĕнет... Шӑп ҫак вӑхӑтра ятарлӑ ҫар операцийĕн трагедийĕн хӑрушлӑхне салонри кашни ҫын ӑнлантӑмӑр пуль.

Ашшĕн усал тĕлĕкĕ, шел пулин те, чӑна килнĕ...

Кĕҫех чĕрене тата хытӑрах ыраттараканни пулчĕ. 2022 ҫул, апрель уйӑхĕ. Пӑва районĕнче иртекен «Тӑхӑрьял шӑпчӑкĕ» юрӑ конкурсне кайса репортаж тума задани пачĕ мана редакци. СВОра пуҫ хунӑ Элшел каччине, Ульяновскри 31-мĕш штурмпа десант бригадин гварди ефрейторне, разведчик-пулеметчика Михаил Афанасьева ҫав кун пытарассине ҫул ҫинче кӑна каларĕҫ.

Михаил Афанасьев.

Ҫак качча пĕрре те курман эпĕ, палламан та. Ашшĕ-амӑшĕ те пĕлнĕ ҫынсем мар. Ҫапах Афанасьевсен ҫемйине йӑтӑнса аннӑ пысӑк хуйхӑ ҫĕҫĕ евĕр ман чĕрене те ҫурса ыраттарчĕ. Чӑваш каччи, йӑхташҫке, ҫитменнине кӳршĕ (хам эпĕ Ҫĕпрел районĕнчен). Ҫап-ҫамрӑкла пуҫ хунӑ салтака юлашки ҫула ӑсатма тем пек каяс шутлӑччĕ – пулаймарĕ. Питĕ хурланса, пуҫ хунӑ салтак умĕнче пысӑк айӑпа туйса Хусана таврӑнтӑм ун чух. Тунтикунах редколлегире Мишӑн вилтӑпри ҫине ятарласах кайма, ашшĕ-амӑшĕпе тĕл пулма тĕллев лартрӑмӑр.

Телее, салтакӑн ашшĕ Григорий Михайлович Афанасьев пирĕнпе калаҫма килĕшрĕ. Ӑна та, мана та ҫӑмӑл пулмарĕ. Ҫавах та Григорий Михайлович ывӑлĕн сӑнарне пĕрре те кӑтралатмасӑр уҫрĕ. Ывӑлĕ ҫар пурнӑҫне ӑнсӑртран та, эмоципе те суйламан иккен. Эрехпе, пируспа нихҫан та иртĕхмен спортсмен чун туртнипе 2014 ҫулта ҫарта юлнӑ. Мишӑн алли те ылтӑн. Иккĕмĕш контракчĕ вĕҫленсен яла таврӑнса тимĕрҫĕ ĕҫне йĕркелеме ĕмĕтленнĕ вӑл. Ҫавна кура Григорий Михайлович мĕнпур ĕмĕте ялтан туххса кайнӑ кĕҫĕн ачисемпе мар, унпа ҫыхӑнтарнине пытармарĕ. Ялти тĕп ҫуртра Мишӑн ачисем чупасса куҫ пек кĕтнĕ Афанасьевсем...

– Март уйӑхĕн 5-6-мĕшĕсенче тĕлĕк куртӑм: урампа утса пыратӑп пек,

хапха умӗнче шăтăк, шăтăкра хура шыв. Сасартăк алăри телефон шурӗ те çак шыва ӳкрӗ. Телефона илме тесе чикмекпе антăм, унта 3-4 телефон та пур, манăнни – çук. Çавăн чухнех ырă мара сисрӗм, арăма каламарăм…» – куççульне çăта-çăта каласа пачӗ ывăлне çухатасса систернӗ тӗлӗкӗ пирки ашшӗ. – Чунӗ тухнă чух юнашар пулнисемпе хăçан та пулсан тӗл пуласса шанатăп-ха, – хушса хучӗ юлашкинчен. Темӗнччен калаçса лартăмăр Григорий Михайловичпа, кайран Мишăн вилтăпри çине кайса чечек хутăмăр.

Хам ӗмӗрти чи йывăр интервью пулчӗ вăл маншăн. Мӗншӗн тесен Афанасьевсен хуйхине хам чӗре витӗр кăлартăм. Командировкăран таврăнсан материала ирхине 5 сехетре çырма пуçларăм та каçхине 8 сехетре тин пӗтерейрӗм. Пӗр йӗрке çыратăп та – йӗретӗп, теприне çыратăп та каллех куççуль тăкăнать. Кун пек статьяра вулакана авторăн эмоцийӗ мар, тӗп сăнар мӗнле çын пулни интереслентермелле. Аран-аран хама алла илсе эмоцисене пусарайрăм. Çапла пысăк нушапа çуралчӗ Миша Афанасьев çинчен «Атьсем, каçарăр, пулăшаймастăп» статья. Сăмах май, Григорий Михайловичăн ӗмӗтне те пурнăçлама пултартăмăр. Статья хаçатра пичетленнӗ хыççăн Мишăн юлташӗсем вӗсемпе çыхăнăва тухрӗç. Апла-тăк, ахаль мар. Кашни вăрçăн хăйӗн сăнӗ, ятарлă çар операцийӗн те пур. Маншăн вăл – Михаил Афанасьев сăнӗллӗ: шухăшпа, ӳт-пӳпе çитӗнсе çитнӗ, тӗреклӗ, ырă кăмăллă салтак, спортсмен, чăн-чăн хӳтӗлевçӗ.

Арăслан пек хăюллă ывăлсемшӗн тав

Ятарлă çар операцийӗ 2022 çулхи февралӗн 24-мӗшӗнчен пуçланса паянхи кунччен тӗп хыпар. Унта мӗн пулнине кашни кун тимлӗн сăнатпăр. Мӗншӗн тесен хирӗçтăру вутне контрактпа çарта тăракансем кăна мар, тулли мар мобилизаципе, хăйсен ирӗкӗпе кайнисем те кӗчӗç. Калăн, Тăван çӗршывăн Аслă вăрçи тепӗр хут тапранчӗ. Асаттесен йăлине тытса кашни кун паттăрлăх кăтартаççӗ пирӗн салтаксем паян, нумай чухне хăйсен пурнăçне хӗрхенмесӗр. Çӗпрел районӗнчи Чăваш Çӗпрел мăнукӗ Андрей Колпаков полковник, разведчик-командир та акă аманса госпитале лекнӗскер, пӗр-икӗ кун та пулсан сипленме килӗшнӗ пулсан, сывă юлатчӗ-тӗр, вăл вара суранне çыхтарнă та каллех çапăçăва кӗнӗ, хăйне шаннă салтаксене йывăр çапăçура хăйсене кăна хăварман…

Танк ротин командирӗ Геннадий Командов аслă лейтенант (Теччӗ районӗ, Аслă Ăнă), Андрей Кульметьев (Нурлат районӗ, Пӗчӗк Хăмăшлă), Александр Данилов медбрат (ЧР Шăмăршă районӗ, Асанкасси ялӗ)… Шел, СВОн хурлăхлă списокӗнче ентеш-чăвашсем сахал мар. Арăслан пек хăюллă çакăн пек ывăлсем çуратса ӳстернӗшӗн кашни атте-аннене çӗре çити пуç тайса тав тăватăп. Хуть мӗнле сăмах илтсен те, шанăр – салтаксене сума сăвакан, вӗсемшӗн чунтан пăшăрханакансем эпир Раççейре нумайрах, çӗр чăтайми хуйха пӗрле пайлатпăр.

Çухату хам çемьерен те пăрăнса иртмерӗ. 2023 çулхи январӗн 10-мӗшӗнче иккӗмӗш сыпăкри тетене – Тури Услон районӗнче пурăннă, СВОна хăй ирӗкӗпе кайнă Альберт Мухаметханова юлашки çула ăсатрăмăр.

«Эпӗ унта кирлӗрех», – терӗ вӑл пире мӗншӗн ятарлӑ ҫар операцине хӑй ирӗкӗпе кайма шутланине ӑнлантарса. Фронтӑн чи йывӑр та хӗрӳ вырӑнӗнче пулнӑ вӑл, Артемовск хулине штурмланӑ. 2022 ҫулхи ноябрь уйӑхӗнчен ҫыхӑнӑва урӑх тухмарӗ... Ырӑ хыпара тем пек кӗтсен те – кӗтсе илеймерӗмӗр. Тӑванӑмӑр ноябрӗн 27-мӗшӗнчи хӗрӳ ҫапӑҫура паттӑррӑн пуҫ хунине 40 кунӗ иртсен тин пӗлтерчӗҫ... Аннен пӗртӑван йӑмӑкӗн ывӑлне хайхи украинка Ольӑн ачи (е пирӗнни ун ачине) персе вӗлермен тесе паян никам та шантарса калаймасть. Аслӑ вӑрҫӑн нушине пӗрле тӳснӗ, кайран ҫӗршыва пӗрле ура ҫине тӑратнӑ икӗ халӑх тӑшмана ҫаврӑнма мӗнле ирӗк патӑмӑр эпир? Акӑ вӑл тӑванла халӑхсен хӑрушӑ трагедийӗ!

Хамӑрӑннисене пӑрахмастпӑр!

Ятарлӑ ҫар операцийӗ Тӑван ҫӗршывӑн Аслӑ вӑрҫи хыҫҫӑнхи чи вӑйлӑ хирӗҫтӑру, ӑна Афган, Чечня вӑрҫисемпе танлаштарма ҫук, пире хирӗҫ 54 ҫӗршыв тӑрать. Англосакссем хӗтӗртнипе ҫӗнӗрен хунанӑ фашистсене каллех Раҫҫей салтакӗн ҫӗр ҫинчен тасатмалла. Аслӑ вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи пекех тӑшманпа кӗрешме халӑха кар тӑратрӗ вӑл. Салтака пӗр вӑрҫӑра та пулӑшусӑр хӑварман пирӗн халӑх. Халӗ те ҫӗнтерӗве ҫывхартма май ҫитнӗ таран йӑлт тума тӑрӑшать, окоп ҫуртинчен пуҫласа автомобиль таранах тивӗҫтерет. Пурнӑҫшӑн хӑрушлӑх пуррине пӑхмасӑр фронта гуманитари пулӑшӑвне леҫекен волонтер-ентешсем (Анатолий Скворцов

А.Н.Скворцов (сулахайран виҫҫӗмӗшӗ) Аксу тата Нурлат волонтерӗсемпе пӗрле.

Сергей Вунберов çемйипе.

(Аксу районĕ), Владимир Ярухин (Ульяновск хули), Виктор Петухов (Çĕпрел районĕ), район администрацийĕн пуçлăхĕсем тата ыттисем) пурри савăнтарать. Калама çук пысăк ĕç тăваççĕ вĕсем, салтаксене мĕн кирлипе тивĕçтернисĕр пуçне халăх тĕревне çитерсе малалла çапăçма хавхалантараççĕ. Салтаксене ку тĕрев сывлăш пекех кирлĕ халĕ. Ял-хуласенчи гуманитари пулăшăвĕ пухакан, маскировка сеткисем çыхакан, окоп çуртисем пек чи кирлĕ япаласем ăсталакан ыр кăмăллăх фончĕсен ĕçченĕсене те çĕре çити пуç таятпăр. Çав шутра шкул ачисене те, вĕсем çырнă çырусем пирĕн салтаксене сивĕ окопсенче ăшăтаççĕ.

Паянхи кун паттăрĕсем

СВО темипе ĕçлеме тивнĕрен, нумай çынпа тĕл пулма тивет, çав шутра салтаксемпе хăйсемпе те. Мĕнлерех-ха вăл паянхи кун паттăрĕ? Хальччен куçа-куçăн курса калаçнă, паллашнă энтеш-салтаксем тăрăх хаклас пулсан – ытлашши нумай сăмах вакламан, хăюллă, Тăван çĕршыв умĕнчи тивĕç мĕн иккенне лайăх ăнланакан çын.

Ульяновскри 31-мĕш десантпа штурм бригадин десантникĕ Сергей Вунберов, тĕслĕхрен, СВОра пĕрремĕш кунранпа. Çапăçусенче палăрса темиçе наградăна тивĕçнĕ. Десантниксен династине тăсать вăл. Ятарлă çар операцийĕн мĕнпур йывăрлăхĕпе нуши-тертне тӳссен те, хăйĕн виçĕ ывăлне десантниксен хунавне малалла тăстарас ĕмĕтлĕ. «Десантник вăл – ӳт-пӳ енчен тĕреклине, вăйлă характерлине, çирĕп кăмăллине

Теччӗн кӗмӗл волонтерӗсем.

Ярослав Филиппенко.

тата ҫӑн-ҫӑн арҫынна кирлӗ ытти нумай ен пуррине пӗлтерет», – терӗ кун пирки ытлашши сӑмах вакламасӑр.

Хусанти Росгвардин ятарлӑ тӗллевлӗ «Барс – 26» отрячӗн миномет батарейин артиллерисчӗсем, Ҫӗпрел районӗнчи Чӑваш Ҫӗпрелпе Алешкин Саплӑк каччисем Константин Годуновпа Максим Журавлев кӗске отпуска таврӑнсан та шухӑшпа атьсемпе пӗрле пулнине пытармарӗҫ. Пӑва районӗнчи Хирти Кушкӑ каччин Николай Нестеровӑн вара СВО-ран ҫӑмӑллӑнах пӑрӑнса юлма майӗ пурччӗ-тӗр, пӗр вӑхӑт Лондонра пурӑннӑскер, унтах юлма е тепре кайма пултарнӑ вӑл, анчах Тӑван ҫӗршыва йывӑрлӑхра хӑварман. Мобилизаципе ятарлӑ ҫар операцине кайма повестка килсенех ҫар ретне тепре тӑнӑ.

Аксу районӗнчи Кивӗ Тимушкел ялӗн 24-ри каччипе, хальхи вӑхӑтра фронтра кӗрешекен Ярослав Филиппенкӑпа паллашма май пулнӑшӑн питӗ савӑнатӑп. Вӑл мана паянхи ҫамрӑксене шанма вӗрентрӗ.

– СВО пуҫлансанах хам та унта лекессине шалти туйӑмпа сисрӗм. Тӑвансем: «Сана илсе каймаҫҫӗ ӗнтӗ, ан пӑшӑрхан», – тесе лӑплантарма тӑрӑшсан та, атте-аннене тӳрех: «Апла-капла пулас-тӑк, тарса ҫӳреместӗп – каятӑп», – терӗм. Ҫавӑнпа повестка маншӑн кӗтменлӗх пулмарӗ, шухӑш-кӑмӑлпа хатӗрччӗ ӗнтӗ эпӗ, тен, ачаранах та-и? – ҫапла кӗске, ҫав вӑхӑтрах тулли пулчӗ хуравӗ ҫамрӑк ентешӗн. Хам умра Тӑван ҫӗршывӑн ҫӑн-ҫӑн хӳтӗлевҫи тӑнине туйрӑм ун чух. Ярослав Филиппенкӑпа отпускӗ вӗҫленес умӗн темиҫе кун маларах кӑна калаҫрӑм. Ӑшӗ тем пек ҫунсан та ҫакна пӗр чӗптӗм те кӑтартмарӗ вӑл, никама, нимӗне ӳпкелемерӗ те. Нумай ыйтӑва шӳте ҫавӑрма тӑрӑшсан та

Андрей Колпаков.

Андрей Колпаковӑн наградисем.

Александр Данилов.

Геннадий Командов.

тӗп шухӑшӗ: «Эпир пур чух лӑпкӑн ҫывӑрӑр», – тени пулчӗ. Салтак та пулсах ҫуралмалла иккен. Шӑп ҫакӑн пеккисен аллинче халӗ ҫӗршывӑмӑрӑн шӑпи, малашлӑхӗ.

«Сувар» хаҫатра пичетленнӗ кашни салтак редакцишӗн тӑванран та ҫывӑхрах халӗ. Салтаксемпе хӑйсемпе тӳрремӗнех ҫыхӑну тытатпӑр. Ҫыхӑнӑва час тухаймасан пӑшӑрханатпӑр, хыпар килсен ача пекех хытӑ савӑнатпӑр. Ҫавӑнпа иккӗленместӗп, ҫук, шанатӑп – кун пек ачасем пур чух ҫӗнтерӳ пирӗн пулать. Ку ӗмӗртен капла, халӗ те ҫаплах пулать!

Маргарита ЛИТТА

Маргарита Валерьяновна Литта 1980 çулта Самар облаçĕнчи Шунтал районне кĕрекен Тăварăм ялĕнче çуралнă. Вырăнти шкулта вăтам пĕлӳ илнĕ хыççăн Баландаево ялĕнчи Культура çуртĕнче илемлĕх ертӳçи пулса пилĕк çула яхăн ĕçленĕ. Самарти культура училищине, Самарти патшалăх искусствăпа культура академине пĕтернĕ. Шкулта вĕреннĕ чухнех Шунтал районĕнче тухса тăракан хаçатра пичетленнĕ, унăн штатра тăман корреспонденчĕ пулнă. Каярах ăна çав хаçатăн редакцине ĕçлеме чĕннĕ. Çемье çавăрнă хыççăн 2003 çулта Нурлат хулине пурăнма куçнă. Нумай çул районта тухса тăракан «Туслăх» хаçат редакцийĕнче тăрăшнă.

2016 çулта Маргарита Литта Петĕр Хусанкай ячĕллĕ литература премине тивĕçнĕ. «Пластилиновый дождь» кĕнеке авторĕ. Çавăн пекех унăн хайлавĕсем Нурлат районĕнчи çыравçăсен пĕрлехи «Асамат кĕперĕ», «Созвездие Нурлат» сборникĕсенче пичетленнĕ.

АНДРЕЙ КУЛЬМЕТЬЕВ – ТĂВАН ÇĔРШЫВĂН ЧĂН-ЧĂН ПАТРИОЧĔ

Украинăра ятарлă çар операцийĕ пуçланнă хыççăн пĕрремĕш хурлăхлă хыпар пирĕн пысăках мар хулана апрель уйăхĕн пуçламăшĕнче çитрĕ. Çар тивĕçне пурнăçланă май ентешĕмĕр Андрей Кульметьев ефрейтор хăйне хĕрхенмесĕр юлташĕсен пурнăçне çăлса хăварнă. Унпа сывпуллашнă çĕре Астăвăмпа Мухтав мемориалĕн комплексĕ умне хула çыннисем çеç мар, районта пурăнакансем те пуçтарăнчĕç. Хуйхă ют пулмасть! Çак сăмахсене çирĕплетнĕ пек хĕрарăмсем çеç мар, арçынсем те куççульне чарма пултараймарĕç…

Ятсăр – пĕр уйăх

Андрей 24 çулта çеçчĕ. Вăл 2022 çулхи март уйăхĕнче пуç хунă, тепĕр уйăхран – апрелĕн 25-мĕшĕнче вара 25 çул тултармаллаччĕ…

– Вăл пирĕн иккĕмĕшĕ, кĕçĕн ывăл. Андрей çуралнă чухне эпĕ Çĕпĕрте нефть отраслĕнче ĕçлеттĕмччĕ. Ывăл эпĕ таврăниччен пĕр уйăх ятсăр

пурӑнчӗ. Ҫемье эпӗ таврӑнасса Пӗчӗк Хӑмӑшлӑра – манӑн аттепе аннен килӗнче – кӗтрӗ, ҫавӑнпа документсенче Андрей ҫак ялта ҫуралнӑ тесе ҫырнӑ, – каласа парать Андрейӗн ашшӗ Федор Кульметьев. – Аттепе анне пире ачасене воспитани парассинче пысӑк пулӑшу пачӗҫ. Мӗншӗн тесен пирӗн мӑшӑрпа иксӗмӗрӗн те ӗҫсем сменӑпа ӗҫлемелличчӗ, Марина Арсентьевна «васкавлӑ пулӑшу» фельдшерӗччӗ. Вӑл тивӗҫлӗ канӑва тухиччене хӑйӗн юратнӑ ӗҫне пурнӑҫларӗ. Манӑн ӗҫ те ҫӑмӑл марччӗ, ҫавӑнпа аттепе анне чӑнах та ывӑлсене воспитани парассинче пысӑк вырӑн йышӑнчӗҫ.

– Андрей питӗ лайӑх шӑллӑмччӗ, тӑрӑшуллӑ ывӑлччӗ, ялта асаннепе асатте патӗнче хӑнара пулма юрататчӗ, вӗсене пулӑшатчӗ. Ӗҫчен, нимӗнле ӗҫрен те хӑраман… Пуласлӑхне ялапах ҫар ӗҫӗпе ҫыхӑнтарасшӑнччӗ. Пире атте те мӗн пӗчӗкренех ҫарта служба иртмелле тесе вӗрентрӗ. Пӗррехинче эпир аттепе килте шкулти кивӗ тетрадьсене пӑхса лартӑмӑр. «Кусем кирлӗ мар ӗнтӗ, атя ҫунтарса ярар», – терӗм. «Ҫук, – терӗ атте. – Акӑ Андрей паллӑ ҫын пулса тӑрӗ те эпир унпа мухтанса вӗсене ыттисене те кӑтартӑпӑр…» Ҫапла пулчӗ те, – паллаштарчӗ хӑйӗн асаилӗвӗсемпе Андрейӗн пиччӗшӗ Иван.

Андрей Кульметьев.

«Манӑн кил – сирӗн килӗр»

Федор Иванович каланӑ тӑрӑх, Андрей ачаранах пӗтӗм ӗҫе хӑй тума юратнӑ. Нумайрах пӗлме тӑрӑшнӑ, яваплӑ, тӳрӗ кӑмӑллӑ пулнӑ. Чӑн-чӑн туслӑхӑн хакне пӗлнӗ. Тантӑшӗсемпе хӑвӑрт пӗр чӗлхе тупнӑ, нумайӑшӗнпе ҫывӑх туслашнӑ. Анчах чи шанчӑклӑ та ҫывӑх тусӗ Роман Евлейкин пулнӑ. Вӗсем 5-мӗш класран пуҫласа яланах пӗрле. Раҫҫейри

кооpераци университетне «Таможня ĕçĕ» специальноçе вĕренме те пĕрле кĕнĕ, çар çыннисем пулма та пĕрлех йышăннă.

– Вăл питĕ шанчăклă тусчĕ. Пулăшу кирлĕ пулсан кирек хăш вăхăтра та пулăшма хатĕррине эпĕ пĕлеттĕмччĕ. Андрей хăйне çирĕп тытакан, тӳрĕ, ырă кăмăллă çынччĕ. Унăн тусĕсем те питĕ нумайччĕ, пире час-часах çапла калатчĕ: «Манăн кил – сирĕн килĕр». Халь те, хăй вилнĕ хыççăн та, вăл пире каллех пĕрле, хăйĕн килĕнче пуçтарать. Эпир çар çынни пулма, контракт службине суйлама пĕрле ĕмĕтленнĕ, çакă питĕ сăваплă тивĕç тесе шутланă. Служба вăхăтĕнче эпир ӳт-пĕве пиçĕхтерес енĕпе кăна мар, теорипе психологи хатĕрленĕвне те иртрĕмĕр. Ятарлă пĕлтерĕшлĕ çарти служба, унта вара пурне те илмеççĕ, пирĕншĕн карьера ӳсĕмне тăвас енĕпе черетлĕ пусăм пулчĕ. Андрей снайпер ĕçĕ енĕпе манăн аслă напарникчĕ. Эпĕ ăна юлашки хут курнине питĕ лайăх астăватăп. Ятарлă задача пурнăçланă чухне мана йывăр амантрĕç. Андрей чупса пычĕ те: «Роман, ан та шухăшла!.. – тесе кăшкăрчĕ... Унтан вара аманнисене эвакуациленĕ вăхăтра хăрушсăрлăхпа тивĕçтерме малалла чупрĕ... Ун пек çынсене урăх эпĕ нихăçан та тĕл пулаймăп, – каласа парать Роман Евлейкин. – Çакна уйрăмах палăртас килет: манăн тус мĕн шутланине вĕçне çитерме пĕлетчĕ. Служба вăхăтĕнче пирĕн кашни кун 3-6-10 километр чупма тиветчĕ, кунне пĕр хутчен кăна та мар. Çын дистанцие иртес тесе мĕнпур вăйран тăрăшать, кайран ывăнать те канма чарăнать е чупнă чухнех кана-кана илет. Андрей вара нихçан та чарăнса тăмастчĕ, малалла чупатчĕ, çĕр çинелле пăхса пыратчĕ, тарĕ юхатчĕ, анчах çумра чупакансем, вĕсен кăтартăвĕсем çине пăхмастчĕ. Çакăн пек хăвăртлăхпа вăл пысăк дистанцисене иртме пултаратчĕ, чĕнмесĕр, кăмăл-туйăмне кăтартмасăр. Вăраххăн, анчах тĕрĕс. Аманнисене йăтса тухассипе занятисенче яланах чи пысăк кĕлеткеллисене хăй çине илетчĕ: «Вăйлăрах çеç пулăп», – тетчĕ. Анчах пуринчен ытларах бокса юрататчĕ. Андрей шухăшкăмăла йăлтах хăйĕнче тытакан çынччĕ, бокс вара сăмахпа каламаннине йăлтах хăйĕн ăшĕнчен кăларма пулăшатчĕ. Вăл вăйлăччĕ, тата та вăйлăрах пулма тăрăшатчĕ. Эпир хамăр служба иртнĕ вырăнпа, хамăрăн туссемпе мухтанаттăмăрччĕ, яланах мухтанăпăр та!

Андрей вилни çинчен хыпара Роман йывăррăн йышăннă, халĕ те çакăнпа килĕшме пултараймасть. Час-часах иртнине аса илет, хăй мĕн курни-илтнине тусне каласа парать, унпа канашлать, вăл халĕ те юнашар тесе шутлать. Вăл пурне те курнăн, илтнĕн туйăнать тет. Тусĕсене, пĕр класра, курсра вĕреннисене, çарти тусĕсене, Андрее пĕлнисене пурне те халь Роман пĕрле пуçтарать. Вăл пулăшнипе Андрейĕн çемйи те ывăлĕ служба иртнĕ çар чаçĕпе çыхăну тытать. Вĕсем хăйсен тусĕн вилтăпри çинче те пĕрре кăна мар пулнă, шкулти музее килнĕ, унта паттăра халалланă экспозици хатĕрленĕ, гимназие кĕнĕ çĕрте мемориал хăми çакăнса тăрать.

Иртнĕ çулла Андрей Кульметьевăн çемйине Росгвардин Федерацин Атăлçи округĕнчи 26-мĕш ятарлă пĕлтерĕшлĕ отрячĕн 5598-мĕш çар чаçĕн кунне паллă тунă çĕре йыхрав илнĕ. Унта чаплă лару-тăрура Федор Ивановича ывăлĕн хĕрлĕ беретне панă. Каярахпа Андрейĕн ашшĕ каллех

Паттăрлăх орденне тивĕçнĕ ентешĕмĕре Нурлат
тăрăхĕнче ĕмĕр-ĕмĕр асра тытĕç.

чаçрен чĕннипе «Хусан Кремлĕн Кубокĕ» профессионалсен боксĕн каçне хутшăннă. Унта ăна Росгвардин ятарлă пĕлтерĕшлĕ 26-мĕш «Барс» отрячĕн ялавне панă.

– Эпир – ывăлĕсем вăрçă операцийĕнчен таврăнман çемьесем, çакăн пек тĕлпулусене ĕмĕрех асра тытăпăр. Йăлтах чуна пырса тиврĕ, – тет Федор Кульметьев, çаплах çемйине тимлĕх уйăрнăшăн пурне те чунтан тав тăвать. Вăл Кама леш енĕн тата Нурлат хулин регионти музейне ывăлĕ çинчен асран кайми экспозици хатĕрлеме пулăшать, унта унăн япалисене, сăнӳкерчĕкĕсене, докуменчĕсене панă. Андрей вĕреннĕ гимназире час-часах патриотизм мероприятийĕсене хутшăнать. Шăп çакăнта ӳснĕ вăл, Тăван çĕршывăн чăн-чăн патриочĕ пулса тăнă.

Кайри парта хушшинчи пĕрремĕш пулăшакан

Андрей Кульметьев вĕреннĕ класс пирки ăшă асаилӳсем чылай. Учительсем те унпа тивĕçлипех мухтанаççĕ.

– Андрей çарпа патриотизм мероприятийĕсене яланах хутшăнатчĕ. Стройпа юрă юрласа иртмелли мероприятие, ДОСААФ енĕпе конкурссене хатĕрленнĕ чухне те пĕрремĕш пулăшаканччĕ. Кадет отрячĕн командирĕ пулнă май вăл гимназин хăнисене кĕтсе илетчĕ: генералсене, патриотизм воспитанийĕ парас енĕпе конкурс комиссийĕн

пайташӗсене, спортсменсене, ҫав шутра паллӑ боксера Николай Валуева тата ыттисене те. Ҫӗнтерӳ парачӗсене уйрӑмах хавхаланса хутшӑнатчӗ, палӑк умӗнче мӑнаҫлӑн тӑратчӗ, ҫапӑҫу хирӗсенче вилнӗ совет салтакӗсене хисеп тӑватчӗ. Вӑл ыттисемшӗн тӗслӗх вырӑнӗнчеччӗ, ӑна хисеплетчӗҫ, юрататчӗҫ, гимназин тата Тӑван ҫӗршывӑн чӑн-чӑн патриочӗ, – куҫҫульне пытарма пултараймарӗ директорӑн воспитани енӗпе ӗҫлекен ҫумӗ Татьяна Евлейкина.

Андрей ҫинчен Лейсан Галиева та уйрӑмах ӑшшӑн каласа парать.

– Андрей гимназире вӗреннӗ чухне эпӗ педагог-йӗркелӳҫӗ пулса ӗҫлеттӗмччӗ. Шкулти активистчӗ, мероприятисен пуҫаруҫиччӗ, ҫаплах вӗсене питӗ лайӑх ертсе пыратчӗ. Вӑл хутшӑннӑ мероприятисенчен кӗҫӗн классенче вӗренекенсем валли йӗркеленӗ Ҫӗнӗ ҫул уявӗ уйрӑмах асра юлчӗ. Хӗл Мучин тумне тӑхӑннӑ Андрей хӑйӗн рольне ҫав тери лайӑх вылярӗ, ачасемпе ташлама тытӑнчӗ те… сасартӑк сухалӗ тухса ӳкнине те сисмерӗ вӑл. «Кун пек савӑнӑҫлӑ Хӗл Мучие эпир халиччен курманччӗ-ха», – ахӑлтатсах кулчӗҫ ачасем…

Шӑпи ҫапла пулнӑ-ши?

Паттӑрлӑхпа хастарлӑх тӗслӗхӗ яланах Андрейӗн куҫӗ умӗнче пулнӑ. Унӑн мӑн аслашшӗпе мӑн кукашшӗ иккӗшӗ те Тӑван ҫӗршывӑн Аслӑ вӑрҫи вӑхӑтӗнче ҫапӑҫу хирӗнчен таврӑнман. Андрейӗн те шӑпи ҫавӑн пекех пулчӗ. Пӗрремӗш ҫапӑҫӑва Сирире хутшӑннӑ, анчах ун ҫинчен ашшӗпе амӑшне нихӑҫан та каласа паман. Вӗсене яланах ҫапла каланӑ: «Гуманитари конвойӗпе пӗрле ҫеҫ кайрӑм».

– «Служба малалла пырать, йӑлтах лайӑх», – ывӑл телефонпа ҫапла ҫеҫ калатчӗ, – малалла каласа парать Федор Иванович. – Декабрь уйӑхӗнче черетлӗ вӗренӗве каятӑп тесе пӗлтерчӗ. Патшалӑх ертӳҫи Владимир Путин Донбасра ятарлӑ ҫар операцийӗ пуҫланни ҫинчен пӗлтерсен йӑлтах паллӑ пулчӗ. Президент каланӑ тӑрӑх, ятарлӑ ҫар операцийӗн тӗллевӗ – ҫынсене хӳтӗлесси. Украина территорине тухса каяс умӗн Андрей пиччӗшӗ патне телефонпа шӑнкӑравласа систерме ӗлкӗрнӗ. Ҫавӑнтанпа эпир пурте пӑшӑрханса пурӑнтӑмӑр. Мартӑн 10-мӗшӗсенче пирӗн пата Донбасран госпитальте сывалакан пӗр боец шӑнкӑравларӗ, Андрей амӑшне унӑн йӑлтах йӗркеллӗ тесе калама ыйтнӑ. Темиҫе кунран вара…

– Вӑл ушкӑна килнӗ чухне питӗ ҫамрӑкчӗ, опытсӑр, анчах вӗренес кӑмӑлӗ питӗ пысӑкчӗ. Опычӗ ҫуккишӗн Андрей пӗрре те пӑшӑрханмастчӗ, ҫакӑ ӑна вӑй-хӑват ҫеҫ хушатчӗ. Ҫине тӑнипе, тусӗсем пулӑшнипе вӑл питӗ лайӑх кӑтартусем тума пуҫларӗ, снайпер пулса тӑчӗ, ҫакӑ вара подразделенири чи лайӑх стрелок пулнине пӗлтерет. Вӑл чӑн-чӑн ҫар ҫынниччӗ. Хальхи вӑхӑтра ырӑ кӑмӑллӑ, питӗ тӗрӗс воспитани илнӗ ҫынна тӗл пулма йывӑр. Яланах хӑй тӗллӗн аталаннисӗр пуҫне вӑл пӗрле служба иртекенсене пулӑшма ӗлкӗретчӗ. Темиҫе уйӑхранах Банкир – коллективра ӑна ҫапла чӗнетчӗҫ – подразделенире чӑн-чӑн ӑста кӑна мар, кашниншӗн шанчӑклӑ тус, тӑван пек пулса тӑчӗ! Андрей питӗ хӑюллӑччӗ, хӑрушӑ лару-тӑрура та хӑйне лӑпкӑн тытма

пӗлетчӗ. Андрейпе пӗрле служба иртме пултарнипе мухтанатпӑр! Ушкӑн ӑна яланах асра тытать. Андрее пӗлнисем ӑна нихӑҫан та манмӗҫ, – паллаштарчӗ хӑйӗн асаилӗвӗсемпе 4-мӗш ушкӑнӑн командирӗ, ӑна Тренер тесе чӗнеҫҫӗ.

Ҫак ушкӑн йышӗнче Андрей Кульметьев 2022 ҫулхи март вӗҫӗнче Украинӑра националистсем яла туртса илесрен хӳтӗлессипе пӗлтерӗшлӗ тӗллеве пурнӑҫланӑ. Вӑл десантниксемпе пӗрле пӗрремӗш ретре пынӑ. Кивӗ Буда патӗнче ушкӑнӑн уйрӑм йышӗ засадӑна лекнӗ, тӑшмансемпе, сӑмах май, вӗсем самай ытларах пулнӑ, ҫапӑҫу пуҫланнӑ. Минометсенчен пеме тытӑннӑ. Андрей хӑйӗн пурнӑҫне хӗрхенмесӗр тусӗсене паттӑррӑн хӳтӗленӗ. Чӑваш Ен каччипе Александр Никоновпа ун ҫумӗнче снаряд ҫурӑлнӑ...

Федор Кульметьев ывӑлӗн ҫарти тусӗсем пулӑшнипе мӗн пулса иртнине тӗпчесе пӗлме пултарнӑ. Вӑл боецсене никама та пӑрахса хӑварманшӑн тав тӑвать: аманнисене те, вилнисене те ҫапӑҫу хирӗнчен илсе тухма пултарнӑ. Взвод командирӗн ҫумӗ Алексей аслӑ прапорщик (хушма ячӗ Кракер) Андрее 3 километр хӑй ҫинче йӑтса тухнӑ.

– Эпир ывӑла киле илсе килме, тивӗҫлӗн пытарма пултарнӑшӑн пурне те тав тӑватпӑр, – куҫҫуль витӗр пӗлтерет паттӑрӑн амӑшӗ. Раҫҫей Федерацийӗн Президенчӗн Владимир Путинӑн хушӑвӗпе Андрей Кульметьева вилнӗ хыҫҫӑн Паттӑрлӑх орденӗпе чысланӑ, ӑна унӑн ашшӗпе амӑшне панӑ.

Тӗнче хӳтӗлевҫи.

Ырӑ кӑмӑллӑ, пурне те пулӑшма хатӗр, чӑн-чӑн тус, юратнӑ ывӑл, тӑрӑшуллӑ шӑллӑм, хастар та хӑюллӑ салтак – ентешӗсем, тусӗсем, тӑванӗсем Андрей Кульметьева шӑп ҫакӑн пек асра тытаҫҫӗ. Шел пулин те, ӗмӗрӗ кӗске пулчӗ. Вӑл хӑйӗн валли ансат мар ҫул-йӗр суйланӑ – тӗнче хӳтӗлевҫи.

– Чун хурланни ҫинчен пӗлтермесӗр тата тав сӑмахӗсем каламасӑр пултараймастӑп. Мӗн пулса иртнине ӗненес килмест. Эпир Андрейпе институтра пӗр ушкӑнра вӗрентӗмӗр. Вӑл питӗ ырӑ кӑмӑллӑ ҫынччӗ. Яланах пулӑшатчӗ. Килне, Нурлата, пуҫтарӑнсан манран та килне каймастӑн-и тесе ыйтатчӗ, ҫула май лартса каятӑп тетчӗ (эпӗ Алексеевски районӗнчен), питӗ тимлӗччӗ. Пурнӑҫа юрататчӗ, хаваслӑччӗ... Ҫак списока тахҫанччен те тӑсма пулать. Сире ҫакӑн пек вӑйлӑ яшшӑн тавах. Эсир чӑн-чӑн арҫын ҫитӗнтернӗ. Вӑй-хӑват тата чӑтӑмлӑх сире, – ҫапла ҫырса янӑ Андрейпе пӗр курсра вӗреннӗ Инна Нуртдинова.

Чылайӑшӗ ҫакӑн пек сӑмахсенех калаҫҫӗ тата тав тӑваҫҫӗ Андрей Кульметьевӑн ашшӗпе амӑшне – Федор Ивановичпа Марина Арсентьевнӑна. Андрей ӗмӗрлӗхе пурин асӗнче те юлӗ. Федор Иванович та яланах ҫапла калать: «Эпӗ ывӑлпа мухтанатӑп! Вӑл Тӑван ҫӗршыва хӳтӗленӗ! Ҫӗнтерӳшӗн пуҫ хунӑ!»

Ренат ХАРИС

Ренат Магсумович Харис (Харисов) 1941 çулхи çу уйăхĕн 6-мĕшĕнче Ульяновск облаçĕнчи Чăнлă районне кĕрекен Елховое Озеро ялĕнче çуралнă. Тутарстан халăх поэчĕ, драматург, литература критикĕ, публицист, куçаруçă, патшалăх тата общество деятелĕ. Раççей Федерацийĕн Патшалăх, Тутарстанăн Г.Тукай ячĕллĕ Патшалăх, Муса Джалиль, Расул Гамзатов (Дагестан), Фатих Карим (Пушкăртстан), Çеçпĕл Мишши (Чăваш Ен) премийĕсен лауреачĕ.

Тутар, вырăс, белорус, пушкăрт, чăваш, акăлчан чĕлхисемпе кăларнă 60 ытла кĕнеке авторĕ. Л.Любовскин «Сказание о Юсуфе» балечĕн, Р.Ахиярован «Любовь поэта», «Сююмбике» оперисен, «Золотая Орда» балечĕн, Э.Низамовăн «Золотая Казань» мюзиклĕн, «Черная палата» оперин, «Зеркало» монооперин, М.Яруллинăн «Человек» ораторийĕн лебреттисене çыраканĕ. Унăн уйрăм хайлавĕсем Раççей, СНГ тата чикĕ леш енчи ытти çĕршывсенчи халăхсен чĕлхисемпе пичетленнĕ.

ТР Раисĕ çумĕнчи Геральдика канашĕн, «Тутар энциклопедийĕн» Тĕп редколлегийĕн, РФ Писательсемпе издательсен ассоциацийĕн Президиумĕн, «Наш современник», «Дружба народов» журналсен, «Татарский мир» хаçатăн редколлегийĕсен пайташĕ. Хусанта пурăнать.

ХУСАН ТУР АМĂШĔ

Поэма

Йĕрсем çухалмĕç вырăс çĕрĕнче.
Раççей сăнарĕ-çке эпир – тĕкĕр çинче.
Пайланă вырăспа çăкăр-тăвар:
Çавна ĕнентерме йăла, словарь.

Габдулла Тукай.

«...Сыватрăн-и куçна? Халь еплерех куран?
Е тĕтрепе хупланнă шурăмпуç?» –
Пăшăрханса калаçрĕ Мускавран
Телефонпа манпа Микулай тус.

Унчен час-час килетчĕ ман пата,
Е ĕçпеле, е хăнана – ятне,
Утаттăмăр хуллен ват Хусанта,
Мечĕтсемпе чиркӳ тăрри патне.

Пулсаччĕ Марджáни[1] мечĕтĕнче,
Райф[2] мăнастирне çитсе кайран…
(Нумай ăсчах Хусан хӳтлĕхĕнче,
Пурăннă çулăм кăларса чулран).

Уçсаччĕ вăл мана хăй ĕмĕтне –
«Хусан Тур Амăшне курас килет».
(Ун чух ман тусăм кайнăччĕ хĕне,
Çав турăш, имĕш,пулăшма пĕлет).

Тур Амăшĕн вăйне вăл ун чухне,
Калатчĕ чĕререн ĕненнине,
Пăхмасăр çулсене, çухрăмсене,
Çынна вăл сыватма пултарнине.

Чăнах кирлех-им халĕ Ватикан,
Рим Папинчен вăй-хал ыйтатпăр-и?
Пулайĕ-ши пайта çав утăмран,
Кайсан та тинĕс леш енне çити.

Ун умĕнче чун айăпне туять,
Пĕр усă та памарĕ шырани.
Таса турăшсенче çук вăй-хăват,
Чĕресенче кăвайт çутаканни.

Халь ак телефонпа канаш пилпе,
Леш турăш Хусана иккен килсе:
«Çав Турă Амăш сăнĕн çутипе,
Суккăр та куракан пулать», – тесе.

«Тур Амăш чиркĕвне кайса килсем,
Ху шăпупа хăвах хуçа, тăван,
Çав турăш хăватне тĕрĕслесем,
Куçсем чирлемĕç урăх сан нихçан».

Эп хирĕçлерĕм: «Мăсăльман, – тесе, –
Шăп çавăнпа пулăшмĕ турăшу.
Ун вăй-хăвачĕ крешĕнсем валли,
Кашниййĕн пирĕн урăх тĕн палли».

– Йăнăш ку, тусăм, – терĕ Микулай. –
А «Бог един» вĕт теççĕ тĕнчере.
Кĕлтăвасси пулсан та хăйне май,
Тур Амăшĕ пĕр пек пăхать пире.

Пуçа илмерĕм тусăн канашне,
Куçа тумлатрăм тухтăр эмелне,
Тĕнче çуталчĕ çăлтăр пек çиçсе,
Тавралăх путрĕ ырату сĕмне.

Куçсем хупланчĕç … Пĕр тĕтре умра…
Анчах куратăп сĕмлĕх витĕрех –
Йăл! тăвакан Çĕр чăмăрĕ тавра,
Ишет Тур Амăш кинори пекех.

Курăнусем чупаççĕ куçсенче
Хăрушă тĕлĕксен саманчĕ пек.
Вут-çулăм, тĕтĕмсен çаврăмĕнче
Кунсем – авалхисем – куçаççĕ тек.

* * *

…Куратăп акă: çарĕн умĕнче
Утать сулмаклăн Минин – курмĕ шар,
Хусан Тур Амăш ун аллисенче,
Çапăçăва кĕрет вăл пĕччен мар.

Унпа пĕрле ав вырăспа чăваш,
Ирçе те çармăс, мăкшă, ар, тутар.
Хĕрес, çур уйăх – пурпĕр хурăнташ –
Тăшмана хирĕç пурте тăчĕç кар.

Хусан Тур Амăшне çӳлте тытса
Ирĕклĕ çар кĕрет çапăçăва.
Суя патша полякĕсем чыхса
Нихçан та тек ан тивччĕр Мускава.

Васкавлăн тарчĕç тăшмансем тухса,
Выç кашкăр пек, хĕсse хӳрисене
Çул тăршшĕпе пусса та çаратса.
Тасатрĕ çумăр ирсĕр ĕçсене.

Çĕкленнĕ тусанта, лапра çăрса,
Халăх çарĕн ав полкĕ ыткăнать.
Тур Амăшне малта йăтса пырса –
Раççей мухтавĕ ĕмĕрлĕх пырать!..

---

[1] *– Шигабутдин Марджани (16.1.1818 – 18.4.1889) – тутарсен çутта кăлараканĕ, богослов, философ тата ăсчах-историк.*

[2] *– Раифа – Хусан çывăхĕнчи православи мăнастирĕ.*

* * *

Полтава хирӗнче швед ҫарӗсем
Ирех ҫапӑҫава хатӗрленеҫ.
Хусан Тур Амӑшне сӑвап ҫынсем
Петӗр патша патне, тет, ҫитереҫ.

Патша ура ҫинче, пач ҫывӑрман,
Тур Амӑшне ирех вӑл кӗлтӑвать:
«Вӑйне ҫухаттӑр паянтан тӑшман,
Раҫҫей мухтавӗ ҫунатне сарать!

Манайтӑр Карл патша Раҫҫей тӗлне,
Ан ҫӗкленейтӗр урӑх ӗмӗрне.
Мазепа гетмана парас парне –
Туянтӑр вырӑссенӗн чӑмӑрне!»

Ҫӳлте, ҫап-ҫутӑ ҫӑлтӑр айӗнче,
Тур Амӑшӗ илтет ун сӑмахне,
Хӑй ывӑлне лӑпкать чӗрҫи ҫинче,
Ачашласа илсе Иисус ҫӳҫне…

***

Ак Петербург. Хусан соборӗ.
Алтарь енне Кутузов ҫаврӑнать,
Тур Амӑшне сӑпайлӑн тархасларӗ:
Французсенчен Руҫа ҫӑлма ыйтать.

«Пӗлме кирлӗ, ҫунтарнӑччӗ пуля,
Куҫӑм витӗр тухса сӑхайсассӑн.
Суккӑр мар эп, хуйхи урӑх пулӗ,
Раҫҫее ҫӗн инкек пӑталасшӑн!

Тапӑннӑ ҫӗршыва Наполеон,
Пӗтӗмпех ҫӗре юхӑнтарасшӑн.
Вӗсемшӗн ҫук йӗркелӗх те саккун –
Пул тӳре-шара та суд тӑшманшӑн!.. »

Ҫӳл тӳпере ҫутӑ ҫӑлтӑр ҫутсан,
Турамӑш илтет вӑйпут кӗллине.
Мускав нушине чунпа ӑнланса,
Савса якатать пепкийӗн ҫӳҫне.

Хусан Тур Амӑш пулӑшрӗ пире,
Ҫичӗ ютран хӳме пек хӳтӗлерӗ.
Наполеон халь хуҫӑлнӑ тирек,
Тапӑнчӗ – тинӗс, тарчӗ – кӳлӗ пек!

***

Куратӑп фильмсенчи пек сӑнсене,
Пӗри ҫухалчӗ, теприсем килеҫ.
Петӗр те Кутузов, вӗсен хыҫне –
Ав Сталинӑн сӑнарӗ тухрӗ кӗҫ.

Сивӗ сӑн. Куҫ харшисем – ҫунатлӑ.
Тӗнче хуҫисенчен вӑл хуҫарах.
Чӗтрет тӗнче. Генсекӑн ӗмӗт аслӑ –
Хӳтӗленсе Мускавӑм юлтӑрах.

Ас илчӗ Сталин: тарнӑ Мускавран
Наполеон, малтан – Суя Мӗтри.
Шутлать ҫулпуҫ: «Ӳкместпӗр ураран,
Халь фюрера Мускав паратпӑр-и?!»

Кутузов Филире канаш пухсан,
Унта вӑл сӑмахне каланӑ чух,
Пӗр хӗрӗх ҫухрӑмра анчах тӑшман –
Тавлашусем вӗренӗ питӗ шух.

«Парас е парас мар тӗп хулана?»
Каллех ыйту тухса тӑрать ума.
Сасартӑк куҫ хывсассӑн таврана,
Генералсем пуҫлаҫ хӗрес хума.

Мал кӗтесрен, сӑнарӗн хӗмӗпе,
Хусан Тур Амӑш кӑкӑртан тирет.
Хӗмрен пуҫне ҫӗн шухӑш килнипе,
Чи Аслӑ пуҫлӑх телефон илет:

«Ҫын умӗнче нихҫан та кӗлтуман,
Мечӗтсене, чиркӳ те шеллемен.
Сасартӑк, сирӗлсен пуҫра тӑман,
Тӗне чӗнеп ҫӗре хӳтӗлеме.

Епископа самолёта лартар,
Тур Амӑшне хӑйпе пӗрле илсе,
Ҫаврӑнтӑр вӑл вӗҫсе Мускав тавра,
Ҫӳлтен окопсене хӗреслесе.

Шанатӑп, пулӑшӗ Руҫе пирте
Ҫак турӑш, тӑшмана ҫӳпе шӑлса.
Хӑрушӑ вӑрҫӑ вӗрекен ҫӗрте,
Пурне те хӳтӗлев, хӳме пулса…»

Çап-çутă çăлтăрăн ялтăрĕнче,
Тур Амăшĕ илтет ун сăмахне,
Хăй пепкине лăпкать чĕрçи çинче,
Çемçен шăлса илет Иисус çӳçне…

Ун чух чылайăш курнă тӳпере
Тур Амăш сăнĕ ӳкерĕннине.
Вăрçа, шава пăхмасăр, пурпĕрех,
Юхса вăл тухнă тĕп хула тĕлне.

Тавăру вучĕ сарăлсах пырать,
Тарать пăхмасăр нимĕç çав вутран.
Хыçран ав Сив Мучийĕ хăвалать,
Çыртать вăл сăмсаран та хăлхаран.

***

…Пăхма хăратăп çутта хирĕç эп,
Кĕтрет кĕтетĕп, пулĕччĕ халь чух.
Куççем сураççĕ, кăлăхах кĕтеп –
Тытма калем, çырма та халăм çук!

Пăчланчĕ телевизор – ним курмап!
(Этемшĕн илтни çеç çителĕксĕр).
Курмастăн-тăк тĕнче – тӳсми асап,
Ӳт-пуçĕ пур, анчах та чунĕсĕр.

***

…Им ячĕç ман куçа. Çапла шăпа,
Çутă сӳнчĕ… Анчах парне пурах –
Хусанăн турăшĕ хăçантанпа
Çавăрăнать Çĕр чăмăрĕ тавра.

Тĕтрелĕхре вĕçет карап çинче[3],
Çиççе тăран пин çăлтăр хушшинче!..
Çĕр çийĕпе шуйттанĕ явăнать,
Хăй хĕçĕпе усаллăн сулкалать.

Пурне те Турă пĕлнине манса,
Пулас Армагеддоншăн тăрăшать,
Хăй, сатана, саккунсене пăсса,
Усалсенчен çар пуçтарма пăхать.

Турра та, Аллаха та чыс туман.
Çук уншăн Я́хве, Бу́дда та курман.
Çухатнă намăс, хăрани пулман,
Акать вăл çылăх та сиен ялан.

Шанать вăл хăй пĕрмай çĕнтерессе,
(Иккĕленӳ ун çук ку енĕпе),
Шуйттан кӳлет усаллăх çĕклемне,
Хăварĕ намăса несĕлсене.

Сĕмрен çутта çулран çулах вĕççе,
Шăрăх та сив пăр витĕр вăл тухать.
Сăваплă турăш – вунă çул та мар! –
Çĕр чăмăрĕ тавра шав çаврăнать.

Тен, çавăнпа Шуйттан, вутра çунса,
Çĕр-каççерен хĕçне шавах хăйрать,
Талăкĕпех каваршăн шутласа,
Тĕнче вăрçи чĕртесшĕн тăрăшать?..

***

Çав турăша эп куртăм Кремльте,
Хăймарăм ун патне çурта лартма.
Эп – мăсăльман. Юрать-ши ку çĕрте
Ют тĕн йăлисене тĕпе хума?

Юлман ман тĕнчере пулман кĕтес,
Умра – Çĕр чăмăр, ноосфера.
«Господь – един!» Сăмах
«има́н» та «ве́ра»
Ăнланăва пĕр ят пулса çитет.

Вăрттăнлăха уçать пире Аллах,
Сăвап ятне вăл панă тĕнчене.
Ун тепĕр ят та пур ĕнтĕ, паллах,
«Творец» тесе çӳл тӳпере чĕнеç.

Аллах та Турă яланах манра –
Куллен-кунхи ăсра, ăнланура.
Çут сапакан Тур Амăш сăнарĕ
Вĕçет куç виçейми инçетлĕхре.

---

[3] – 2011 çултанпа Хусан Тур Амăшĕн евĕрĕ Раççей космос станцийĕн сегментĕнче (МКС) упранать.

Пушкинра, Тукайра та Толстойра,
Гётере те ёненӳсем пĕрре.
Хĕсĕнсе, иçмасса, Чингисханра,
Юмахри пек, «ылтăн крыльцара!»

Хусанăн «Кул-Шариф» текен мечĕт,
Пăлхавăшни чиркĕвĕпе çумра.
Пуриншĕн те пĕрре пăхни çитет,
Илемлĕхе çирĕплетме чунра…

***

…Донбасс – асар-писер вут-çулăмра,
Çыру хĕрсе вулаççĕ салтаксем.
Ача çырăвĕсем выртаç умра –
Вăрçă çинчен тĕрлеç хута вĕсем.

Ăнран кайма та пулĕ çырупа!
Вĕсенче асап, шанни кӳленнĕ.
Çыру кĕтесĕнче кăранташпа –
Хусан Тур Амăшне ӳкернĕ.

Переççĕ, сирпĕтеççĕ таврара,
Вилме пултарĕ паттăр та шикли.
Анчах Тур Амăш тутăрне карать,
Иисус патне пыраймĕ халь пульли.

Çырусене упраççĕ хĕвĕнче,
Ача çырăвĕнчен ăшши перет.
Вăрçи хирет. Йăлт кисренет тĕнче.
Мĕскер малта? – Пĕлеймĕ чун, чĕре.

Тата çыру. Чалăшласа çырни –
Вуншар йĕрке саспаллисем карах,
Аяларах – Сююмбике башни,
Çур уйăхăн çурли – юнашарах.

Пăхап «Вăхăт» программа. Вертолёт –
Анса ларать. Бензин – бак тĕпĕнче.
Винтсем шăпланчĕç. Çĕкленет пилот.
Хусан Тур Амăш – çурăм хыçĕнче.

Ак офицер – ик сыпăкри тăван,
Вăл мăсăльман. Çапăçнă Донбасра.
Ăçтан пĕлен, мĕнле тĕнпе ăна,
Хăварнă чĕрĕ, халĕ – запасра.

Раççейĕн тĕнĕ – пĕтĕмĕш тĕнче,
Окопра атеистсем пулмаççĕ!
Ёненӳпе яланлăх чун çинче.
Тур патне тасаланса каяççĕ.

***

Хирургпала шăпах сехет хушши.
Тăтăшах тапхăрсене тустартăм!
Тăван çĕрпе ăçта çитмерĕм-ши?
Чунăмра пур кĕтесе пуçтартăм.

Епле манас-ха халь çав сăмаха?
Микулай тус каланăччĕ хĕлле.
Тур Амăш, имĕш, халĕ те чĕрех,
Мĕнпур çынна асапсенчен сиплет.

Туйăнчĕ – хăлхаран пăшăлтатать,
Такам мана Коран[4] сыпăкĕсем.
Тавралăх янраса чăнкăртатать,
Çап-çутă ангел тухрĕ пек ишсе.

Саманчĕ аслă, çавăнтах – ансат.
Эп тĕлĕкре е çакă чăн-чăнах?..
Тин çеç вĕçеттĕм, çеçкереччĕ сад.
Ак ёнтĕ – çук тӳпи те çук çăтмах.

Шухăш пайсене тирпейлĕн пухрăм,
Курăнупа вĕçтертĕм инçете.
Сывласа кĕç саланса каяттăм,
Çĕршер, пиншер те пĕчĕк йĕкĕте!

«Ура!» тени вĕçейрĕ чунăмра:
Хĕвел вăранчĕ – ăшă та хĕрӳ…
Палаткăна кĕрейнĕ тухтăра
Такам каларĕ пек: «Ку Çĕнтерӳ»!

[4] – Коран аятне илсе кăтартасшăн кунта: «Ля хауля уаля кууата илля биллях». Унта Аллах пире йĕркене пăсассинчен управ парать. Вăлах Унăн хушăвĕсене пурнăçласа пыма вăй-хăватпа тивĕçтерет тенĕ.

Пур ӳтӗм тӑрӑх ыткӑнчӗ хавас!
Хум килсе ҫапрӗ ҫӳллӗ тӳперен:
«Уҫсамӑр куҫсене!» – каларӗ сас.
Тӗссем мана хупларӗҫ ҫӗнӗрен.

Хирург ман турӗ хӑй ҫӗнтерӗвне!
Вӑл харпӑр-хӑйӗн – ҫӗнтерӳ ку-тӗр.
Чӑнах та пурнӑҫларӗ тивӗҫне,
Уҫса маншӑн Ҫутӑ патне ҫул-йӗр.

Леш Ҫӗнтерӳ, вӑл аякра-ха халь,
Тӑван Ҫӗре таврӑнӗ ӑшӑра.
Ма ҫаврӑнать-ха Ҫӗр тавра ахаль?
Хусанти Тур Амӑшӗн сӑнарӗ!

Ҫын пурнӑҫӗ – хӗнре, куҫҫульсенче,
Ҫавах пулаҫ малта ҫӗнтерӳсем.
Пӗрмай ҫут чунсенче, чӗресенче –
Ҫунайччӑр пирӗн хӗм шанчӑкӑмсем!

***

…Наркозӗ иртрӗ, пуҫӑмра шӑв-шав,
Алӑк енне пуҫларӑм эп утма.
Хӑлха ҫурса сас пачӗ шӑнкӑрав,
Шӑв-шавсенчен пулӑшрӗ вӑл хӑпма.

«Куҫсем епле? Шанатӑп, курӑн эс?» –
Тӗп хуларан тус – Коля шӑнкравларӗ,
Ман куҫ валли шырать имҫам –
мертес,
Пин ҫухрӑмран хисеплесе каларӗ.

Кӗҫ операци пуласси пирки,
Ӑна эп шухӑшпа та пӗлтермен.
Чӑн кӑткӑс пирӗн пурнӑҫӑн йӗрки –
Епле-ха сиснӗ тусӑм инҫетрен?

Тен, пур таҫта ҫӳлте ятарлӑ дрон,
Ӗҫе ман ятӑмпа пурнӑҫлама…
Пӗлетӗп халӗ: пур апла закон –
Мана та ҫынсене ертсе пыма!

«Эп сипленетӗп. Юнашар хирург,
Ун чыслӑ ӗҫӗсемшӗн савӑнап…»
«Чӑтсам, юлташ, – тет тусӑм
трубкӑра. –
Кунта эп саншӑн ҫуртасем лартап

Чиркӳсенче Хусан Тур Амӑшне.
Инкеклӗ ҫынсене вӑл пулӑшать.
Ун ӗҫӗсем пурин валли парне –
Им-юмсенчен усӑллӑрах пулать».

«Господь – един!» – тесе хушса хурса,
Эп урӑх тӗнлине аса илтерчӗ.
Хусан Тур Амӑшне мӑнаҫласа,
Ӑна чунтан шанни пирки пӗлтерчӗ.

Кӗрешнӗ маншӑн кам – шалти хӑват,
Е ҫӳлтен янӑ чаплӑ хирургсем?..
Хӑтарнӑ – шанчӑк! Вӑт ӑҫта сӑвап! –
Сиплевӗн ҫурчӗ. Илтрӗм кӗлӗсем.

***

Хӑш халӑх сыхламан тӑван ҫӗре,
Тавӑрупа пӗрре ҫеҫ мар паллашнӑ?..
Пин ҫӗнтерӳ те пулнӑ Раҫҫейре.
Хусанпала чылайӑш тӑванлашнӑ.

Юн юхнӑ, хывнӑ юрату йӗрне,
Кунта сивӗпе шӑрӑх хутшӑнать.
Сӑваплӑ турӑш – тек ҫине-ҫине! –
Ҫӗр Чӑмӑрӗ тавра шав ҫаврӑнать.

Вӗҫет тӑрна, шавлать тӗкӗлтура,
Пӗтӗмӗшле хӗвел тӗнче тавра.
Кам панӑ турӑша Хусан ятне? –
Сыхлать ҫӳлте вӑл халӗ мӗнпурне!

Чӑвашла ***Лидия Угахина*** *тата*
Евгений Турхан *куҫарнӑ.*

ФРОНТРАН САЛАМ КУКАМАЯ

Фронтри ҫӗрсенче, сӗм-тӗттӗм вӑрманта,
Ҫыратӑп сӑвва, алла пӑшал тытса:
«Юратнӑ кукамайӑм, саламлатӑп сана!
Сывлӑхусем епле? Мӗнле-ши эс унта?
Манӑн веҫех аван. Эп килшӗн
тунсӑхлатӑп.
Сывлӑхӑм аптрамасть,
юлташӑмсем шанчӑклӑ.
Усал тӑшмансенчен сыхлатпӑр
ҫӗршыва,
Ак ҫитӗҫ ҫав кунсем –
вӗҫленӗ те ку вӑрҫӑ
Таврӑнӑп эп вара тӑван
тӑрӑхӑма.
Пӗр сӗтел хушшинче тӗл
пулӑпӑр санпа –
Калаҫӑпӑр чунтан йывӑр
кунсем пирки.
Иртсе кайччӑр вӗсем, ан килччӗр
каялла.
Пурӑнар малалла ыррине ҫеҫ шанса.
Паянхи кун вара пит савӑнӑҫлӑ
маншӑн –
Мӗншӗн тесен паян ҫуралнӑ эс ирпе.
Тав тӑватӑп сана, юратнӑ кукамайӑм,
Эс манӑн чӗререн тухмастӑн нихӑҫан.
Эс мана ӳстернӗ, ӑс парса вӗрентнӗ,
Нихӑҫан та манмап мана ыр суннине.
Эп юратап сана таса чун-чӗрепе,
Хам пӗлетӗп кӑна мӗн тери эс хитре!
Вӑрӑм ӗмӗр тата сунатӑп эп сана,
Сывлӑхпа ӑнӑҫу ертсе пычччӑр ҫулна.
Ӗмӗр пурӑн савӑнса, пурнӑҫ
илемне туйса!

Николай НЕСТЕРОВ.

ПĔТЕТ КУ ВĂРÇĂ, ПУЛАТЬ ÇĔНТЕРӐ!

Вăрçă пуçланчĕ терĕç –
Пире ак чĕнсе илчĕç:
Автоматсем тыттарчĕç
«Зелёнка» тăхăнтартрĕç…
Бронежилетсем пачĕç –
Вăрăм çула кăларса ячĕç…
Хăракансем тарса пĕтрĕç –
Чикĕ леш еннелле чуптарчĕç.
Теприсем: «Сывлăх çук, – терĕç, –
Эп чирлĕ, каяймап», – терĕç.
Хăю урлă каçарчĕç,
Кама руль умне лартрĕç,
Кама окопсене ăсатрĕç –
Кунта веç урăхла!
Çӳлте дронсем вĕçеççĕ –
Темĕн те пĕр пăрахаççĕ.
Йĕри-тавра йăлт сирпĕтеççĕ,
Инçетре çулăмпах çунтараççĕ…
Тылра вара нумайăшĕ çапла
пурăнаççĕ:
Ăшă вырăнта çывăраççĕ,
Кулаççĕ, савăнаççĕ,
Хĕрĕсене, арăмĕсене ыталаççĕ…
Кунта юлташсем аманаççĕ, вилеççĕ,
Нумайăшĕ хыпарсăр çухалаççĕ.
Аннесемпе юратнă арăмсем –
Пире чунтан кĕтекенсем!
Çыхăнăва тухманшăн ан çилленĕр,
Пире эсир кулленех аса илсемĕр.
Пĕтет ку вăрçă, пулать Çĕнтерӳ!
Таврăнăпăр киле,
Ыталăпăр сире!

Алексей РОМАНОВ (Кузьмич).
430-мĕш полк.

Ухтияр ИЛЮХИН

Ухтияр Тудиярович Илюхин 1948 çулхи çурла уйăхĕн 1-мĕшĕнче Азнакай районĕнчи Çутă Кӳлĕ (Якты-Куль) ялĕнче çуралнă. Кĕçĕн классенче чăвашлах вĕреннĕ. Малалла вара шкул пĕтеричченех тутарла вĕреннĕ вăл. Шкул хыççăн вицĕ çул колхозра тракторист пулса ĕçленĕ. 1972 çулта Чистайри ял хуçалăх техникумне пĕтерсен Азнакайри «Сельхозтехникăра» инженер пулса вăй хунă.

1999 – 2009 çулсенче УБРта механикре ĕçленĕ. Мăшăрĕпе хĕрпе ывăл çуратса ӳстернĕ. Ухтияр Тудиярович çырма юратать. Тахçантанпах Азнакай районĕн «Маяк» хаçачĕпе çыхăну тытать. Ухтияр Илюхинăн тутарла çырнă статйисемпе калавĕсем унта тăтăшах пичетленеççĕ. Темиçе çул каялла Ухтияр Тудиярович чăвашла та çырма пуçларĕ. Хайлавĕсем «Сувар» хаçатра час-час кун çути кураççĕ. Çыравçăн тахçанхи ĕмĕчĕ пурнăçланчĕ – пĕлтĕр вăл хăйĕн 75 çулхи юбилейĕ умĕн хăйĕн пĕрремĕш чăвашла кĕнекине пичетлесе кăларчĕ, «Кӳлĕ çутти» ятлă вăл.

МА ЧĔНЕП-ШИ?..

Калав

«Москвич» машина çине лартăмăр та ĕç пуррипе Хусан хулине хускалтăмăр. Руль умĕнче Михаил Михайлович – тивĕçтерӳ уйрăмĕн пуçлăхĕ, эпĕ комбайнсене юсакан цехри инженер. Вăл вăхăтра Çырчалли урлă çӳреттĕмĕр. Халиччен эпĕ запчасть хыççăн грузовиксемпе усă кураттăм. «Татсельхозтехника» пĕрлешĕвĕ Хусан Кремлĕнче вырнаçнăран манăн унта çитсе ыйтуллă çырусене алă пустармалла. Михалычăн, паллах, тĕп хулара ĕçĕ нумай.

Вятка кĕперĕнчен иртрĕмĕр, пыратпăр çапла хуллен кăна. Хăвăртлăха ӳстерсе пулмасть – е хирĕç машина килет, е хăвăртрах кайма юрамасть.

Сылтăм енчи ял çулĕнчен пирĕн ума «ГАЗ-53» машина килсе кĕчĕ. Эпир унăн хыçалти икĕ кустăрми хушшине ал чăмăрĕ пысăкăш чул хĕсĕннине курах кайрăмăр.

– «Газик» хăвăртлăхне ӳстерчĕ-тĕк, чул пирĕн енне вĕçет, – тетĕп эпĕ, пурнăçăмра тем те курнă çын пек.

Умри машинăран иртсе кайма пăхрăмăр, анчах хирĕçрен пĕр чарăнмасăр машина килет. Çапла 30 çухрăм пытăмăр. Юлашкинчен тинех хевтине чул «хĕстернĕ» вăрттăн тăшман пысăк çултан пăрăнса куçран çухалчĕ.

«Уф, хăтăлтăмăр!» – тесшĕн кăначчĕ, хирĕç килекен «КАМАЗ» кустăрмисем хушшинчен вĕçсе тухнă чул катăкĕ пирĕн малти кантăка чăлпар ватса пăрахрĕ. Çул хĕррине чарăнса кĕленче ванчăкĕсене ура айĕнчен, кантăк раминчен хырса тăкрăмăр. Ларкăч хыçĕнче пулнă çĕлĕксем, алсасем тупса тăхăнса малалла хускалтăмăр. Хусана çитме тата 60 çухрăм-ха. Авăн уйăхĕ пулин те, чӳречесĕр кабина сивĕ.

– Шăна-мĕн вĕçсе кĕрсен тата… – тетĕп эпĕ, хура куçлăх тăхăнса ларнă Михалыч енне пăхса.

Эй, тупата, шăна тавраш вăрах кĕттермерĕ: чӳречесĕр юлнă кабина ăшне тĕкĕлтура персе те кĕчĕ. Чарăнма тиврĕ. Тытса вăркăтрăмăр вара «пикировщика» кабинăран.

– Эсĕ, «юмăççă», малалла мĕн пуласси çинчен нимĕн те ан кала, юрĕ-и?!

– Михалыч…

– Ан чĕн!

Эпир иксĕмĕр те нумай калаçакан çынсем, анчах пĕр сăмах чĕнмесĕр çитрĕмĕр Хусан хулине. Хамăрăн республика базинче чӳречене лартса пачĕç. Урăх нимĕнле мыскара курмасăр киле йĕркеллех таврăнтăмăр.

Çак ăнсăрт хыççăн вара эпĕ Михалыча ытлашши сăмахсăр, пуç сĕлтсе кăна сывлăх сунма пуçларăм. Татах «ан чĕн!» тесе калассăн туйăнать. Хусан çулĕ çинче пулса иртнĕ мыскарана вара час-час аса илеттĕмĕр.

Халь малти кĕленчи ваннă машина курсан эпĕ нумаях пулмасть вилнĕ Михалыча аса илетĕп. «Сельхозтехника» пĕрлешĕве, çавăнта ăмăртаăмăрта ĕçленĕ рабочисене, Союз тăрăх чупакан шоферсене, колхозсене пулăшма васкакан инженерсене – кашнине мухтаса асăнмалла.

ШĂРТТАН

Калав

Пирĕн асанне Сердеби апат пĕçерес енĕпе ăста хĕрарăмччĕ. Пурçукранах асанне тутлă яшка-çăкăр пĕçеретчĕ. Пуснă выльăх ӳпкечĕрисенчен пилменкке, хутнă кăмакара кӳптĕрме, пӳремечĕ, çырла кукăлĕ тата тем-тем пĕçеретчĕ. Çĕнĕ ялта пурăнма пуçласан пирĕн асанне кӳршĕ ялти тутар арăмĕсенчен чек-чек пĕçерме вĕреннĕ. Çапла тутлă пулнă унăн ку çимĕçĕ, ял-йышра асаннене «чек-чек мăнакка» тесе ырă ят панă.

Анчах чи тутли, чи капăрри вăл – шăрттан. Çулла пирĕн çемье сурăх пусатчĕ, сивĕ тытакан нӳхреп çукчĕ пирĕн. Эпир шурлăхлă çĕрте вырнаçнă.

Ашӑн ытларах пайне тӑварланӑ, пӗр ҫатма сурӑх ашӗнчен асанне шӑрттан хатӗрлетчӗ. Вӑл ирех кӑмака умӗнче. Сурӑхӑн хырӑмлӑх пыршине лайӑх ҫӑвать, тултан-шалтан тӑварпа сӑтӑрать. Туранӑ аша та тӑварпа, ыхрапа, пӑрӑҫпа тата темсемпе пӑтрататать. Тимлесе, ӑшӗнче сывлӑш хӑвармасӑр, вӗсене пыршӑ ӑшне тултарать те пир ҫиппипе ҫӗлесе хурать. Пурне те ҫу сӗрнӗ ҫатма ҫине хурать. Кӑмакана ирех хутнӑ, вутӑ ҫунса пӗтнӗ. Пулас шӑрттана асанне кӑмакана чикет, ун ҫӑварне хӗҫ-тимӗрпе хуплать. Тепӗр ирхине пиҫи-пиҫми шӑрттана кӑмакаран кӑларать, кӑмакана хутса ӑшӑтнӑ хыҫҫӑн шӑрттана каллех кӑмакана лартать.

Асанне пуян хресчен ҫемйинче ӳснӗ. Паллах, вӑл Илюхинсен ҫуртӗнче аслӑ ҫын, унӑн сӑмахӗнчен иртсе никам та ӗҫ туман. Кил-ҫурт ун аллинче. Ҫиме ҫӑкӑр, аш-какай вӑл пӗҫерет, ҫаплах пӗтӗм япала ун аллинче. Тутлӑ апатран нумайӑшӗ ҫемьешӗн мар. Тӑванӗсене хӑналама пирӗн асанне пит юрататать.

Аттепе анне ирех ӗҫе тухса утнӑ, ачасем ҫывӑраҫҫӗ. Ҫак вӑхӑтра асанне патне йӑмӑкӗсем, тантӑшӗсем килсе лараҫҫӗ. Сӑмаварпа чей вӗретсе, ҫимеллисем хатӗрлесе юмах юптараҫҫӗ кинемейсем. Кӑмакаран тутанса пӑхмалӑх шӑрттан илсе хурать хуҫа карчӑк.

Каҫхине килте вӑйлӑ харкашу хускалчӗ: асаннен кӑмакари шӑрттанӗ ҫухалнӑ! Айӑпа никам та хӑй ҫине илмест. Аслисем ӗҫре пулнӑ, апла пулсан ачасем ыйтмасӑр илнӗ. Кам-ши кун пек намӑссӑр ӗҫе тӑвакан? Асанне тӑхӑр ҫулти Ираида йӑмӑка айӑплать.

Ял ҫыннисем пурте ҫавапа пӑрҫа ҫулма ҫӳреҫҫӗ. Пирӗн анне те хӗлле ҫуралнӑ кӗҫӗн йӑмӑка ача кӳми ҫине вырттарса пусура ӗҫлет. Анчах чӗчӗ ачи чарӑнмасӑр макӑрать. Вара анне яла таврӑнса ача пӑхма Ираидӑна макӑрта-макӑрта илсе каять. Мӗншӗн тесен унӑн шӑрттан ҫиесси килет. Асламӑшӗ кӑмака умӗнче асапланнинине Ираида пӑхса выртнӑ-ҫке-ха.

Шӑрттан ҫиесси килнипе каҫ енне ача урапипе йӑмӑкне туртса Ираида хиртен пӑрахса тарнӑ. Анчах килте хаяр асанне турчӑкапа кӗтсе илнӗ ӑна.

– Ӑҫта хутӑн шӑрттана?

Шӑпӑр хуллине тутанас килменнипе йӑмӑк тухса тарать. Ӑҫта пытанса ларнӑ-ши вӑл – кӗтӳ ансан кӑна кӗчӗ киле. Вӑл вӑхӑтра асанне лӑпланнӑччӗ, пурте ҫывӑрма выртрӑмӑр.

Ҫӗрле анне пире, ачасене, вӑратрӗ те эпир сасӑсӑр кӑна чӑлана кӗтӗмӗр. Унта ҫулла ҫывӑрмалли сарлака йывӑҫ кравать пур. Анне ун аррине хӑма татӑкӗ хучӗ те кӑнтӑрла «ҫухалнӑ» шӑрттана вырнаҫтарчӗ. Кӑнтӑрла, ача пӑхма Ираидӑна илме таврӑнсан, анне кӑмакари шӑрттана асаннерен вӑрттӑн кӑларнӑ та урӑх ҫӗре пытарнӑ, хӑй ӗҫне васканӑ.

Ҫапла туса пирӗн анне мӗнпур ҫемьешӗн пулма тивӗҫлӗ апата усал асаннерен туртса илсе килти ачасене ҫитерчӗ.

Ун пек тутлӑ ҫимӗҫ эпир ӗмӗр тӑршшӗпе те ҫимен пуль. Ҫак пулӑм хыҫҫӑн вара асанне урӑх шӑрттан пӗҫермерӗ. Ватӑлнипе халӗ пулмарӗ-ши?..

Юрий АДЪЮТАНТОВ

1981 çулхи çу уйăхĕн 28-мĕшĕнче Çĕпрел районĕнчи Çĕнĕ Упи ялĕнче çуралнă. Çĕнĕ Упири тĕп, Упири вăтам шкулсенче вĕреннĕ. Хусанти Бизнеспа информатикăн уçă колледжне куçăн мар майпа пĕтернĕ. 2016 çултанпа Çĕпрел районĕн таврапĕлӳ музейĕн филиалĕнче – Çĕнĕ Упири П.В.Дементьев ячĕллĕ музейре методист пулса ĕçлет.

Унăн статйисемпе заметкисем Çĕпрел районĕнчи «Тăван ен», республикăри «Сувар», Ульяновскри «Канаш», Шупашкарти «Çамрăксен хаçачĕ» хаçатсенче тăтăшах пичетленеççĕ. Нумай пулмасть Юрий илемлĕ литература хайлавĕсем те çырма пуçларĕ.

ТĂВАН КИЛ ĂШШИ

Калав

Тавралăха каç сĕмĕ çапнă, кĕркунне хуçаланать. Пӳлĕмре пурте çывăраççĕ. Тутлă тĕлĕксем курса киленеççĕ ĕнтĕ. Пĕр Марье кинемейĕн çеç ыйхи таçта çĕтнĕ. Енчен-енне çаврăнкаласа выртрĕ-выртрĕ – ниепле те çывăрса каяймарĕ. Утиялне сирсе шăппăн кравать çинчен тăчĕ те, ыттисене вăратас мар тесе, кантăк еннелле утрĕ. Хула урамĕнчи юпа çутисем çул çине çутатаççĕ, сăнаса ларчĕ вара машинăсем вĕлтлетсе иртсе кайнине.

Ларнă май куç умне мăшăрĕпе Микалайпа уйран утă çулса таврăннă вăхăтсем аса килчĕç. Эх, епле хĕвеллĕ те шăрăхчĕ утă уйăхĕ! Лаша лавĕ çине типĕ утта тиенĕ те шăкăлтатса калаçса, кулкаласа килелле таврăнаççĕ. Çамрăк чухне пĕр-пĕринсĕр пĕр кун та пурăнайман, тунсăхласа çитнĕ каçчен. Урам вĕçĕнчи хурăн айĕнчи сак çине мăшăр кăвакарчăн пек ларса малашлăха сӳтсе явнă, çемье пурнăçĕ пирки ĕмĕтленнĕ…

Икĕ хĕрпе виçĕ ывăл çуратса ӳстерчĕç мăшăрĕпе. Ачисем шкултан вĕренсе тухсан хуланалла çул тытрĕç, ĕçе вырнаçса тĕпленчĕç. Кашнин хăйĕн çемье пурнăçĕ, ачисем. Мăшăрĕ пурнăçран уйрăлни те пайтах. Иккĕн чухне вăхăт иртни те сисĕнместчĕ, картишре выльăх-чĕрлĕхпех аппаланса йăпанатчĕç.

Пӗччен кун кунласси кансӗртерех ҫав. Канмалли кунсенче ачисемпе мӑнукӗсем килсех ҫӳретчӗҫ. 12-ӗн вӗсем асламӑшӗ-кукамӑшӗн. Тунсӑхлама вӑхӑт ҫукчӗ.

Пӗр кунхине кӗҫӗн ывӑлӗ Толя ӗҫрен килне ҫитсен мӑшӑрӗпе Нинӑпа амӑшӗ пирки калаҫса пӑхрӗ, лешӗ хирӗҫ те пулмарӗ. Амӑшне хӗл каҫма юр ҫӑвиччен хулана илсе килчӗҫ. Сывлӑхӗ кӑшт хавшакрах пулнипе ҫумра пултӑр терӗ ывӑлӗ. Кинӗ ӗҫрен килсен вӗри апат пӗҫерсе ҫитерет, кӗпе-йӗмне ҫӑвать, тасатса тирпейлет. «Ырӑ туни ырӑпах таврӑнать», – тенӗ ваттисем. Ачана пӑхнӑ пекех пӑхаҫҫӗ.

– Тӑван кил-ҫуртра аванрах пекчӗ. Ытлашши нушалантарассӑм та килмест капла сире. Ҫиме те нумай ҫиеймеп, ҫӑварта шӑлсем те нумай юлман, ҫемҫереххисене чӑмлатӑп. Эпир аҫӑрпа сире ҫуратса ӳстертӗмӗр, пӑхса ҫитӗнтертӗмӗр, йывӑрлӑхсен умӗнче пуҫа усмарӑмӑр. Ҫапла ватлӑх енне сулӑнсан пӗччен пурӑнатӑп тесе шутламан та, – чунтан калаҫрӗ Марье, шывланнӑ куҫӗсенчен куҫҫуль тухрӗ, тутӑрпа шӑлса илчӗ. – Ялта пурӑннӑ чухне качака та тытнӑ, чӑх та усранӑ. Кӳршӗри Анна каҫатчӗ те лараттӑмӑр вара иртнӗ вӑхӑтсене аса илсе, – ассӑн сывласа илет кинеми.

Ывӑлӗ нимӗн чӗнмесӗр пуҫне усса тимлӗн итлесе ларчӗ амӑшӗ калаҫнине.

– Анне, нимӗнле чӑрмав та кӳместӗн, кашни кун пырса ҫӳреме инҫе вӗт-ха яла. Кунта куҫ умӗнче, яланах ҫумра. Сана ялта пулсан пӑхакан та кирлӗ. Пӳртне хутса ӑшӑтма вуттине те кӗртмелле, пусӑран шывне те ӑсса килмелле…

Толя пӳлӗмрен тухрӗ, самантранах каялла кӗрсе амӑшне ӑшшӑн ыталарӗ те:

– Анне, епле-ха капла? Эпӗ кӗҫӗнни пулнӑ май сана пӑхса тӑрататӑп. Хӳтлӗх кирлӗ. Пӗртте тӑкӑсламастӑн пире. Хӑвна килти пек туй, ан вӑтан. Аньӑпа Максим шкултан килсен килте, пӗччен мар. Чей вӗретсе ӗҫтереҫҫӗ, сан юратнӑ пӗремӗкне те илсе килеп ыран. Хама пурнӑҫ парнеленӗ тӑван аннене каялла илсе каймастӑпах. Каялла яла илсе таврӑнсан пӗччен епле тӑрӑн? – чунне уҫса калаҫрӗ ывӑлӗ.

– Аннене ялта йывӑрлӑхсен умне тӑратса хӑвармастпӑр, – кинӗ те килӗшрӗ мӑшӑрӗпе.

Ялта пурӑннӑ чухне каникула килсен мӑнукӗсем те асламӑшне ҫав териех юрататчӗҫ. Лавккана кайсан конфет-пӗремӗкне те яланах туяннӑ. Нихӑҫан та уйӑрса паман, виҫеллӗ тыттарнӑ. Хӑй ҫумне ҫупӑрласа илсе лӑпкӑн ачашлатчӗ пӗчӗкскерсене.

Анчах тем пулчӗ юлашки вӑхӑтра, сывлӑхӗ те япахрӗ, пуҫӗ шавлать, ыратни аптратать тет. Анатолипе больницӑна кайса килсен тухтӑр уколпа имҫамсен рецепте тыттарччӗ. Пӗр ватӑлсан чирӗсем те ҫыпҫӑнсах тӑраҫҫӗ ҫав. Урисем те сураҫҫӗ ҫанталӑк улшӑннӑ вӑхӑтра…

Ҫуркунне, ӑшӑ кунсем ҫитсен, яла кайса килме шутларӗҫ. Ах, мӗнле савӑнӑҫ! Тинех кӳршисемпе курнӑҫӗ. Тӑван кил умне ҫитсенех Марье кинемин куҫҫулӗ юхса анчӗ. Савӑнӑҫ куҫҫулӗ, ялти сывлӑша тулли кӑкӑрпа тарӑннӑн сывласа илчӗ. Тавралӑха сӑнаса пӑхрӗ. Ялтах аван ҫав. Пурне те

паллан. Хулара кирпĕч çуртра кунĕпе ларан ниçта тухмасăр.

Хирĕçре пурăнакан Улькка килсен сак çинче темĕнччен шăкăлтатса калаçса ларчĕç. Каç пулнине те сисмен.

Каçкӳлĕм пахчара ĕçлесе ĕшеннĕ хыççăн ывăлĕ мунча хутса ячĕ. Эх, мĕн тери аван хурăн милĕкпе çан-çурăма çапни! Пылпа чей ĕçнĕ хыççăн лăпкăн выртса çывăрчĕ тăван килте кинеми. Тĕлĕк тĕлленчĕ: тăван колхозра ĕçленĕ вăхăтри çулсем, ачасем шывра чăмпăлтатни, уйра утă типĕтни… Килтех аван çав!

ХАÇАТ ТУСĔ

Калав

Улттăмĕш класра вĕренекен Артём шкултан шавласа килсе кĕчĕ пӳрте. Асламăшĕ, нуски çыхса лараканскер, мĕн пулнă-ши тесе мăнукĕ еннелле çаврăнчĕ.

– Асанне, кур-ха, манăн заметка хаçатра пичетленнĕ, – терĕ Артём хаçатне асламăшне кăтартса.

– Мĕн пирки çыртăн вара? Кӳр-ха, вуласа тухам, – терĕ Ольга Васильевна хаçатне ачан аллинчен илсе.

– Шкулта пĕр класра вĕренекенсемпе ватă çынсене пулашма кайни çинчен, – хавхаланса калаçрĕ мăнукĕ.

Хаçатри заметкăна тимлĕн вуласа тухсан асламăшĕ сăмах хушрĕ:

– Маттур та эсĕ, аван çырнă тимуровецсем пирки. Ваттисене пулăшни хисеплĕ. Тĕл пулсан сывлăх сунма ан ман. Малашне те шкул пурнăçĕ пирки çырсах тăр.

– Тавах сана ырă сăмахусемшĕн, асанне. Тăрăшатăп яланах. Валентина Николаевна вĕрентекен урокĕсене питĕ тимлĕн итлесе ларатăп. Чăваш çыравçисем çинчен нумай пĕлетпĕр. Вĕсен кĕнекисене библиотекăран илсе вулама сĕнет вĕрентекен. Вулама питĕ кăмăлланипех пуль, сочиненисем те çырма юрататăп эп…

…Вăхăт малаллах шăвать, Артём та халĕ ӳссе çитĕннĕ ĕнтĕ. Педагогика университетĕнче вĕренсе аслă пĕлӳ илчĕ. Çемье çавăрса Шупашкар хулинче пурăнать. Мăшăрĕпе Маринăпа хĕрпе ывăл – Ксенийăпа Егор – çитĕнтереççĕ. Артём Николаевич пĕр шкулта чăваш чĕлхи вĕрентет. Хулара пурăнсан та ачасемпе чăвашла пуплет, вулама, çырма хăнăхтарать. Вĕсене литература музейĕнче çыравçăсемпе йĕркелекен тĕлпулусемпе каççене илсе çӳреме тăрăшать.

Мĕн чухлĕ кĕнеке шĕкĕлчемен-ши ача чухне? Хаçат-журналсемпе халĕ те туслă çыхăнура. Хăй те литература журналне калавсем ярса тăрать, пичетленсе тухсан çийĕнчех тепĕр хут вуласа тухать. Асламăшĕн ырă сĕнӳ-канашĕсене яланах асра тытса тăрать. Ал çырăвĕсене тирпейлĕн упраса пĕр папкăна пухса пырать. Пайтах пуçтарăннă ĕнтĕ.

Çырнисем нумайлансан кĕнеке издательствине пухнă калавĕсен, тĕрленчĕкĕсен, сăввисен пуххине кăтартма кайрĕ. Ырласа йышăнчĕç унта ĕçлекенсем. Редакторсем алçырусене пăхса, тӳрлетсе калăпласан нумай та вăхăт иртмерĕ – Артём Николаевичăн «Пурнăçа юратса» кĕнеки пичетленсе те тухрĕ.

Кĕнеке кăларасси çăмăл мар – тăкакĕсене хăйех саплаштарчĕ. Хуплашки çинче çуралса ӳснĕ тăван ялĕ сăнарланнă. Кĕнекене шкулпа, тăван ялпа, çамрăклăх çулĕсемпе çыхăннă калавсем кĕнĕ. Сăвăсем те пур.

Иртнĕ эрнере литературăна кăмăллакансем, тус-юлташĕсем библиотекăна çĕнĕ кĕнекене пахалама пуçтарăнчĕç. Нумай ырă сунăм янăрарĕ çав каç. Малашне тата ытларах çырма сĕнчĕç тусĕсем. Автор кашнинех çĕнĕ кĕнекине алă пусса парнелерĕ.

Çыравçăсен союзĕн ертӳçи Максим Антонов вара Артём Васильева союз пайташне илнине çирĕплетекен удостоверени парса чысларĕ. Ку пысăк кĕтменлĕх пулчĕ Артём Николаевичшăн. Вăл пурне те чĕререн тав турĕ. Унран телейли тĕнчипе те çукчĕ пуль çав каç.

Наталия КЛЕМЕНТЬЕВА

Наталия Николаевна Клементьева (Фролова) 1979 çулхи пуш уйăхĕн 23-мĕшĕнче Чăваш Республикинчи Патăрьел районĕнчи Именкасси ялĕнче çуралнă. 1996 çулта Хирти Пикшик вăтам шкулне пĕтернĕ.

Сăвăсемпе калавсем ача чухнех çырма пуçланă Наталия. Пирвайхи сăввисем «Тантăш» хаçатра пичетленнĕ. Патăрьел районĕнчи «Авангард» хаçатпа та туслă çыхăну тытнă вăл.

1999 çулта Çĕпрел районĕнчи Алешкин Саплăк йĕкĕтне Алексей Клементьева качча тухнă Наталия. 2019-2020 çулсенче Çĕпрел районĕнчи «Тăван ен» хаçатра ĕçленĕ, халĕ штатра тăман корреспондент. 2020 çултанпа Çĕпрел районĕнчи таврапĕлӳçĕсен пĕрлĕхне ертсе пырать, 2021 çултанпа Алешкин Саплăкри Культура çурчĕн директорĕ пулса тăрăшать. Мăшăрĕпе пĕрле 6 ача ӳстереççĕ.

АН АЙĂПЛА

Ан айăпла çынна пĕлмесĕр,
Кĕвĕç чунна кĕве çиет.
Тен, вăл ирттернĕ йывăр ĕмĕр,
Суранĕ ун куратăн пӳрленет.

Ан айăпла çынна шăпишĕн,
Эсĕ утман ун çулĕпе.
Юлташ тесе вĕт йăпшăнатăн,
Ху тулнă йӳç кĕвĕçлĕхпе.

Кашкăр пекех çынсем тискеррĕн
Çурса тăкасшăн пĕр-пĕрне.
Сурăх пекех хăйсем курнасшăн,
Мăй-мăй тусах сутаç тусне.

Ан айăпла çынна пĕлмесĕр,
Эсĕ иртеймĕн ун çулне.
Ху пулнишĕн пачах телейсĕр
Чунна ан пар кĕве çиме…

КĔТЕТĔП

Кĕтетĕп ывăла кайнăранпах,
Тĕлпулу çитме нумай юлмарĕ.
Тĕпĕртетет чĕре кашни кунах,
Вăрах шăвать сехет йĕппийĕ.

Кĕтет аçу çĕр çывăрмасăр,
Малашлăхра сана ыр çын курса.
Давид чупать шав йăкăр-йăкăр,
Аса илет сана ялан вăл савăнса.

Тăван киле часрах васка эс,
Кĕтме халь йывăр-çке мана.
Эп тунсăхпа веç кӳтсе çитрĕм,
Ман шухăшра пĕр эс кăна.

АМĂШ ПĂШĂРХАНĂВĔ

Çĕр çывăрмасть амăш мăнтарăн,
Ларать кичем, пăшăлтатса,
Чĕри çунать, çунать ачишĕн,
Чĕппи ун халĕ вăрçăра.

Хăравçă евĕр эс тармарăн,
Мăнаçланап санпа, ачам.
– Анне, эп вăрçа каяп, – терĕн. –
Эп пулмасассăн тата кам?

Тата хăçан сана курап-ши?
Ĕмĕтленетĕп тĕл пулма.
Мĕн-ма аннен чĕри çунать-ши,
Хăрать ывăлне çухатма.

Ман ывăл эс, ман ăмăрткайăк,
Турă упратăрччĕ сана.
Сана кĕтеп... Чунра пур шанчăк
Сана илме хам ытама.

ШУХĂШСЕМ

Каç пулсассăн шăплăха
Эп илетĕп ытама.
Çитмĕл çичĕ шухăша
Сарса хурап хам ума.

Урхамах пек вирхĕнеç
Акăш-макăш шухăшсем.
Сăннисем хытă чикеç
Çын каланă сăмахсен.

Çитĕ ĕнтĕ вылятса
Шухăша ирĕк ярса.
Тилхепине хыт тытса
Ан яр эс ăна мала.

Чĕре сасси – чăн юлташ,
Итле шăплăх пур чухне.
Чĕре сасси – пит йăваш,
Итле пурнăç кĕввине.

АЧАСЕМ

Пĕчĕкскерĕм, маттурскер...
Чун йăпатмăш, хитрескер.
Çут хĕвел пек ачашскер,
Çук Давидран хаклăскер...

Кăвак куçлă хĕр пĕрчи,
Вăрăм çÿçлĕ вутăшпи.
Пăрчăкан пек вăр-варскер,
Хĕрĕм манăн чиперскер.

Пĕчĕкренех ăслăскер,
Чи сапăрри Николай.
Каласмасть вăл чуххăмла,
Шутлать кашни сăмаха.

Çакă пирĕн кил-çуртра,
Вăйли çук-тăр Кирилран.
Ĕç вылять пĕчĕк алра,
Ашшĕ пекех пулнăран.

МĂШĂРĂМА

Ан сăна мана эс вăрттăн,
Эп сана çеç юратап.
Ыталап сана пит хыттăн,
Эс пурришĕн савăнап.

Тав тăвап Турра эп саншăн,
Пурнăçра веçех пулать.
Мăшăр çунат хуçăлсассăн,
Манăн та чунăм сурать.

Каçарсам мана пуриншĕн,
Çирĕм çул вăл сахал мар.
Е шанманшăн, чăтайманшăн,
Ĕмĕр пирĕн вĕççĕр мар.

Мăшăрне çухатнă акăш
Темшĕн-çке айван юлать.
Çавăнпа та мăшăр акăш,
Ун йăви ăшă пулать.

Упраса пурнасчĕ ĕмĕр,
Пурнăçăн çиппи черчен.
Пĕр-пĕрне ялан юратăр,
Ĕмĕрлĕх куç хупиччен.

Николай АНДРЕЕВ

Николай Иванович Андреев 1980 çулхи çу уйăхĕн 11-мĕшĕнче Çĕпрел районĕнчи Çĕнĕ Йĕлмел ялĕнче çуралнă. Тăван ялти шкултан вĕренсе тухнă хыççăн И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн юридици факультетĕнче вĕреннĕ. «Заря» агрофирма филиалĕнче вăй хунă. Унăн пĕрремĕш хайлавĕсем – сăвăсем – Çĕпрел районĕнчи «Тăван ен» хаçатра 2014 çулта пичетленнĕ. Каярах Хусанта тухса тăракан «Сувар» хаçатра, Шупашкарти чăвашла пичет кăларăмĕсенче тухма пуçланă. Николай Андреев «Шăрăх кунсем» тата «Ĕмĕт хыççăн» кĕнекесен авторĕ.

2019 çулта Николай Андреев Петĕр Хусанкай ячĕллĕ литература премине тивĕçнĕ.

УСĂЛЛĂ «ТĂКАК»

Калав

– Гонорар укçи пуçтарăнчĕ. Шупашкартан концерт лартма юрăççем чĕнсе илес мар-ши тетĕп? – пăртак шухăшласа çӳренĕ хыççăн пат каласа хучĕ Авдей. – Ан тив, курса савăнччăр.

– Ах, Авдей, мĕн аташан-ши хăв укçана пĕр пустуя тăкакласа, – вăрçса тăкрĕ çавăнтах ăна Елюк. – Миллиардер мар пулĕ те эсĕ? Пĕлтĕр чĕнсе илсе ларттарнă концертушăн та никамран пĕр тав сăмахĕ илтмерĕмĕр. Пачах хирĕçле. Сиввĕн пăхса, çăварĕсене шыв сыпнă пек пĕр чĕнмесĕр туха-туха кайрĕç клубран концерт вĕçленсессĕн. Калăн, эсĕ вĕсен кĕсйисенчен вăрттăн укçа кăларса илнĕ. Шкул директорĕ вара санран уççăнах кулать. Пӳрнипе тăнлавне шаккаса сана «тăхăр вун тăххăр» тет. Ăнланмаççĕ пирĕн ял çыннисем ыркăмăллăх мĕн иккенне. Халăхран укçа пуçтарса илсе пĕр-пĕр вак-тĕвек ĕç тунине çеç хисеплеççĕ. Председсовет ун пеккисене Тав çырăвĕсем парсах хавхалантарать. Санăн ятна вара аса та илмеççĕ.

– Ку тĕрĕс-ха. Ăçта вырнаçтарас-ши вара ман çав укçана?

– Хама пар, – сĕнчĕ Елюк.

– Сана тата. Каллех ĕмĕрне пĕрре тăхăнса пăхса пăрахассишĕн тумтир туянма-и? Каплипе те пĕтĕм шкап-шифоньер, пĕтĕм мачча санăн

ланчашкусемпе тулнӑ. Ҫук, – килӗшмерӗ Авдей.

– Апла пулсан лавккана кайса тутлисене илсе кил. Маншӑн укҫа хӗрхенетӗн пулсан, – тутине тӑсрӗ кӳреннӗ хӗрарӑм.

Авдейӗн те кӑмӑлӗ пӑсӑлчӗ. Гонорар укҫине пӗтӗмпех кӗсйине лӳчӗркесе чикрӗ те уҫӑ сывлӑша васкарӗ. Алӑка шаплаттарса хупсах тухса кайрӗ вӑл урама. «Мӗншӗн ҫак пурнӑҫра пурте ҫын укҫипе хуҫаланасшӑн? Вӗсем ӗҫлесе илмен вӗт-ха ӑна...» – тарӑхса утрӗ арҫын лавкка енне. Кӑмӑлне ҫӗклес тӗллевпе эрех туянса ӗҫес шухӑш ҫуралчӗ.

– Мана ав ҫав ҫуттине пӗр кӗленче парӑр-ха, – лавккана кӗнӗ-кӗмен укҫа тӑсса хушрӗ сутуҫа.

– Пӗр кӗленче ҫеҫ сахал пулмасть-и? – «шӑтса» тухрӗҫ таҫтан тусӗсем – Сергейпе Толя.

– Апла пулсан икӗ кӗленче парӑр-ха эрехне, – хушрӗ Авдей, эрех ӗҫнӗ хушӑра юлташӗсемпе калаҫса кӑмӑлӗ ҫӗкленессе шанса.

Лавкка хыҫӗнче халап ҫапнӑ хушӑра кӗленчесем самантрах пушанчӗҫ. Вӗсем эрех ӗҫнине курса ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ юлташсем килсех тӑчӗҫ. Кил-ҫурт таврашӗнче пӗр-пӗр ӗҫ сиксе тухсан пулӑшма чӗнме кӑнтӑр варринче хунарпа шыраса тупаймӑн хӑшне. Анчах Авдейӗн кӑмӑлӗ уҫӑлнӑччӗ ӗнтӗ. Епле ан уҫӑлтӑр-ха? Пурте ӑна чупса пырса алӑ параҫҫӗ, ырӑ сӑмахсем каласа мухтаҫҫӗ, ҫурӑмӗнчен ырласа шаккаҫҫӗ. Ҫине-ҫине лавккана кӗрсе ҫӗнӗ туссене хӑналама эрех йӑтса тухрӗ. Вӗсемпе пӗрле хӑй те ӳсӗрӗлсе кайрӗ...

Малаллине лайӑх астумасть. Каҫ пулма пуҫланӑччӗ пулас. Йӗри-тавра пӗр ҫын юлманччӗ. Таҫтан полици ӗҫченӗ сиксе тухрӗ. Хӑйпе пӗрле таҫта пыма чӗнет. Ырӑ мара сиснӗ Авдей ӑна пӑхӑнасшӑн мар. Аллисемпе лавкка стенине ҫатӑрласа тытнӑ. Хӑйпе пӗрле лавккана та илсе кайма хатӗр.

Ҫак вӑхӑтра вӗсем патне председельсовет килсе тухрӗ. Участковӑй ӑна тем ӑнлантарчӗ те председельсовет Авдей ҫине ӑшшӑн кулса пӑхрӗ.

– Ан тӗкӗн ӗнтӗ, – уҫҫӑнах илтрӗ Авдей председельсовет полици ӗҫченӗ умӗнче ун хутне кӗнине. – Хамӑр ҫын.

Йӗрке хуралҫи ӑна итлесе Авдейрен хӑпрӗ. Чун-чӗререн хӗпӗртенӗ ӳсӗр арҫын такӑна-такӑна ӳксе килӗ еннелле чупрӗ...

... – Ах, ӑнман! Пӗр пус юлмиччен ӗҫсе янӑ вӗт укҫине! – вӑранса кайрӗ арӑмӗ тилӗрнӗ сасӑпа.

Вӑл килӗнчех, диван ҫинче, салтӑнмасӑрах выртать иккен. Елюк вара унӑн кӗсйисене ухтарать.

– Мӗн чухлӗ укҫана пӗр усӑсӑр пӗтерчӗ, ирсӗр! – енчен енне ҫавӑра-ҫавӑра ҫапса вӑрҫрӗ Авдее хӗрарӑм.

– Ан вӑрҫ усӑсӑр, – куҫне уҫса ячӗ урӑла пуҫланӑ Авдей. – Хамӑн укҫана питӗ усӑллӑ тӑкакларӑм эпӗ хальхинче. Халӗ мана пӗтӗм ял арҫынни вырӑна хурса хисеплет. Сергейпе Толя вара ыталаса чуптуманни кӑна. Председельсовет, председельсовет вара... Мӗнле ӑшшӑн кулса пӑхрӗ-ха ман ҫине! Пӗрремӗш хут ман хута кӗрсе: «Хамӑр ҫын», – терӗ. Ҫавӑн пек маттур пирӗн ялсем.

Аскольд Де ГЕРСО

Аскольд Де Герсо (Аскольд Алексеевич Герасимов) Павлă районĕнчи Потап-Тăмпăрлă ялĕнче 1969 çулхи нарăс уйăхĕн 10-мĕшĕнче çуралнă. 1978 – 1986 çулсенче ялти шкулта, каярах Оренбургри халăх медицинин халăхсен хушшинчи шкулĕнче вĕреннĕ.

Аскольд Де Герсо сакăр кĕнеке – «Асамлă тĕнче», «Юратап эп сана», «Графиня поневоле», «Нежданная гостья», «Нераскрытая тайна гибели Моррисона», «Поэтические зарисовки», «И загляну в твои глаза», «Найди меня в следующей жизни» – авторĕ.

ТАВРĂННИ

Калав

– Авă, çитрĕмĕр те ĕнтĕ. Таймапуç, шăллăм, – Сергей машинăран тухас умĕн сывпуллашса аллине тăсрĕ таксиста.

– Чылай вăхăта-и? – ытла та кĕрĕс-мерĕс сумка çине пуçне сĕлтсе кăсăкланчĕ таксист. – Ку тăрăха нумайăшĕ çулне те маннă ĕнтĕ...

– Çăва çине леçсе хăвариччен, – йăл кулнă май хуравларĕ Сергей.

– Ăнлантăм, – терĕ таксист. Хăй вара ăшĕнче: «Ăсран тайăлман пулĕ-çке...» – тесе шутларĕ. Унтан вырăнтан хускалса каялла хулана вĕçтерчĕ.

Сергей, çул хĕрринче юлнăскер, тимлĕн сăнарĕ яла. Вăхăт иртнĕçем çумăр айĕнче хуралнă хуçасăр пӳртсем, урам тăршшĕпе ӳсекен йăмрасем – кусем вĕт иртнĕ вăхăтра пурте чуна, чĕрене çывăх пулнă. Питĕ те çывăх...

Сумкине йăтрĕ те Сергей ял еннелле уттарчĕ. Сумки самаях йывăр, анчах та чарăнса тăмарĕ, малаллах утрĕ. Яла кĕрсен Сергей юлашки хутчен кунта хăçан килнине аса илес терĕ – пултараймарĕ. Пилĕк çул-ши е тата та ытларах?

Юлашки хут килнĕ чухне тăван ашшĕ-амăшĕн çуртне юсани, картишре сарăлса кайнă чие тунисене кăклани аса килчĕ. Арăмĕ вара миçе чĕнсен те яла килсе çӳремерĕ. Кăнтăра канма кайса пултăр ун... Сергей

Çурçĕрте аванах укçа ĕçлесе илетчĕ. Арăмне мĕн: мĕнлерех кĕрет çав укçа, ун пирки вăл нихăçан та шухăшламан тесен те тĕрĕс пуль… Ăна укçине аллинчен тыттар, çавă кăна.

Çурçĕрте вара… Çанталăк алхасма тапратсан икĕ утăмранах нимĕн курма та, тавçăрма та çукчĕ. Пĕр çĕртен тепĕр çĕре тросран тытăнса çӳренĕ самантсем сахал мар пулнă. Троса вĕçертрĕн-тĕк – пĕтрĕ пуç! Вун пилĕк çул çавнашкал çанталăкра тăрăшнă хыççăн кил патне çывăхарах ĕçе те вырнаçса пăхрĕ Сергей. Шалу енчен аванах хĕсĕк, анчах та чăн сăлтавĕ кунта пулмарĕ. Арăмĕ сăмахланине те шута илместчĕ. Çук, чăн сăлтавĕ пачах урăх: тунсăх пусрĕ Сергее. Çурçĕр хăй патне туртрĕ. Каллех уйăх çурă çурçĕрте, пĕр уйăх тăван тăрăхра. Хытă тытать хăй аллинче Çурçĕр, вĕçертесшĕн мар. Ăнсăртран инкек сиксе тухман-тăк, хăçанччен ĕçленĕ пулĕччĕ-ши Сергей?

Пĕррехинче ĕçленĕ хушăра инкек сиксе тухрĕ. Кам айăплă пулнине никам та тĕшмĕртмерĕ, анчах та килне таврăнсан Сергей хăйне япăх туйнине асăрхарĕ. Больницăра врач йăлтах тĕплĕн ăнлантарчĕ: халĕ Сергей иккĕмĕш ушкăн инваличĕ. Çурçĕр çинчен ан та шутла текех. Çурçĕр кăна-и – нимĕнле йывăр ĕç те юрамасть.

Ку вара çулăм çине çу сапнипе пĕрех пулчĕ арăмĕшĕн. Кашнинчех мĕскер те пулсан тупсах тăчĕ ӳпкелешмелли, çатăлтатмалли. Ырă тунине самантрах манчĕ: упăшкин укçипе Турцисем тăрăх канса çӳренине те, хаклăран та хаклăрах тумсем туяннине те… Сергей хăйне тăван килĕнче ытлашши пулнă пек туйрĕ. Арăмĕ хăваламарĕ ăна килĕнчен, çавах та кашни сăмахĕнче сивĕлĕх уççăнах курăнса тăчĕ: эсĕ пулмасан мана аванрах пулĕччĕ тени. Сергей пĕрре кăна сăмах хушса пăхрĕ:

– Ку хваттере эпĕ хамăн укçапа туяннăччĕ.

Арăмĕ çакна кĕтсе çеç тănă тейĕн:

– Паянхи пурнăçра ку нимĕн те мар. Тата: эпĕ инвалид хыççăн çӳреме каччa тухман…

Юлашки сăмах Сергее пушшех аптăратса ячĕ. Пуçран михĕпе çапнăнах туйăнчĕ ăна. Çемье çавăриччен унăн ашшĕ-амăшне пĕлнĕ ĕнтĕ, çавах та темĕне шаннă. Халĕ, авă, уççăнах палăрчĕ: улми йывăççинчен аякка ӳкмест.

Ăçта каймалла унăн, мĕскер тумалла – арăмĕ çавăн пирки пĕртте пуç ватмарĕ. Куç умĕнчен çеç çĕттĕр. Çакăн хыççăн Сергей аванах шухăша кайрĕ. Шухăш вара çавнашкал тухрĕ: пурнăçа çĕнĕлле йĕркелес пулать. Йăлт çĕнĕрен. Мĕнлерех? Кун çинчен те пĕрре çеç мар пуçне ватрĕ. Иртнине аса илнĕ май Сергей ăнланма тăрăшрĕ хăй ăçта йăнăшнине. Хăçан? Тен, пĕрремĕш хут тĕл пулнă хушăра? Вăл вăхăтра унăн савнийĕ те пурччĕ – Наташа, пĕр-пĕрне питĕ килĕштеретчĕç. Сахал мар шурăмпуç пĕрле кĕтсе илнĕ вĕсем, чечек çыххи те нумай парнеленĕ хĕре. Вĕсем пĕрлешесси пирки те сăмах хускатнăччĕ, ĕмĕтленнĕччĕ телейлĕ пурнăç çинчен. Ташă каçĕнче урăх пикене асăрхаман пулсан-и… Хула хĕрĕ пĕр вĕçĕмсĕр ун умĕнче явăнчĕ…

Çав каç хыççăн Наташăпа хутшăну йăлт пăтрашăнса кайрĕ. Каччăн пуçĕнче хула пики хуçаланчĕ. Наташа хурланчĕ те, тунсăхларĕ те, çавах

Сергей хыҫҫӑн чупмарӗ. Ҫӗр каҫа мӗнле тӳссе ирттернине пӗр хӑй ҫеҫ пӗлчӗ. Хула хӗрӗ кӑштахран кайрӗ. Ун хыҫҫӑн Сергей те тухса вӗҫтерчӗ. Ашшӗпе амӑшне вӗренме кӗтӗм тесе улталаса хӑварчӗ. Ҫумӗнче вара качча ӑнлантарса паракан тупӑнмарӗ. Тата ҫамрӑк каччӑ итленӗ пулӗччӗши ҫын сӑмахне? Тӑван ялне ултӑ ҫул иртсен килчӗ вӑл ун чухне. Наташа кӳршӗ яла качча тухнӑ терӗҫ. Кунта тӗлӗнмелли ҫук, паллах: Сергее кӗтсе ӗсӗклесе лармалла мар вӗт унӑн. Тата каччӑ пӑрахӑҫларӗ тесе ватта юлма та сӑмах паман никама та.

Тен, ҫакӑнта пулчӗ унӑн пысӑк йӑнӑшӗ? Ҫӗнӗ илӗртӳллӗ пике куҫ тӗлне тухрӗ те пуҫне ҫухатрӗ. Енчен те ҫакӑ мар-тӑк, пурнӑҫ йӑлт урӑхла пулма тивӗҫчӗ. Халӗ аванах вӑхӑт иртнӗ хыҫҫӑн Наташӑна аса илчӗ Сергей. Ҫулӗсем уйрӑлса кайнӑранпа та пӗрре те тӗл пулман – курнӑҫман вӗсем. Ӑнсӑртран та килсе тухман ҫавӑн пек самант. Тата, тепӗр енчен, тӗл пулсан мӗскер калама пултарать вӑл? Иртнине тавӑрма ҫук тата кирлех-ши вӑл?

Акӑ Сергей ун-кун пӑхкаласа илчӗ урама. Пушанса юлнӑ ҫуртсем лараҫҫӗ. Вӑхӑтӗнче кашни ҫуртра пурнӑҫ кӗрлесе тӑнӑ: ача-пӑча сасси янранӑ, ҫамрӑксем ҫемье ҫавӑрнӑ. Халӗ ӗнтӗ ялта ватӑсем ҫеҫ юлнӑ пулӗ ӗмӗрӗсене вӗҫлеме.

Тӑван килӗ патне ҫитме тата вунӑ-ҫирӗм метртан та сахалрах юлчӗ. Питӗ те йывӑр пулчӗ Сергее ҫак хушша утма. Ӳкӗтленӗн туйӑнчӗ ашшӗ-амӑшӗн ҫурчӗ. Калинккене уҫса иртнӗ чухне тӑпсисем, чылайранпа ҫу тавраш курманскерсем, хурлӑхлӑн чӗриклетрӗҫ. Хунавсем ҫӗнӗрен ҫӗкленме ӗлкӗрнӗ, арҫын вӗсене айккинелле сирсе алӑк патнелле утрӗ.

Куҫ тӗлне ҫийӗнчех ҫӑраҫҫи тухрӗ. Ҫумӑрпа аванах тутӑхнӑ, чылай вӑй та кирлӗ пулмарӗ ҫӑраҫҫине туртса илме. Иртнинче килсе кайнӑранпа улшӑну ҫук та-ши?.. Мӗн ӑҫта хӑварнӑ, ҫавӑнтах выртать.

Сумкине тасарах ҫӗре вырнаҫтарса Сергей мӗскертен пуҫлас тенӗн пӑхкаларӗ. Унтан пӳрте кӗчӗ.

Пур ҫӗрте те тусан. Ҫуртри нӳрӗк шӑрши тӳрех сӑмсине ҫапрӗ. Ҫавӑнпах чи малтан кӑмака хутса яма шут тытрӗ. Ара, вутӑ ал айӗнчех ҫителӗклӗ. Ҫулӑм вӑй илсе кайнине сӑнанӑ хушӑра шухӑшӗпе каллех кил патне таврӑнчӗ. Тӗрӗс мар тумарӗ-ши тухса кайса? Тен, ҫине тӑрса юлмаллаччӗ? Ҫавӑнтах тепӗр шухӑш хирӗҫлерӗ: инкек тухасси инҫе мар. «Чиркӳри шӑшин те мӑнаҫлӑхӗ пур», – тесе каланӑ ваттисем. Ҫавӑнта пулчӗ те ӗнтӗ чӑн сӑлтавӗ. Ҫавӑнтан шикленчӗ. Ҫавӑнпах тухса кайма шутларӗ.

Кӑмакари вутӑ аванах ҫунма пуҫласан ҫуртра тирпейлес тесе хускалнӑччӗ ҫеҫ, картишре сас пулчӗ. Унтан алӑка шаккарӗҫ. Кам-тӑр мӑрьерен тӗтӗм тухнине асӑрханӑ та тӗрӗслеме килнӗ. Ача-пӑча алхасмасть-ши? Пушар кӑларсан? Вӑхӑчӗ чылайранпа шӑрӑх тӑрать те пурте типӗ, тавҫӑрса та ӗлкӗреймӗн – вут-кӑвар алхасма тытӑнӗ.

– Кӗрӗр, – чӗнчӗ Сергей килнӗ ҫынна.

– Кам пур кунта? – хирӗҫ илтӗнчӗ хӗрарӑм сасси.

Ҫак сасса Сергей тӗлӗкре илтсен те ҫийӗнчех уйӑрса илеет. Ҫакӑ сасӑпа унӑн яшлӑхӗ тачӑ ҫыхӑннӑ. Анчах та алӑкран кӗнӗ ҫын ӑна уйӑрса илеймерӗ.

– Эпӗ кунта, – терӗ тепӗр хутчен Сергей. Алӑк патнелле ҫаврӑнса хӑна ҫине тинкерчӗ.

– Сергей, ара эсӗ мӗскер кунта? – халӗ хӑна та палласа илчӗ ӑна.

– Наташа? – тӗлӗннине пытараймарӗ Сергей. Пӑлханнипе сасси чӗтрерӗ. Аванах вӑхӑт иртнӗ пулсан та, Наташа ним чухлӗ те улшӑнман. Ҫамрӑк чухнехи евӗрех яштака пӳ-силлӗ, сӑн-пичӗ те улшӑнман.

– Аван-и, Наташа. Вӑт, килтӗм акӑ…

– Отпуска-и? Чылайранпа килменччӗ…

– Ҫапла, нумайранпа килмен, тӗрӗс. Яланлӑхах килтӗм.

– Мӗншӗн ара?

– Ахалех…

Сергей тӳрех пӗтӗм хыпара каласа парас темерӗ. Наташа тавҫӑрса илчӗ сӑлтавне, анчах хирӗҫ чӗнмерӗ. Тата тахҫантанпа курман ҫынпа унсӑр та аванах сӑмах вакламалли.

– Тен, иртен шалалла? – сӗнчӗ Сергей.

– Иртсен те юрать, – Наташа алӑк патӗнчен иртсе тенкел ҫине ларчӗ.

Сергей ӑна сӑнарӗ: утти те пӗртте улшӑнман. Кӑмакара вутӑ кӗрлесе ҫунать. Сергей кӑмака патӗнчен пӑрӑнса Наташӑна хирӗҫ ларчӗ.

– Каҫар та, Наташа, чей хатӗр мар. Килсессӗн ӗлкӗреймерӗм-ха. Халӗ ҫеҫ ҫул ҫинчен.

– Ара, эпӗ ун пирки мар-ха. Хӑв пӗлетӗн, енчен те хуҫасӑр ҫуртран тӗтӗм тухнине курсан пуҫа темӗнле шухӑш та килет…

– Ӑнланмалла, Наташа. Пур ҫӗрте те куҫ, тимлӗх кирлӗ. Хӑв мӗнле? Эсӗ кӳршӗ ялта пурӑнатӑн теместчӗҫ-и?

– Ҫапла. Упӑшка ҫӗре кӗнӗренпе виҫӗ ҫул кунта пурӑнатӑп ӗнтӗ. Мӑшӑр сывӑ чухне тӳсмеллеччӗ, вӑл вилсен вара хӑть кашкӑр пек ула. Туртмасть чун манӑн вӑл яла. Ывӑл, ав, халӗ ман патӑмра хӑналанать, кил-ҫуртра, картишре пулӑшать. Вӑт ҫапларах пурӑнатпӑр. Енчен те мӗнле-тӗр пулӑшу кирлӗ-тӗк, чӗн. Хуть хӑҫан та пулӑшатпӑр. Тата мӗскер эпӗ сана вӗрентетӗп, эсӗ вӗт ял ҫынни – хӑвах пӗлетӗн. Манмарӑн пулӗ?

– Манман. Астӑватӑп.

– Юрӗ, чылай лартӑм, – Наташа тухса кайма хатӗрленчӗ. – Кичем пулсан хӑнана пыр.

Наташа тухса кайсан пӳрт пушанса юлнӑнах туйӑнчӗ. Каҫ сӑнӗ те тискерленнӗ пек. Ҫутӑ ҫук.

Сергей кантӑк умӗнче кӑшт ларчӗ те тӳпене ҫӗкленекен уйӑха сӑнаса, унтан ҫывӑрма хатӗрленчӗ. Паянлӑха ҫитӗ ҫакӑнпа тенӗн.

Ир ҫинчен, кӑшт ҫӗнӗ кун ҫутӑлма тапратсанах вӑранчӗ вӑл ыйхӑран. Ҫавах ҫӗкленме васкамарӗ. Пӗр-икӗ сехет те выртрӗ-ши йӑваланса?..

Ура ҫине тӑрсан чейникне вӗретсе пӗр курка кофе ӗҫрӗ. Унтан картише тухрӗ. «Кун ирттермелӗх пур кунта, – Сергей ҫенӗкре те, ытти ҫӗрте те пуртӑ шырарӗ, тупаймарӗ, ҫавӑнтах тимӗр-тӑмӑр купи ҫӗтнине асӑрхарӗ. – Паллӑ ӗнтӗ, вӑрӑ-хурахсен йӗрӗ».

Кӑмӑл пур-и, ҫук-и – кайма тӳр килчех ӗнтӗ кӳршӗсем патне. Ир ҫинченех ниҫта та пуртӑ тавраш туянма ҫук. Наташа картишӗнче ҫӳретчӗ ӗнине кӗтӗве яма хатӗрленсе.

– Салам, Сергей. Мĕскер ҫав тери ир ура ҫинче?

– Салам. Картишре хунавсене кăклас тенĕччĕ, ĕҫлеме нимĕн те тупаймарăм. Ҫывăрма вара хулара та вăрах ҫывăрман. Наташа, санран пуртă ыйтас нушапа килтĕм халĕ, ик-виҫ сехетлĕхе параймăн-ши?

– Илех вара. Тимĕр тавраш пирĕн кунта вăрах ҫĕтсе выртмасть, ҫийĕнчех уралантараҫҫĕ.

Сергей ҫур сехет ытла та сулмарĕ пуртăпа, суран хăйĕн ҫинчен систерчĕ. Пуртта хурса картлашка ҫине кайса ларчĕ.Унччен те пулмарĕ, картише ҫамрăк каччă килсе кĕчĕ.

– Ырă кун сунатăп, – чĕнчĕ вăл алă тăсса. – Юра.

– Сергей, – хăйпе паллаштарчĕ хуҫа. Ăшшăн алă тытрĕҫ.

– Пулăшу кирлĕ мар-и? – унтан хуравласса кĕтмесĕрех, пуртта тытрĕ те хунавсене тĕплеме пикенчĕ. Пултаруллă ĕҫлет каччă пуртăпа, аллинче выляса ҫеҫ тăрать. Тата хунавсене ҫийĕнчех пĕр вырăна пухса пырать.

– Акă, – пуртта ҫуммăн хурса Юра Сергей ҫумне вырнаҫрĕ.

– Енчен те хирĕҫлеместĕн пулсан эпĕ пирус туртса ярасшăн? – ыйтрĕ вăл.

– Паллах, хирĕҫлессĕм ҫук.

Юра сигарет кăларса мăкăрлантарса ячĕ.

– Ҫутă кĕртсен аван пулатчĕ, – сăмах хушрĕ Юра, тĕтĕме вĕрсе кăларнă май.

– Хулана шăнкăравлатăп паянах, – хуравларĕ Сергей. – Хамăр тĕллĕн хăтлансан штраф тӳлеттерес хăрушлăх пур.

– Паллă ĕнтĕ, – килĕшрĕ Юра.

Сигаретне туртса пĕтерсен тав тăвасса та кĕтсе тăмарĕ, хăйĕн ĕҫĕсемпе васкарĕ каччă. Сергей кăнтăрлахи апат хатĕрлесси ҫинчен аса илчĕ. Ĕҫпе аппаланнă хушăра темĕн те шутласа пăхрĕ вăл каччă пирки. Мĕн каласан та каччă сăнĕнче хăйĕн паллисене асăрхарĕ. Ҫамрăклатакан тĕкĕре пăхнă пекех. Ҫавă ҫеҫ-и? «Манăн ывăл мар-ши вăл?» – текен шухăш та ҫуралчĕ унăн пуҫĕнче. Наташа ун-кун пирки яш чухне пĕрре те сăмах хускатман та кам пĕлсе ҫитерес пур? Ҫитменне тата вăл хăй те нихăҫан та ыйтман.

Вăт мĕнле те пулса тухать пурăнан пурнăҫра. Пурăнатăн, кăштăртататăн, таҫта айккинче санăн тĕпренчĕкĕ пурăннине пуҫна та илместĕн. Вăл та сан ҫинчен нимĕн те пĕлмест. Сергей халĕ тин тавҫăрса илчĕ ҫакăн пирки. «Ҫук, кун пирки Наташăпа ҫине тăрсах сăмах хускатмалла. Юрамасть капла», – шут тытрĕ Сергей. Ҫавах та васкамарĕ. Пурте хăй вăхăтĕнче пулса иртмелле.

Часах хуларан электриксем ҫитсе ҫутта майлаштарса пачĕҫ. Ҫутă пур ҫуртра илемлĕрех те, кăмăллăрах та.

Каҫкӳлĕм Наташа килсе тухрĕ.

– Ак халь ҫутă та пур, – йăл кулчĕ вăл. – Килсе кĕме те кăмăллă. Картише те тирпейленĕ…

– Сире таймапуҫ… Эсир пулман-тăк…

– Сергей, мĕскер эсĕ мĕскĕнленсе калаҫатăн?

– Эпĕ мар, тухтăрсем ҫапла каларĕҫ.

– Тухтăрсем тетĕн? – Наташа курткине хыврĕ те ун патне çывхарчĕ. – Шăппăн лар, ан хускал, – терĕ.

Хускалма мар, тĕлĕннипе Сергей çухалса кайрĕ çиййĕнчех. Нимĕн чĕнме аптрарĕ. Наташăн аллинчен темĕнле асамлă хумсем çапаççĕ. Акă вăл ăна пуç тӳпинчен сĕртĕнчĕ. Вун пилĕк минутран ытла та иртмерĕ-ши, Наташа аллисене илчĕ те:

– Аптрамалли çук. Вĕçсе çӳрекен пулатăн.

– Чăнласах-и?

– Турă умĕнче калатăп. Ыранхи кунтан тытăнатпăр.

Унтан шăпланчĕç. Малтан Сергей шăплăха сирчĕ:

– Наташа, Юра ман ывăл-и?

– Санăн. Уйăрса илтĕн-и?

– Уйăртăм. Мĕнле уйăрса илмĕн?

– Хальлĕхе хăйне ан кала. Эпĕ вĕт ăна ятарласа сан патна пулăшма ятăм. Сана курсанах эпĕ тавçăрса илтĕм тем аван маррине.

Наташа Сергее тĕлĕнтернĕçем тĕлĕнтерчĕ. Икĕ кун хушшинче çавăн чухлĕ çĕнĕлĕх уçрĕ вăл хăйĕншĕн. Хулара юлнă пулсан пĕлнĕ пулĕччĕ-ши çав таран?

Çакă каç темĕнччен шухăша путса выртрĕ вăл. Ыйхи çĕтрĕ. Татах та татах шухăшсенче иртнине таврăнчĕ. Манăçнă, хупăннă иртнине. Çук çав, манăçман. Пурте, пурте асра, хăшне яш чухне асăрхаман та е курам мар, пĕлес мар тенĕ, халĕ вара вăхăт иртсен уççăнах курăнать. Астăвăм пурне те куç умне кăларать. Сергейĕн чĕри сурса кайрĕ.

Вăл урисене урайне антарчĕ те вырăн çинче тăрса ларчĕ. Çутă çутмарĕ. Тулли уйăх кантăкран аванах çутатать. Сергей пĕр хускалми ларчĕ вырăн çинче.

Ир енне вара Сергей хускалайми пулчĕ. Пӳрнисене те хуçлатаймасть.

«Нивушлĕ вилĕм çывхарса çитрĕ? – çылăхран та хăрамасăр шухăшларĕ вăл. – Вĕçлемен ĕçсем вара мĕн чухлĕ...»

Алăк сасси пулчĕ. Кам-тăр çӳрет е туйăнчĕ-ши?

– Вăт сана ме! Эсĕ чăннипех вилме хатĕрлентĕн-и? Юрамасть, – Наташăн сасси янăраса кайрĕ çумĕнче. – Эпĕ вĕт сана каçхине каласа хутăм – ир çинчен сывалма çул уçатпăр тесе...

Çавă ир хыççăн икĕ çул çеç иртрĕ, Сергей килсе кĕнĕ çурта паллама та çук. Сергей хăй те улшăннă, хулĕсем сарăлнă, çан-çурăмĕ яшăнни евĕр. Хуларан мĕскĕннĕн килнĕ арçынпа хальхи арçын хушшинче çĕрпе пĕлĕт евĕр уйрăмлăх. Çавах та пĕрремĕш те, иккĕмĕш те çав этемех.

Ирина БОЛЬШАКОВА

Ирина Николаевна Большакова 1973 çулхи ака уйăхĕн 10-мĕшĕнче Çĕпрел районĕнчи Куршанкă Шăхаль ялĕнче йышлă çемьере çуралнă. Вăтам шкул хыççăн Ульяновск облаçĕнчи Сенгилей хулинчи учительсене хатĕрлекен училищĕре вĕреннĕ, алла диплом илсен тăван ялне таврăннă. 22 çул Куршанкă Шăхалĕнчи ачасене вĕрентнĕ çамрăк педагог. Ĕçленĕ хушăрах Хусанти Тутар патшалăх гуманитарипе педагогика университетĕнче куçăн мар майпа вĕренсе аслă пĕлӳ илнĕ. Пултаруллă педагог 2014 çулта Хусана куçса килнĕ, «Borita school» ют чĕлхесем вĕрентекен тата ачасене аталантаракан шкулта пĕчĕккисене вĕрентет.

Опытлă педагог ача-пăча валли калавсем çырать. Хусанти «Сувар» хаçатпа, Шупашкарти «Халăх шкулĕ» журналпа тачă çыхăну тытать.

НИКАМА ТА АН КАЛА

Калав

Кăнтăр апатне килсен шăллăмпа иксĕмĕре аппапа тете пĕремен велосипедпа ярăнтараççĕ. Рама çинче сиккелесе пынипе кут ырата пуçлать, анчах пурпĕрех ярăнас килет.

Тете темшĕн вите тăррине хăпарса кайнă. Тем шаккать. Ĕçĕ вĕçленчĕ. Хуллен шăвăç çийĕн шуса анчĕ. Хапха тăррине çитсен урисемпе тĕренсе чарăнчĕ. Алăк тăррине çитрĕ. Ак вăл алăк хăлăпĕ çинче. Унтан çĕр çине сиксе анчĕ. Аллинче мăлатук. Аннине куртăм. Хăпарнине асăрхамасăр юлнă. Епле пĕр хăрамасăр çавăнта çитиччен хăпарса кайнă-ха вăл? Шăвăç çийĕн шуса анасси велосипед рами çинче кута ыраттарса пырасси мар. Эпĕ хапха çине пăхса тăнине асăрхарĕ те:

– Иринук, кунта хăпарма юрамасть. Ӳксен кутна кăна мар, кут шăммине амантан, ăнлантăн-и? – терĕ.

– Ăхă, – тетĕп.

Аслисем ёçе кайрĕç. Колхоз хирĕнче чикĕнтĕр çумлаççĕ. Пĕрре кăна ярăнса пăхасчĕ вĕсем каялла таврăниччен.

Хапха тăррине хăпарса кайрăм. Çивиттийĕ айĕнчен вите çивиттийĕ çине хĕсĕнкелесе тухрăм. Тăват уран упаленсе вите çивиттийĕ тăррине хăпарса кайрăм. Хирте ĕçлекенсем çӳлтен пит аван курăнаççĕ. Апла çум çумлакансем маттикĕсене çӳлелле тăратиччене ярăнма пулать иккенха. Кут çине лартăм та йăр! шуса антăм. Хапха çивиттийĕ тĕлне çитсен сылтăм урапа тĕрентĕм. Кĕлетке малалла шума чарăнчĕ. Çаврăнтăм та каллех тăват уран упаленсе вите тăррине хăпартăм. Çапла темиçе хутчен те ярăнса антăм.

Хапха алăкĕ уçăлчĕ те картишне шăллăм кĕрсе тăчĕ, ăна тете велосипедпа хире çити лартса кайнă пулнă иккен.

– Эс мĕскер аслăк тăрăх упаленсе çӳретĕн? Унта хăпарма юрамасть терĕç вĕт. Персе ансан? Ан часрах! – тет.

– Шикли шикленнĕ, кĕрĕк пĕркеннĕ! – терĕм те мухтанас тесе хăвăртраххăн шуса анма шутларăм. – Кур, епле ярăнма пулать!

Хăвăртрах шуса аннипе ура тĕренсе ĕлкĕреймерĕ. Вĕçсе антăм. Кут çине лак! лартăм. Шăлт кăна мунча чулĕсене купаласа хунă купа çине персе аннă иккен. Сывлаймастăп. Шăллăм çумра. Пичĕ шурса кайнă. Аран сывласа ятăм. Володя мана ура çине тăма пулăшрĕ. Ниçтан та юн тухни курăнмасть. Пӳрте кĕтĕмĕр.

– Никама та ан кала.

– Юрĕ, вырт, пахчари çимĕçсене хамах сапăп, – терĕ шăллăм куççульне шăлса.

Вăрантăм. Картише тухрăм. Мунча чулĕсем çук. Ун вырăнĕнче çара тăпра анчах выртать. Эп çывăрнă вăхăтра чулсене урăх вырăна куçарнă.

Аслисенчен пĕри те ятламарĕ, айăпламарĕ те. Вите тăрри те урăхран ярăнма илĕртмерĕ.

ПУРТЕ ПĔРЛЕ

Калав

Асаттепе асанне кукамай патне хăнана кайнă. Асатте таврăнчĕ, асанне çук.

– Асатте, асаннене ăçта пăрахса хăвартăн?! – тĕпчетпĕр эпир.

– Мĕн тăватăр асаннĕрпе? Урисем утмаççĕ, аллисем чĕтреççĕ, пичĕ тĕпсакайĕнчи çурхи улма пек пĕтĕркеленсе кайнă. Кама кирлĕ çавăн пек ват çын?

– Сан асаннӳ мар та – сана кирлĕ мар, пире кирлĕ! – асаттен хăлхи илтменнипе хытах кăшкăратпăр эпир йăмăкпа.

Асатте малти пӳрте кĕчĕ те кравачĕ çине тăсăлса выртрĕ. Мĕн тумалла капла? Тулта ашса тухма çук, пĕр чарăнми юр çăвать.

Атте ĕçрен таврăнчĕ.

– Атте, асатте асаннене кукамай патне манса хăварнă! Илсе кил! – хамăрăн куççуль тухать.

– Ыран лаша кӳлсе çунапа илсе килĕп, çуран утса çитеймест вăл кунта.

Анне те ĕçрен таврăнчĕ.

– Мĕн пулнă? Мĕншĕн йĕретĕр эсир? – терĕ анне пире ыталанă май.

– Асатте асаннене кукамай патĕнче манса хăварнă... Асанне килме тухсан... Путса ларсан?

– Çеруш, эсĕ тимĕрçĕре ик ачуна харăс лартса çӳремелли çуна тутартăн, çав çуна çине ларт та туртса кил аннӳне. Катюша, Маргарита, çунăра парса яратăр-и?

– Ура-а-а!– кăшкăратпăр халь савăннипе.

Атте пирĕн çунана сĕтĕрсе кайрĕ. Анне каланка хутса ячĕ. Эпир чӳрече сакки çине хăпарса лартăмăр. Кĕтетпĕр.

– Асатте, асатте, пăх! Атте асаннене çунапа туртса килет!

Асатте пирĕн пата пырса тăчĕ:

– Ав епле, патша майри пек ларса килет! Ватă пулсан та юрататăр иккен асаннĕре! Хе-хе-хе!

Тăватсăмăр та малти пӳрте кĕтĕмĕр. Эпир йăмăкпа пĕри асатте чĕрçи çине, тепри асанне чĕрçи çине хăпарса лартăмăр! Телевизор пăхатпăр. Пӳрт ăшă, тутлă яшка шăрши сăмсана кăтăклать. Часах анне яшка антарĕ те пире çиме чĕнĕ. Пурте пĕрле апат çийĕпĕр.

Иван ПАВЛОВ-АКТАЙ



Иван Павлович Павлов (Актай) 1944 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнче Аксу районне кĕрекен Аслă Сĕнчел ялĕнче çуралнă. Шкул пĕтерсен ялтах ĕçленĕ. Каярах Омск хулинчи профессипе техника училищинче электросварщика вĕреннĕ. Тăван ялне таврăнсан клуб заведующийĕнче вăй хунă. Çав çулсенчех Пĕкĕлмере тракторист-машинист специальноçне алла илнĕ. Ĕçленĕ хушăрах Пăвари ветеринари техникумĕнчен зоотехника вĕренсе тухнă. 1987 çулта Нурлат районне кĕрекен Мамăк ялĕнче тĕпленнĕ, вырăнти хуçалăхра вăй хунă. 2004 çулта тивĕçлĕ канăва тухнă.

Пĕрремĕш сăввисем Аксу районĕнчи «Ял пурнăçĕ» хаçатра кун çути курнă. Нурлат районĕнчи «Туслăх», республикăри «Сувар» хаçатсемпе тачă çыхăну тытать. Иван Павлов-Актайултă кĕнеке – «Пĕрре курсах саврăм-ши?», «Юрату туптанă телей», «Телей çăлтăрĕ айĕнче», «Сĕнчепе Çарăмсан хушшинче», «Сĕнчел – манăн пĕчĕк çĕршывăм», «Куйкăрăш» – авторĕ.

Иван Павлович А.Талвир ячĕллĕ литература премине тивĕçнĕ.

ÇУРАЛНĂ ЯЛ – ТĂВАН КĔТЕСĔМ

Сĕнче хĕрри хăва-йăмраллă,
Чĕнет мана хăй ытамне.
Сĕнчен ун кăмăлĕ хăй майлă,
Калăн, именчĕк хĕр-пике.

Кунта йăмралăха саркайăк
Иленнĕччĕ илемлĕрен.
Туяттăм хăтлă та пит лайăх
Хама кунта мĕн пĕчĕкрен.

Килсе тухсан шыва кĕмешкĕн
Аса илетĕп аннене.
Çунă кĕпе-йĕм чӳхемешкĕн
Çӳреттĕмĕр Сĕнче хĕрне.

Ăшшăн пăхатчĕ вăл, ачашшăн
Сĕртĕнетчĕç ун аллисем.
«Ан пăрăн çулунтан», – калассăн
Туятăп халь те тутусем.

Туятăп: эп – Сĕнчен пĕр пайĕ,
Шăнкăр-шăнкăр шывăн юххи.
Пĕлетĕп, танлашаймĕ шайĕ
Атăлпа вăл, анчах кĕвви…

Итлесе тăнă май туятăп
Çак кĕвĕ – ман чĕрен таппи:
Савнă хĕрпе-им калаçатăп,
Юхăмĕ, тейĕн, йăл кулли.

Çуралнă ял – тăван кĕтесĕм.
Юратнă ен – чунăм ăшши.
Пĕлетĕп, эс мана кĕтетĕн,
Эсĕ те маншăн чи хакли.

ХĂНАНА СИРЕ КĔТЕТПĔР

Кӳлĕ хĕррипе утатăп
Киленсе илемлĕхпе.
Шăхăркаласа пыратăп
Икĕ çăлкуç тĕлĕпе.

Çул çинче мана тӳр килчĕ
Витре йăтнă хĕр-пике.
Витринче уйăх ишетчĕ,
Çăлтăрсем – ывăççипе.

Ман çине кăштах именнĕн
Пăхса илчĕ йăл кулса.
Сывлăх сунчĕ те сăпайлăн
Кусне тартрĕ вăтанса.

Мĕн пулчĕ сана, шух пусăм,
Кайрăн темшĕн çухалса?
Темле ăшă, ырă туйăм
Чуна илчĕ çавăрса.

Ку хутчен калаçкаланă
Хĕрсемпе. Ну, мĕн тăвар?
Кĕлленнĕ те сӳнсе ларнă
Çулăмсăрах шĕл кăвар.

Мĕн пулчĕ-ха, тĕлĕнетĕп,
Пăлханать чĕрем самай.
Тата мĕн пулать, кĕтетĕп
Шикленерех хам пĕрмай.

Вут-çулăмла хыпса илчĕ
Чуна юрату ăшши.
Савакан телейлĕ теççĕ,
Пур çав унăн та нуши.

Сахал-им ирттеркеленĕ
Куç хупмасăр каççене.
Хăш чухне выртсах та йĕнĕ
Йĕпетсе минтер питне.

Хăш чухне вара вĕçетĕн
Акăш евĕр тӳпере,
Чăпăрт-чăпăрт чуптусассăн
Чун юратнă сар хĕре…

Унтанпа нумай шыв юхрĕ
Шăнкăр-шăнкăр Сĕнчере.
Хĕр-пике ман мăшăр пулчĕ,
Çиччĕн – туслă çемьере.

Мăнуксем ав çитĕнеççĕ,
Савăнтараççĕ пире.
Вун пĕрĕн тĕпĕртетеççĕ
Пухăннă чухне пĕрле.

Савăнса кĕтсе илетĕн.
Ах, уйрăлма йывăр-çке.
Чӳречерен куç илместĕн –
Хăçан тата килеççĕ?

Иксĕмĕр çеç пурăнатпăр
Пӳлĕхçе шайра тытса.
Сывлăхсене пĕлкелетпĕр
Атьсенне шăнкăравласа.

Чип-чиперех пурăнаççĕ
Мăнуксене ӳстерсе.
Тăтăшах килсе тăраççĕ,
Хăвараç тирпей кӳрсе.

Кун-çулсем ăçта чупаç-ши?
Тин кăначчĕ хĕрĕхре.
Ĕмĕр вăл çапла иртет-ши?
Хупăнĕç куçсем пĕрре.

Мăшăрпа килĕштеретпĕр
Мехел çитнĕ сывлăхпа.
Хăнана сире кĕтетпĕр
Çитмĕл тултарнă ятпа!

ЭПИР ПУР, ЭПИР ПУЛАТПĂР

Ахалех пăшăрханатпăр –
Эпир пур, эпир пулатпăр,
Чăваш пĕтмест нихăçан.
Туслă, хăтлă пурăнатпăр,
Пирĕн çĕршыв – Тутарстан.

Ташă-юрă, вăйă-кулă
Чăвашла çаптарнă чух
Савăнмасăр кам-ха юлнă
Вут-хĕм чуна хыпнă чух.

Чăтаймарăм, эп те тытрăм
Аллăма хуткупăса.
Чунăма яриех уçрăм –
Ятăм ташша чăвашла.

Лидия УГАХИНА

Лидия Григорьевна Угахина Аксу районĕнчи Унтакшă ялĕнче 1942 çулхи нарăс уйăхĕн 22-мĕшĕнче çуралнă. Шкул хыççăн Шупашкарта И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче аслă пĕлӳ илнĕ. Алексеевски районĕнчи Чăваш Майни вăтам шкулĕнче чăваш чĕлхипе литературине вĕрентнĕ.

«Тутарстанри Чăваш Майни», «Çавра çил», «Çунатлă шанчăк», «Самана кустăрми» кĕнекесен авторĕ. 2009 çултанпа Раççей Писательсен союзĕн пайташĕ, 2013 çултанпа ТР ЧНКА çумĕнчи Чăваш çыравçисен союзĕн пайташĕ.

Лидия Угахина вĕрентекен тата çыравçă «Сувар» хаçатпа туслă. Чăваш чĕлхин илемлĕхне, пуянлăхне халăх патне çитерсе унпа мăнаçланма, ăна юратма вĕрентет.

МАРЬЕ

Калав

Паян Марье ирех икĕ ачине ертрĕ те Хыр ёшни енчи ана çине çурхи тырра вырмаваскарĕ. 14-ри Кĕркури ĕçе хăнăхнă ĕнтĕ, акă 8 çулти Наçтука амăшĕ паян пуçласа тырă вырма илсе тухать.

– Анне, – терĕ Кĕркури çулпа пынă май, – эсĕ мана вăрçмăн-ши? Ялта комсомол ячейки уçăлни пирки пĕлтерчĕ Екатерина Петровна, ялти шкулта чăваш чĕлхипе вĕрентекен. Кăмăл пулсан унта çырăнма юрать-и?

– Мĕн ĕçлеççĕ вара унта? – ыйтрĕ амăшĕ.

– Çĕнĕ пурнăç тумашкăн çынсене явăçтармалла, вăрçăра вилнĕ салтаксен çемйисене пулăшмалла. Тата спектакль, концерт лартма йыхăрать вĕрентекен, репетицисем шкулта пулаççĕ. Малашне кашни çуртра Ильич ламписем çунĕç. Кино кăтартĕç. Хирти анасене сухалама тракторсем пулĕç.

– Ырă ĕçшĕн ма ятлас, çапах килти ĕç çинчен манма юрамасть. Пикуль пек куштансенчен пăрăнарах çӳре. Аçу та çĕнĕ пурнăçшăн кĕрешсе пуç хучĕ… Нумай халăх хирĕлчĕ çапăçура. Çĕршыв юхăнчĕ.

– Анне, Ленин хушнă пек малалла аталанĕ пурнăç. Вĕренмелле, вĕренмелле тата вĕренмелле, – тенĕ В.И.Ленин. Вăрçи çеç ан пултăр урăх.

Ывăлĕпе калаçса пырса çул кĕскелчĕ, ана çине çитсе те тăчĕç. Марье

çурлине тытса тыră пусси умне тăчĕ, кĕлтурĕ. Тырра тăкаксăр пуçтарса кĕртме Çӳлти Турăран пулăшу ыйтрĕ. Çурлипе тулли пучахлă тулă хăмăлне тирпейлĕн вырса кĕлте çыхрĕ. Ачисем те ĕçе пуçăнчĕç.

Кăчăрт-кăчăрт кĕвĕ кĕвĕлет çурла сасси, ăнса пулнă тырра вырма та кăмăллă. Çурла уйăхĕ. Çĕршыври лару-тăру асар-писер тусăннине пăхмасăр хĕвел, шăнса пăрланнă çынсен чĕрисене ăшăтма шутланă евĕр, кĕр енне сулăннă çĕр çийĕн хăйĕн ăшшине сапалать: ăшăтать, ачашлать, шанăç парать. Мăшăрĕ, Ваçанкка, граждан вăрçинче шуррисемпе çапăçса вилнĕ текен çыру илчĕ Марье. Çемьере пысăк çухату, хурлану.

4 ача, çуртри ĕçсем – йăлтах Марье çине тиеннĕ. Килти лаша çине утланса вăрçа тухса кайрĕ те Ваçанкка, çухалчĕ. Пĕр тиха пур-ха, çавна ӳстересчĕ.

Вăрçа кайиччен мăшăрĕ çĕршыва пулăшатчĕ: çуна-урапа, пичкесем туса хатĕрлесе вулăса ăсататчĕ. Шуррисем çывхарма пуçласан хăй ирĕкĕпе Хĕрлĕ Çар ретне тăчĕ. Вилтăприйĕ ăçтине те пĕлме йывăр, Алапука хулишĕн çапăçăва кĕрсен пуç хучĕ тесе çырнă çырура.

Марьесен тыră ани икĕ çĕрте. Пĕрне, Усрав енчине, Пикультен тара илнĕскере, малашне акаймăпăр, ачасем те çамрăк. Пикуль, хусахскер, пĕр анине те акса тыră ӳстереймест, лаши те, ĕни те çук унăн. Совет влаçĕ пулсан ăна чухăн çын тесе комбеда суйланă та йăрккать çавăнта кашни кун.

Влаçрисене налук пуçтарма пулăшать. Пуш уйăхĕнче кашни хресчен хуçалăхĕнчен тыră пуçтарса çӳрерĕç. Хресчен çемйине çимелĕх те, ана шуратса хăварма вăрлăх та хăвармасăр пуçтарса кайрĕç. Кашни хуçалăхăн çăмарта, аш, сĕт, сурăх çăмĕ памалла.

Çурла уйăхĕ вĕçленсе пырать, хĕвел те вăтанчăк хĕр евĕр, сайра кăна пĕлĕтсен хушшинчен тухса çынсене савăнтарать. Марьепе ывăлĕ кĕлтесене урапа çине тиесе авăн картинче купана хыврĕç. Кĕрхи ĕçсем вĕçленсен авăн ĕçĕ тытăнать. Инçетри хирте тепĕр ана урпа, сĕлĕ вырма ывăлĕпе хĕрне ертсе тухрĕ Марье. 6 çулти Элекçейпе 4 çулти Прукка килте хайсемех çывăрса юлчĕç. Наçтук та çурла тытса тыră вырма вĕренчĕ, час-часах тӳрленсе тăрса амăшĕпе сăмахлать.

– Анне, Усрав вăрманĕнче шĕшкĕ мăйăрĕ те пулса çитет пулĕ, хăçан кайăпăр мăйăр татма?

– Тата виçĕ кун тăрăшса ĕçлесен, ытти вак-тĕвек ĕçсене пăхмасăр кайăпăр мăйăр татма.

– Лисукпа аппăшĕ паянах кайрĕç, – тет Наçтук.

– Мăйăрĕ пирĕн валли те юлать вăрманта, вăл питĕ ырăскер.

Çапла калаçа-калаçа икĕ аршăн чухлĕ урпа вырса тухнăччĕ, сасартăк ял енчен чан сасси илтĕнсе кайрĕ, тĕтĕм тухни курăнчĕ. Марьепе ачисем те яла чупрĕç.

– Ах, Турăçăм, пирĕн çурт çунать-çке! – тинкеререх пăхсан ăнланса илчĕ Марье.

Шыв, шыв кирлĕ! Хирти çынсем те пушар патне чупса çитрĕç, витре йăтса çырмана шыв ăсма чупрĕç. Хапхана яри уçса улăм витнĕ çурт çине шыв сапма пуçларĕç.

Марье пĕр самант аптраса тăчĕ. Унтан сасартăк:

– Прукка! Элекçей! – тесе кăшкăрса ячĕ. – Пӳртре икĕ ача!

– Çунакан пӳртре икӗ ача! – хăраса кăшкăрчӗç çынсем те. Екатерина Петровна кам-тăр тупса панă сăхманпа витӗнчӗ те хăй çине шыв сапма хушрӗ, вара çунакан пӳрте кӗрсе кайрӗ.

Ача-пăча, халăх вăл çунакан çуртран тухасса сывламасăр кӗтеççӗ.

Пӗрре, иккӗ… Пилӗк минут шутлаççӗ çынсем. Акă тинех 4-ри Пруккана йăтнă, Элекçее çавăтнă Катюша курăнчӗ. Сывă, пурте сывă – ачасем те, Катюша та. Марье ачисене ыталарӗ. «Пӳрте кӗрсе япаласене илсе тухасчӗ», – тет. Анчах ăна кӗртмеççӗ. Пӳрт тăрри те çунса ишӗлчӗ. Пушар хăйӗн усал чӗлхипе чӳречесене, алăка хыпашларӗ. Пӗр самантра пӳрт, кӗлет, пӳртум кӗл пулчӗç. Аяккарах ларакан лупас тата тăм кӗлет патне вут çитеймерӗ, юрать çилсӗр кунччӗ, çынсем сыхлани те пулăшрӗ. Çурт кăмаки çеç шыв сапнипе исленнӗскер, хуп-хура курăнса ларать.

Сивӗтиччен çемье тăм кӗлетре пурăнкаларӗ. Улăмран тӳшек майларӗ Кӗркури. Ашшӗн кӗрӗкӗпе витӗнсе çывăрчӗç.

– Ăçтан тухнă пушар? – ыйтаççӗ 6 çулти Элекçейрен.

– Эпир вырăн çинчен те тăманччӗ-ха, пӗр ватă старик килчӗ те вучахран кăвар илчӗ, килте шăрпăк пӗтрӗ-ха, – тет. Çав çын кăвар ӳкерсе хăварчӗ пулмалла. Прукка та вăранчӗ, пӳртрен тухас тесе алăка уçрăм, унта тӗтӗм.

Вара Пруккапа иксӗмӗр сӗтел айне кӗрсе пытантăмăр.

Вăрă вăрлать те çурт юлать, пушар тухсан ним те юлмасть.

Авăн уйăхӗнче Марье çунса кӗлленнӗ çурт вырăнӗнче темӗн шыратчӗ, хăй патне учительница пынине те сисмен.

– Ырă кун пултăр, Марье аппа, мӗнле пурăнкалатăр? – тет.

– Ачасене пушартан хăтарнăшăн тав тăватăп сире, ятăра калама та пӗлместӗп.

– Катюша тесе чӗнӗр, анне те çапла чӗнет мана.

– Совет влаçӗ тăлăх ачасене пăхма ача çурчӗсем, приютсем йӗркелерӗ. Наçтука, Элекçейпе Пруккана вăхăтлăха, çурт туса пӗтериччен, приюта вырнаçтарма пулать. Килӗшетӗр-и? Ку ялтан ачасем татах пулӗç.

– Килӗшетӗп, – терӗ Марье савăнса. – Эпир аслă ывăлпа кӳршӗсем патӗнче пурăнкалăпăр.

– Ыран лаша лавӗ тупса ял Совечӗ пулăшнипе ачасене приюта леçӗпӗр.

Марье çăмăллăн сывласа ячӗ, çӗнӗ çурт лартма тӗллев тытрӗ.

Марьепе ывăлӗ çуннă çурт вырăнне тирпейлерӗç. Çунса пӗтеймен татăксене никӗс çинчен илсе пуçтарчӗç. Урай хăмисем вырăнӗпе аванах тăраççӗ, сапнă шыв сыхласа хăварнă.

Марье тӗпсакай алăкне хирсе уçса аяла анчӗ. Хул хушшине пӗчӗк кăкшăм хӗстерсе тухрӗ. Аçу, Ваçанкка, упранă укçа пулмалла кунта. Укçана кăкшăмран илсе шутларӗç. Раман мучăшӗпе кӳршӗ ялтан кӗлет пури, кивӗрех çурт туянма килӗшсе килчӗç. Ниме пуçтарса турттарчӗç.

Сивӗсем пуçланиччен пӗренесене мăкласа улăм витрӗç. Çуркунне, акана тухиччен, çурта пурăнмалăх майларӗç. Раман мучăшӗ, Костинсем çемйипе Марьене кил-çуртне туса лартма пулăшрӗç. Ял-йыш та нимене пуçтарăнса ӗçлерӗ, Ваçанкка сывă чухне хăйсене пулăшнине манмарӗç.

Çу уйăхӗнче Марье ачисене приютран илсе таврăнчӗ.

Пурăнать-ха Унтакшă ялӗ, çырма пек шавласа иртет унти пурнăç. 1941 çулта Аслă вăрçă пуçлансан Марье виçӗ ывăлне те вăрçа ăсатрӗ.

Валери ТУКТАР

Валери Туктар (Валерий Александрович Мартынов) 1951 çулхи чӳк уйăхĕн 7-мĕшĕнче Аксу районĕнчи Çĕнĕ Аксура çуралнă. И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтне пĕтернĕ, çирĕм çула яхăн шкулта ачасене вĕрентнĕ, директорăн вĕренӳ енĕпе çумĕ пулнă.

Пирвайхи сăввисем Аксури «Ял пурнăçĕ» хаçатра, пĕрремĕш калавĕ «Хатĕр пул» (Шупашкар) журналта пичетленнĕ.

Халĕ Лениногорск хулинче пурăнать. Пултаруллă авторăн нумай сăввине Алексей Наумов, Анатолий Печников, Владимир Егоров тата Геннадий Садовников композиторсем юрра хывнă, вĕсене халăх ансамблĕсем сцена çинче шăрантараççĕ.

Валери Туктар «Шухăшăмсем – шурă кăвакарчăнăмсем», «Хĕр хули», «Пӳлер кĕввисем», «Хусан – Казань» тата «Чĕлхе çинчи сăмахсем» кĕнекесен авторĕ, Шамил Бикчурин ячĕллĕ прими лауреачĕ, РФ Писательсен союзĕн пайташĕ.

ЯЛТĂРМА

Калав

...пур шухăша пĕрле те шухăшласан,
ик куçăмран та куççуль ай тан юхать.
Чăваш халăх юрринчен.

Кируш такам макăрнă саспа вăранчĕ, тĕртсе тунă çивиттие хăй çинчен сирсе тăнларĕ. Унăн ăшă тӳшек çинчен тăрасси килмерĕ. Вăл пуçне минтер çинчен çĕклесе ыйхăллă куçĕпе тĕпел еннелле пăхрĕ. Сĕтел пуçĕнче амăшĕ салма татса тăрать. Кил-картиш еннелле каснă чӳрече патĕнчи вăрăм сак çинче мучăшĕ ларать. Вăл вĕсем патне час-час килсе çӳретчĕ. Паян мĕншĕн-тĕр тумтирне хывман, пуçĕнчи карттусне аллинче тытнă та тем çинчен калаçать. Арçын ача вĕсем калаçнине итлесшĕн, анчах мучăшĕ темшĕн çурма сасăпа калаçать. Вăл мĕн-тĕр пытарса калаçнăн туйăнчĕ Кируша. Çирĕм пилĕк çул ытла хĕсметре пулнă мучăшĕ сак çинчен тăрса:

«Кин, илсе килме Кукăркӳл больницине каятпăр», – салхуллă сассипе каларĕ алăк патнелле утса.

Ялтăрман, пăяхăшĕ тухса кайсан, куçĕ вĕри куççульпе тулчĕ. Хăйне лăпкăн тытма тăрăшсан та куççульне чараймарĕ: пичĕ тăрăх тумламăн-тумламăн юхса анчĕ, чăтаймарĕ – ӳлесе ячĕ. Амăшĕ кăшкăрса макăрни ачан чĕрине çĕмрен йĕппи тирĕнсе çурнă пек ыраттарать. Кируш вырăн çинчен тăрса ун çумне пырса тĕршĕнчĕ. Амăшĕ чунтан хурланса та хуйхăрса макăрнине астумасть вăл, анчах та унăн пичĕ тăрăх юхакан куççулĕ ачан чун-чĕрине хурлантарчĕ тата пăшăрхантарчĕ. Амăшĕн шурса кайнă сăн-пичĕ ăна тарăн шухăша ячĕ, çапах та вăл мĕншĕн татăлса макăрнине ывăлĕ чухлаймарĕ те, ăнланаймарĕ те.

– Анне, анне, ан ма-а-кăр!.. Анне, макăрмастăн вĕт? – лăплантарасшăн пулчĕ амăшне Кируш. Ялтăрман вĕри куççулĕ ик куçĕнчен тумлама пурпĕрех чарăнмарĕ: курăнман пусаркăч хĕстерсе лартнăн кăкăрĕ йывăррăн пăчăртанчĕ, сывлама йывăрланчĕ, аллинчи йывăç кашăкĕ урайне шалтăрт тухса ӳкрĕ, куçĕ те чарăлса кайрĕ, хăй тайăла-тайăла вăйсăррăн кăмака çумне тайăнчĕ. Унăн пуçĕнче пĕр шухăш çеç: «Ах, каллех-и?»

Виççĕмĕш ачине çуратнă хыççăн пуçланчĕ ку. Ыратни кăвапа йĕри-тавра çатăрласа илетчĕ те чăтма çук асаплантаратчĕ – хăть те ăçта кайса кĕр. Больницăра сипленнĕ хыççăн юлашки çулсенче чăнах та лăпланнăччĕ çав ыратни. Халĕ ак çĕнĕрен пуçланчĕ-ши? Паян Петрухан вилнĕ хыпарне илтсен аптранипе ыратрĕ ĕнтĕ.

Кируш амăшĕ тайăлса кайнине курчĕ те:

– Анне, анне! – тесе хăй те ӳлесе ячĕ.

– Анне, ан ӳк-ха... Анне, ан чирле... Анне... – куççуль витĕр амăшне хĕрхенсе калаçрĕ ачи. Ялтăрма ывăлĕн сассине илтмерĕ пулас, ури çинче те пĕр самант та тытăнса тăраймарĕ, унăн куçĕ хуралса килчĕ, пуçĕ çаврăннипе урайне тĕшĕрĕлсе ӳкрĕ. Амăшĕ ӳкнине курсан Кирушăн хăранипе сас-си çĕтрĕ, вăл читлĕхри вĕçен кайăк пек ним тума пĕлеймерĕ, чĕтресе хал-ран кайса тăчĕ. «Анне ăш чирĕпе аптракалатчĕ, анчах хальхи пек тĕшрĕлсе ӳкместчĕ», – шухăшларĕ хăй тĕллĕн Ялтăрман асли ачи. Амăшĕ мĕншĕн хытă пăлханнине ывăлĕ тавçăрса илеймерĕ, шухăша кайса ун çумне пĕшкĕнчĕ.

Кĕтӳ хăвалакансем килĕсене саланчĕç. Çумăр пĕлĕчĕсем хĕвел пайăркисене хупласа илчĕç. Ир каç енне сулăннăн туйăнать. Пӳрт ăш-чикки те хĕвел шевлисĕр ытла та кичеммĕн курăнать. Пӳртри шăплăх алăк уçăлнă сасăпа сирĕлчĕ.

– Аван-и? Манăн килес, – калаçса алăк урати урлă каçрĕ кӳрши. Вăл куштăрканă сулахай аллипе хăлăпран тытса пӳрт алăкне хупрĕ. Ăна хирĕç сас-чӳ пулмарĕ, вара сăмахне уçса:

– Кивçен илнĕ çур çăкăра леçме каçрăм та-ха, анчах манран маларах сирĕн пата хуйхă килсе çитнĕ иккен, – ассăн сывларĕ Синепи карчăк. – Усал хыпар утпа, ырри çуран çӳрет тесе ахаль каламан çав ваттисем.

Урайĕнче выртакан Ялтăрма, те уçă сывлăша пула, те кӳршин сасси-пе тăна кĕрсе вăй-халне пухса сак çине тăрса ларчĕ. Çак вăхăтра Кируш кĕпипе шăлаварне тăхăнса кутник сакки çине ларчĕ. Кил хуçи хăйне кăшт çăмăлтарах туйрĕ, тутăрĕ айĕнчен тухса сапаланнă çӳç пайăркисене

пуҫтарса майларӗ те тутӑрне тӳрлетсе ҫыхрӗ. Синепие, ҫур ҫӑкӑрне сылтӑм аллипе тытса алӑк патӗнче тӑракანскере:

– К-кил, и-иртсе лар, – чӗнчӗ вӑл тытӑнчӑклӑ сассипе.

Кируш вара амӑшӗпе кӳрши мӗн ҫинчен калаҫнине итлерӗ.

– Ҫынни ҫынахчӗ те ҫав, ӗмӗрӗ кӗске пулчӗ, – калаҫса Синепи малалла иртсе аллинчи ҫур ҫӑкӑра сӗтел ҫине хучӗ. Пӗрмеллӗ шупӑрне йӳле ярса тӑрӑхла сак ҫине ларчӗ. Сывлӑш ҫавӑрса илсе малалла калаҫрӗ. – Алли мӗне тӑратчӗ? Мӗнле ӗҫ тытсан та тирпейлӗ тӑватчӗ. Унӑн тимӗрҫӗре ӗҫлемелле марччӗ ҫав.

– Алли ылтӑн пулсан та тӑнӑҫ пурӑнма ӑсӗ пулмарӗ, – хирӗҫлерӗ кӳршине Ялтӑрма.

– Мӗн калам… Мӗн туса пама ыйтсан та яланах туса паратчӗ, нихӑҫан та тӑваймастӑп е манӑн вӑхӑт ҫук теместчӗ, – ырӑпа асӑнчӗ Петруха ҫинчен кӳрши.

Синепи сывлӑш ҫавӑрнӑ вӑхӑтра Ялтӑрма шухӑшсен авӑрне путрӗ: «Ултӑ ҫул иртрӗ ҫумри мӑшӑрӗ уйрӑлса ҫемйине пӑрахса кайнӑранпа. Паянхи кунччен ҫумра пулмасан та ачасен кусӗ умӗнчеччӗ. Халӗ вӗсем кама «атте» тесе чӗнӗҫ?..»

Синепи карчӑк чӗнмесӗр лараймарӗ.

– Эс, кин, мана ан ҫиллен те-ха, вилекене хӗрхенетӗп, сывви вӑл мӗнле йывӑр пулсан та пурӑнать.

– Ачамсем пӗчӗккӗ-ҫке… Ҫӑкӑр пӗҫерме ҫӑнӑхӑм ҫук, армана кайма тыррӑм ҫук, – кулянса калаҫрӗ кил хуҫи.

– Çаплине çапла-тăр та-ха, эп мĕн калам, пурнăçăм манăн та, пĕччен çыннăн, пылаках мар, – майĕпен тăсрĕ калаçăвне кинеми.

– Мĕнле пурăнмалла малашне? – кӳршинчен ыйтнăнах калаçрĕ Ялтăрма.

– Эс, кин, çамрăк çын, хăвна ху лăплантар, çирĕп кăмăллă пул.

– Ăш тĕрекĕ çук çав, сывлăхăм çирĕп мар, – хуравларĕ кил хуçи.

– Ав, Кируш мĕн пысăкăш! Часах çитĕнсе çитĕ, ун хыççăн кĕççĕннисем те.

– Сывлăхлă пулсан çителĕксĕр пурнăçпа та ӳсĕç-ха, – пĕлтерчĕ шухăшкăмăлне Ялтăрма.

– Алимент укçи нумай пулмасан та пулăшчĕ-ха сире, – йăпатасшăн пулчĕ Синепи карчăк Петруха арăмне.

– Юлашки çулсенче, хăй чирличчен ытларах колхозра мар, кӳршĕ ялсенче платникре çӳрерĕ, алимент укçи тӳлес мар тесе, – кăмăлсăрланчĕ Кирушăн амăшĕ.

– Мĕн калам эппин, шухăш-кăмăлĕпе Петруха пурпĕрех сирĕн çинчен шухăшланă пуль-ха.

– Темĕн-çке, пĕлейместĕп. Хам хăр тăлăх, ют çынсем патĕнче ӳсрĕм. Ачасене хăр тăлăха хăварас марччĕ. Епле те пулсан чĕрĕлесчĕ, – улшăннă сассипе калаçрĕ кил хуçи.

– Ну, эп каям-ха, вучах чертнĕччĕ, каярахпа каçса ларăп, – тесе Синепи карчăк тухса кайрĕ.

Урамра кĕрхи çанталăк. Синепи карчăкăн пит-куçне пӳртрен тухсанах сивĕ çил сĕртĕнчĕ. Кĕрхи хура-сивĕ пĕлĕтсем пĕрмаях шăваççĕ те шăваççĕ. Йывăççем хăйсен кĕрхи тĕрлĕ тĕслĕ илемлĕ тумне хывма та ĕлкĕрнĕ. Каççерен кӳлленчĕкри шыв пăрпа витĕнет, пĕлĕтсем çаплах юхаççĕ, кăшт та чарăнмаççĕ. Юр пĕрчисем сывлăшра çаврăна-çаврăна вĕçсе анса çĕр çине лăпкăн выртаççĕ. Кĕр кунĕсем иртсе пыни, шурă юрлă сивĕ хĕл çывхарса килни çинчен систереççĕ вĕсем.

Кӳрши тухса кайсан Ялтăрман çурчĕ каллех кичемлĕхпе тата шăплăхпа тулчĕ. Çак шанчăксăр кичемлĕхпе шăплăх чуна çӳçентерсе шиклентереççĕ. Паянхи кунччен Ялтăрма кичемлĕхе питех туймастчĕ. Малашнехи çинчен шухăшласа ĕмĕтленетчĕ. Пăяхăшĕ килсе хурлăхлă хыпар пĕлтернĕ хыççăн шутсăр пăшăрханать. Ун пуçĕнче тем тĕрлĕ шухăш явăнать. Пĕри çиеле тухать те хăвăрт явăнса ыттисемпе пĕрлешсе каять. Пӳртри шăплăха ывăлĕн сасси сирчĕ.

– Анне, мĕн пулнă ара? Мĕн тума макăратăн?

– Эх, ачам… Мĕн пулнă тесе ыйтатăн… – хурлăхлă сассипе куççульне тутăр вĕçĕпе шăлса калаçрĕ Ялтăрма.

– Ма каламастăн ара? – куçĕнчен пăхса ыйтрĕ макăрма чарăнайман амăшĕнчен Кируш.

Çак самантра Ялтăрма пуçĕнче каллех арпаша-арпаша шухăшĕсем явăнчĕç. «Мĕн тăвас?.. Чăнне калас-ши? Мĕнле калас?.. Мĕн калас-ха?…» Вара вăл пĕр шухăшне те суйласа илеймерĕ, ывăлне кĕттерсе те тăмарĕ.

– Аçусăр тăрса юлтăмăр, – терĕ чĕтрекен сассипе.

– Ăçта кайнă вăл? – пĕлесшĕн пулчĕ ывăлĕ.

– Аçу Кукăркӳл больницинче чирĕ аптратнипе вилнĕ, – пăшăрханса та шикленсе пĕлтерчĕ ывăлне Ялтăрма.

«Вилнӗ» сӑмаха илтсен Кируш чӗтренсе илчӗ, хытса кайрӗ, унӑн ҫурӑмӗ тӑрӑх сивӗ чупрӗ, сӑнӗ улшӑнчӗ, чӗнейми пулчӗ. Амӑшӗ ывӑлне ыталаса хӑй ҫумне ҫупӑрларӗ, хӑйне те пӗтӗм ӳт-пӗвӗпе темӗскерле вӑй чӗтретсе илчӗ. Ялтӑрмана ача чухнехи пурнӑҫӗ тӗлӗкри пек асне килчӗ.

«...Шкула вӗренме ҫӳреместӗмччӗ-ха, тете шкултан килсен кӗлет умӗнчи йӑмра айӗнче пӗрле выляттӑмӑр. Аттепе анне киле таврӑниччен кӗтӗве хирӗҫ кайса выльӑхсене кӗтсе илеттӗмӗр, вӗсене ҫӑкӑр чӗллипе илӗртсе хӑваласа килсе кил-картишне кӗртеттӗмӗр...»

Вӗри куҫҫульпе хӗрелнӗ куҫӗпе ывӑлӗ ҫине пӑхрӗ, ачи сӑнран кайса халсӑрланнипе ӑна лӑплантарас тӗллевпе эмел ӗҫтерчӗ, унтан вырӑн ҫине вырттарчӗ. Ялтӑрма лӑпланаймарӗ, унӑн чӗри йӗппе чикнӗ пек ыратрӗ, ачалӑхӗ куҫӗ умне каллех тӗлӗкри пек тухса тӑчӗ.

«...Ҫур ҫӗр тӗлӗнче пӳрт алӑкне кӗмсӗртеттерсе шакканипе пурте вӑрантӑмӑр. Кӑраҫҫын лампи ҫунакан пӳрте милици тумӗллӗ виҫӗ арҫын кӗрсе тӑчӗҫ. Аттепе аннене урай варрине тӑратрӗҫ, пӗри хуралласа тӑчӗ, иккӗшӗ пӳрт ӑш-чиккине ухтарчӗ. Аттен ҫӳлӗк ҫинчи кӗнекисене тустара-тустара урайне пӑрахрӗҫ. Арчари япаласене те кӑлара-кӑлара тем шырарӗҫ. Пӳртре тустарман япала тата вырӑн хӑвармарӗҫ. Аттене аннепе калаҫтармасӑр, темле ҫырулла хут кӑтартса вулаттарчӗҫ те ҫӗрлех тытса кайрӗҫ. Анне пире, ыйхӑлласкерсене: «Аҫуна каялла киле ыранах яраҫҫӗ», – тесе йӑпатса ҫывӑртрӗ. Миҫе хутчен укӑлча хапхи патне каймарӑмӑр-ши аттене кӗтсе илме, анчах та кашни кун кӗтсен те кӗтсе илеймерӗмӗр. Кам тата мӗншӗн ҫӑхав ярса аттен пуҫне ҫирӗ-ши?...» Ҫак асаилӳпе кил хуҫи тӗпеле кӗрсе ӗҫе пикенчӗ.

* * *

Йывӑр аманнӑ Петрухан суранӗсем вӑрҫӑ чарӑннӑ хыҫҫӑн виҫ уйӑхран тин пирчерӗҫ. Унпа пӗрле сывалса ҫитнӗ вырӑс тата мӑкшӑ арҫыннисене те килӗсене ячӗҫ. Вӗсем Саратов госпиталӗнче сывалакансемпе ытакланса сывпуллашнӑ хыҫҫӑн инҫе ҫула тухрӗҫ. Петрухан тӑван ялӗ Чулман Атӑл тӑрӑхӗнче вырнаҫнӑ.

Тӑван тавралӑх! Мӗнле ытарайми илемлӗ Сӗнче тӑрӑхӗ. Ҫуркунне ешерекен улӑх, пыл хурчӗсем вӗҫекен ҫаран, карӑш, куккук сассиллӗ вӑрман! Сӗм авалтан хӑват панӑ Сӗнче хӑйӗн хӑвачӗпе пур чӗрчуна. Сӗнче тӑрӑхӗнче ларса тухнӑ вырӑс, тутар тата чӑваш кӳршӗллӗ ялсенче туслӑ пурӑнаҫҫӗ. Чӑннипех илемлӗ Сӗнче енӗ, кунта ӗҫчен халӑх пурӑнать. Хастар ҫамрӑксем ӗҫре пиҫнӗ, ҫырла пек чипер хӗрсем уявсенче хӑйсен юррисене ҫепӗҫҫӗн шӑрантараҫҫӗ. Ача чух выляса-чупса ҫӳренӗ вӑхӑтсем аса килеҫҫӗ. Эх, ырӑ та савӑк ҫамрӑклӑх. Ҫар госпиталӗнчен таврӑнакан салтакӑн чунӗ хӑпартланса, савӑнса кайрӗ, сиккелесе чупса каяс килчӗ ун. Пӗр-икӗ утӑм турӗ те чарӑнса тӑчӗ, суранӗсем хӑйсем ҫинчен аса илтерчӗҫ. Акӑ Ҫӗнӗ Шуршыв курӑнса кайрӗ. Пӗрремӗш хут курнӑ пек кашни кӗтесе сӑнарӗ вӑл. Кашни ҫурт, карта-пахча, урамсемпе тӑкӑрлӑксем чуна ҫывӑхҫке. Шӑнкӑрч йӑвиллӗ ҫӑка хыҫӗнчен курӑнакан улӑмпа витнӗ пӳрт – вӗсен килӗ. Ӑна курсан карт! туртӑнчӗ салтакӑн чӗри.

Тӑван кил-ҫурчӗ Петрухана пит кичеммӗн кӗтсе илчӗ. Вӑл илемсӗррӗн

курӑнать, хуҫасӑр тӑрса юлнӑ пӳрчӗ умне утса ҫитсен унӑн кӑмӑлӗ хуҫӑлчӗ, куҫҫулӗ пӑчӑртанса тухрӗ, ҫавра пичӗ тӑрӑх тумласа юхрӗ. Вӑл ҫил хапхине уҫса килкартишне кӗчӗ: курӑк пусса илнӗ, тӗл-тӗл мӑян та ӳсет. Кивӗ ҫуртӑн улӑм ҫивиттийӗ самаях пусӑрӑннӑ, вырӑн-вырӑн путӑкӗсем те курӑнаҫҫӗ. Тусанланнӑ чӳрече кантӑкӗсем тӗксӗммӗн курӑнаҫҫӗ. Пӳртӗн алӑкӗ ҫинче ҫакӑнса тӑракан ҫӑра тутӑхма пуҫланӑ. Шухӑша кайса салтак нумайччен пусма ҫинче пирус туртса ларчӗ, унтан аллинчи сӳнмен пирус тӗпне курӑк ҫине пӑрахса таканлӑ аттин кӗллипе лапчӑтса сӳнтерчӗ те кӳрше каҫрӗ.

– Кӗр, кӗр! Килтех, – илтӗнчӗ шалтан хӗрарӑм сасси. «Кам ҫапла шаккаса ҫӳрет-ши?» – шухӑш вӗҫрӗ Синепи пуҫӗнче. Пӳрте салтак тумӗ тӑхӑннӑ арҫын кӗрсе тӑчӗ. Тӗмсӗлсе те, тинкерсе те пӑхрӗ Петруха ҫине Синепи, анчах палласа илеймерӗ. «Тахҫан курнӑ пек те, тен, куҫӑм арпаштарать», – пӳртне кӗрсе тӑнӑ арҫын ҫине пӑхса тӗлӗнчӗ кӳрши.

– Аван-и, кинеми! – аллине тӑсрӗ Петруха урай варринче тӑракан Синепие хирӗҫ утса.

– Чим-ха, чим… Петруха сасси мар-и ара? – хӑйӗн кӳршине палланипе савӑнса калаҫрӗ ҫитмӗлтен иртнӗ хыткан карчӑк.

– Эпӗ, эпӗ, Петруха, – хуравларӗ Микулайӑн аслӑ ывӑлӗ. – Таврӑнтӑм, вӑрҫӑран сывах таврӑнтӑм.

– И-и, ачам, аҫу сире мӗнле кӗтсен те кӗтсе илеймерӗ, – кулянса сӑмах хушрӗ кӳрши.

– «Ак, паян ҫитӗҫ, ак, ыран таврӑнӗҫ», – тесе кашни кун, куҫӗ хупӑниччен, чунӗ тухиччен сире кӗтрӗ. Синепи Петрухапа тата та калаҫасшӑнччӗ, тӑватӑ ҫул иртнӗ-ҫке кӳршӗ Микулайӑн аслӑ ывӑлне вӑрҫа ӑсатнӑранпа, анчах та салтак Синепирен ҫӑра уҫҫине аллине илсе хӑй ҫуралса ӳснӗ килҫуртне пусӑрӑнчӑк кӑмӑлпа каҫрӗ.

Салтакран таврӑннӑ-таврӑнманах тӑван колхозри бригадир Петрухана кӳршӗ районти вӑрмантан пӗрене-кӗрешсем лавпа турттарма ячӗ. Унпа пӗрле йӗкӗтсем те лавра ҫӳреҫҫӗ. Йывӑҫсене касса ӳкерекенсем тата вӗсене сыпӑлакансем пурте Петруха ялӗнчен – Ҫӗнӗ Шуршыв ҫыннисем. Вӑрман касакансен, сыпӑласа хатӗрлекенсен тата тиесе тӑракансен ӗҫӗсене Улатимӗр йӗркелесе тӑрать. Унӑн сылтӑм питӗнчи суранӗн пысӑк ҫӗвви палӑрать, кӑтра ҫӳҫӗ кӑвакарса шуралнӑ. Шупка сенкер куҫлӑ, вӑтӑр пиллӗкелле ҫывхарнӑ арҫын, аманнӑ сылтӑм урине сӗтӗрсе утать, анчах туя ҫине таянмасть. Ӗҫлекенсемпе пит япшар калаҫать, шӳтсем каласа парса пурне те култарать, хӑй те ҫынсемпе пӗрле кулса илет. Ытларах вӑл ҫамрӑксене ӑнлантарса тата кӑтартса тӑрать. Вӑрман касакансене ушкӑнсене уйӑрнӑ: тӗпрен касакансем; туратсене иртекенсем; иртнӗ туратсене пуҫтарса йӑтса купалакансем килӗштерсе меллӗн ӗҫлеҫҫӗ. Тӗпрен касса яракансен алӑ сыпписем ывӑнсан, туратсем пуҫтаракансемпе, е туратсене касса иртекенсемпе ылмашӑнаҫҫӗ. Пӗр ушкӑнне Ялтӑрма, Петрухапа пӗр урамра ҫуралса ӳснӗскер, йӗркелесе тата тӗрӗслесе тӑрать, хӑй те ушкӑнрисемпе пӗрле ӗҫлет. Кунта унӑн тантӑшӗсем Алтатти, Илтепи, Пинепи, Утрепи, Унихӗр, Пинеслу тата Тӳнеслу тӑрӑшса вӑрман касаҫҫӗ.

Ялтӑрма ҫамрӑк каччӑ вӑрҫӑра пулнӑ ҫулсенче ҫитӗнсе чиперленнӗ. Унӑн вӑтам йӑрӑс пӗвӗ, ҫавра тулли пичӗ, хура-хӑмӑр куҫӗсем, чӑмӑр кӑкрисем

хӑйсен илемӗпе пит илӗртеççӗ. Çамрӑк хӗрӗн çӑра куç харшийӗсем, вӑрӑм çивӗчӗ ӑна тата та ытларах чиперлетсе илем кӳреççӗ. Ӗçлеме вара вут та пӑрӑç ӗçлет. Ялтӑрма усравра ӳснӗ тӑлӑх хӗр. Çитменнине, тетӗшӗ вӑрçӑра хыпарсӑр çухалнӑ, кӗçӗн йӑмӑкне кӳршӗ районти Чӑваш Шупашкар ялӗнчи ача-пӑчасӑр çемье усрава илнӗ. Халӗ вӑл хулара пурӑнать. Вӑл йӑмӑкне ют яла усрава панӑранпа та кайса курман. Юнашар тӑрса тӗл пулсан та ниепле те пӗр-пӗрне палласа илес çук. Ялтӑрмана ачапча чухнехи пурнӑçӗ çинчен Пикушсен Калмӑрса ятлӑ ват куккӑшӗ – амӑшӗпе пӗртӑванӗ – каласа панинчен çеç пӗлет.

Пӗр ирхине пурин те лавсем тиемелле пулчӗ. Чукун çул станцине нумай вакун килсе çитнӗ пирки вун çичӗ лав çумне тата пиллӗк хутшӑнчӗ. Ялтӑрма та ыттисемпе пӗрле пӗренесене лав çине тиеме пулӑшрӗ. Хӗрсемпе каччӑсем шӳтлени вӑрманта ян-ян кайса тӑрать. Вӗсем Çӑварнире кама çураçмалли тата Çимӗкре камӑн туйне тумалли çинчен калаçса пӗренесене лавсем çине тиеççӗ. Ялтӑрма юлашки пӗренесене лав патнелле Петрухапа юнашар тӑрса йӑвантарчӗ. Çак самантра ӑна тӗлӗнмелле çепӗç туйӑм тыткӑнларӗ. Каччӑ хӑйпе юнашар ӗçлекен пике çине куç хывмасӑр чӑтаймарӗ. Ялтӑрма та салтак тумлӑ Петруха çине ӑшшӑн пӑхрӗ. Вӗсен сӑн-пичӗ именчӗклӗн писевленчӗ, çӳхе тутисем вӑтанчӑклӑн кулса илчӗç. Чӑтаймарӗ Петруха сӑмах хускатмасӑр:

– Пит килӗштерсе сатур ӗçлетӗр, хӗрсем, – терӗ вӑл, хӑй вара пӗр урамра ӳснӗ хӗр çинчен куçне ниепле те илеймерӗ.

– Эпир вӑрман «уписем-çке», – шӳтлерӗ Ялтӑрма каччӑ çине ӑшшӑн пӑхса.

– Хăш вăрман «уписем» пулатăр-ха? – парăмра юлас мар терĕ Петруха юптарса. Ушкăнпа йăтса тиенĕ пĕренесене вăл вĕренпе çыхса пăркăчпа пăркăчларĕ. Тепĕр самантран пĕрене тиенĕ лавсем тапранчĕç, вăрмантан тухса чукун çул станцийĕ еннелле кайрĕç.

Хĕллехи Микула праçникĕ çывхарса килет. Вăрманти пас тытнă хурăн, ăвăс, юман тата хыр йывăççисен турачĕсем хăйсен илемĕпе илĕртеççĕ. Çуна тупанĕсен йĕрĕсем кăпăшка юр çинче йĕрленсе ӳкерĕнчĕç. Уй-хирпе вăрманти тумхахсем юрпа витĕнсе хупланнипе çул-йĕрсем такăрланчĕç. Вăрман касакансем çул çинче, хваттерĕсене таврăннă май, ĕç кунĕ ӳсĕмлĕ иртнипе савăнса такмакласа юрлаççĕ. Лав çине ларсан юрлама пуçлаççĕ те мĕн Пухтел ялне çитсе кĕриччен хĕрсем юрăсем шăрантараççĕ. «Çĕнĕ юрпа – çĕнĕ юрă», – теççĕ халăхра. Паян та Пинепи, юрлама юратаканскер, пуçларĕ:

Эх, сипарат-сипарат
Кукăр-макăр юхтарать.
Манăн савни салтакра
Çыру çырса тултарать.

Иккĕмĕш лаври Пинеслупа Тӳнеслу тус-тантăшĕ хыççăн харăс такмакласа юрларĕç:

Шур куяна курсан салам калăр,
Ан кăшлатăр ăвăс хуппине.
Ман савнине курсан салам калăр,
Ан çӳретĕр ют ял хĕрĕпе.

Тепĕр лав çинче тилхепе тытса пыракан Ялтăрма та хăйĕн уçă сассипе малалла шăрантарчĕ:

Кĕпер çинчен шыв юхать,
Йĕтĕн пирне шыв илет.
Савнине савни илет,
Савманнине кам илет?

Çул тăрăх юрласан вăрман касакансене вăрăм çул кĕскелнĕн туйăнать. Çапла çав вăл çамрăклăх – çунатлă туйăм. Ĕçрен таврăнса апат çиетĕн те ĕшенни те иртсе каять. Хĕллехи вăрăм каçсенче клуба кайса кино е ял çамрăкĕсен пултарулăх ушкăнĕн концертне курса киленетĕн, тепĕр чух вăйă картине кĕрсе юрласа хавхаланатăн.

Петруха Ялтăрмана куç хывнăранпа канăçне çухатрĕ. Кашни пулăм-самантра хĕрсен ушкăнĕнче чун-чĕрине килĕшекен хĕре шырать. Ялтăрмана тантăшĕсемпе пĕрле курсан вăл чун хавалĕпе хĕпĕртет. Вăйăран салансан савнине ăсатма çӳрет каччă. Кун пек савăнăçлă каçсем лавра çӳрекен Петрухана ялан тӳр килмеççĕ. Ытти лавçăсем пекех чукун çул станцийĕнче е çул çинче кунне-çĕрне иртерет вăл. Çурхи шыв пуçланиччен, çуна çулĕ пĕтиччен вăл Нурлатри чукун çул станцине лавпа çӳрерĕ.

* * *

Пурнăç урапи пĕрмай малалла кусать. Çут тĕнчен хăйĕн тытăмĕ пур. Вăл хăйне евĕр хитре. Этемшĕн те пит илемлĕ çут тĕнче. Çын та çутçанталăкăн

пулӑмӗсене пӑхӑнса-йышӑнса пурӑнать. Ҫуллахи Микулара, уяв пуҫланнӑ каҫ, Ялтӑрмана ҫураҫрӗҫ. Авалхи йӑлапа Ҫимӗкре ҫамрӑк мӑшӑрӑн туйӗ кӗрлерӗ. Ял Канашӗн ҫуртӗнче пӗрлешнине ҫирӗплетекен документа вӗсене ӑшшӑн саламласа тыттарчӗҫ.

Пурнӑҫ малалла шӑвать. Амӑшӗн варӗнче пепке те майӗпен чӑмӑртанать, амаланать, ашшӗпе амӑшӗ патне ҫутӑ тӗнчене тухассишӗн тапаланма пуҫлать.

Петруха ялти тимӗрҫӗре ӗҫлет, Ялтӑрма колхоз ферминче сурӑхсем пӑхать. Ҫамрӑк мӑшӑр пӗрремӗш ачи ҫураличчен пит килӗштерсе, «пӗр ҫӑвартан» тенӗ пек пурӑнчӗ. Вӗсем ывӑлне Кируш ятлӑ хучӗҫ. Анчах та ывӑлӗ ҫуралнӑ хыҫҫӑн ҫук-ҫук та, кӗтмен ҫӗртен харкашу сике-сике тухрӗ. «Ҫемьере чашӑк-тирӗк шакӑртатмасӑр ҫӑвӑнмасть», – теҫҫӗ мар-и? Петруха тимӗрҫӗ лаҫҫинчен ялан каҫа юлса, ҫитменнине хӗрӗнкӗ таврӑнать. Ҫапла, арӑмӗпе упӑшки хушшинчен «хура кушак» чупса каҫнӑ тейӗн. Упӑшки хирӗҫесшӗн тӗрлӗ сӑлтав шырать. «Яшкуна тӑварлӑ пӗҫернӗ» е «яшкуна мӗншӗн тӑвар каламан» тесе чӗрре кӗрет. Арӑмӗ кил-ҫуртри платник ӗҫӗсене тутарттарасшӑн мӑкӑртатать. Апла пулсан та Микулайӑн аслӑ ывӑлӗ тимӗрҫӗ лаҫҫинчи ӗҫне пӗтерейместь, унта вӑл кунӗн-ҫӗрӗн ӗҫлет.

Хӗвел тухса пытанать, кун хыҫҫӑн каҫ килет, эрне хыҫҫӑн эрне сисӗнмесӗрех иртет, ҫапла ҫулталӑк ҫаврӑнса-таврӑнса килет. Вӑл та хӑйӗн урапине малаллах кустарса чупать. Ҫӑварни кун Ялтӑрма иккӗмӗш ачине ҫуратрӗ. Ҫемьере тепӗр ҫӗнӗ кайӑк хутшӑнчӗ, ӑна Елюк тесе чӗнеҫҫӗ. Виҫҫӗри Кируш та савӑнать. Хӑйӗн йӑмӑкӗпе вӑл пит вылясшӑн:

– Хӑҫан мана унпа выляттаран? – йӳтетсе ҫӳрет ывӑлӗ амӑшӗ Елюка кӑкӑрне ӗмӗртме ларсан.

Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче хуҫасӑр юлнӑ ҫурт-йӗр юхӑнса ҫитнӗ. Хӗллехи сивӗ каҫсенче урайӗнче ларакан витрери шыв сӗлкӗшленсе пӑрланать. Ачисем сулхӑн пӳртре вырӑн ҫинче икӗ утиялпа витӗнсе ҫывӑраҫҫӗ. Ҫу кунӗнче Ялтӑрма пӳртне сӳтсе юсаттарасшӑн пӑшӑрханать, анчах упӑшки иртен тытӑнса ҫӗрлеччен тимӗрҫӗ лаҫҫинче – ӗҫре. Нумай вӑхӑт хушши пуҫне ватса ҫӳрерӗ хӗрарӑм. «Мӗнле юсаттарас-ши пӳрте?» – текен шухӑш туха пӗлмерӗ унӑн пуҫӗнчен. Вара Ипрел тутарӗсене тара тытма шутларӗ. Ҫурт-йӗрне сипленӗшӗн ҫӗнӗ ыраш парса тӳлесси ҫинчен платниксемпе калаҫрӗ вӑл. Тара килӗшекенсем пӗр турткаланмасӑрах унпа килӗшрӗҫ.

Ялтӑрма пӳртне сӳтсе хӑпартнӑ эрнесенче нумай шараҫланчӗ. Яшкаҫӑкӑр пӗҫерсе хатӗрлеме кашни кун кӳршине миҫе хут хутламарӗ-ши? Ачисемпех каҫрӗ. Юрать-ха ыр кӑмӑллӑ Синепи кинеми вӗсене тарават йышӑнать. Петруха арӑмӗ мӗнле йывӑр пулсан та нӑйкӑшмасть. Платниксене кӑмӑлтан пӑхать. Апат-ҫимӗҫне вӑхӑтлӑ пӗҫерсе ҫитерет. Платниксем, лайӑх апатлантарнине кура, тӑрӑшса кал-кал ӗҫлеҫҫӗ: хӗвел тухсанах ӗҫлеме тытӑнаҫҫӗ те мӗн хӗвел анса ларичченех тӑрӑшаҫҫӗ. Ахаль каламан ҫав: «Халӑх сурать – кӳлӗ пулать, пӗччен сурать – типсех пырать», – тесе. Ипрел тутарӗсем пит тӑрӑшса ӗҫлесе пӗрремӗш Сӑпаса Петрухапа Ялтӑрман килйышне ҫӗнетес ӗҫӗсене пӗтерсе савӑнтарчӗҫ.

* * *

Пуçĕ ыратнипе Петруха куллен аптрать. «Иртсе кайĕ-ха... Кашни çыннăн ыраткалать вĕт... Вилмеççĕ-çке...» – шухăшларĕ вăл хăй тĕллĕн вăйсăрланиччен. Сархăват е пĕтнĕк курăкĕсен шĕвекне пылпа чей вырăнне ĕçет те пуçĕ сурма чарăнать. Анчах тепĕр самантранах каллех ыратма пуçлать, çитменнине унăн хăлхисем те пӳрленсе юхаççĕ. Петруха пуç чирĕпе аптранă текен сас-хура ял тăрăх çиçĕм хăвăртлăхĕпе сарăлчĕ.

Каçкӳлĕм Петруха патне пĕртăван шăллĕ кĕрсе тухрĕ. Вăл Кулинепе пурăнакан тăванĕ патне унччен те хутран-ситрен çеç кĕркелесе тухатчĕ. Тетĕшĕ çырăнса пĕрлешнĕ арăмне тата ачисене пăрахса кайнипе унăн чун-чĕри ăна тăван вырăнне йышăнманнипе час-час кайса çӳремерĕ. Паян та ĕç хыççăн çеç килне таврăннă май кĕчĕ. Элекçее тетĕшĕн сăнран ӳкнĕ пит-куçĕ, ырханланнă ӳт-пĕвĕ тĕлĕнтерчĕ те, пăшăрхантарчĕ те, шухăшлаттарчĕ те. Вырăн çинче выртаканскере вăл:

– Тете, санăн больницăна каймаллах, – хистесе калаçрĕ Патя, Микулайăн вăтăр икке кайнă кĕçĕн ывăлĕ, тетĕшĕ пекех Аслă вăрçăра пулнăскер.

– Килтисем те пульницанах каймалла теççĕ мана, – пăлханса тухрĕ чирленĕ Петрухан сасси.

– Каймаллах, мĕнле каймалла мар? Килте выртнипе сывалаймастăн, – хăйĕн шухăш-кăмăлне пĕлтерчĕ тетĕшне шăллĕ.

– Хуньăм илсе кайма килĕшрĕ те-ха, каймаллах пуль, – больницăна каяс шухăшпа килĕшнине пĕлтерчĕ вăй-халĕ чакса пыракан вăтăр тăваттăри Петруха.

Шăллĕ чирленĕ тетĕшне ытлашши пăлхантарас мар тесе хăйă çутас умĕн Кулинесем патĕнчен тухса чун-чĕри пăшăрханнипе килнелле тарăн шухăша кайса утрĕ.

Петрухана виçĕ эрне ытла чирлесе выртнă хыççăн вăйсăрланса çитсен тин хуняшшĕ – виççĕмĕш арăмĕн ашшĕ Кашук Çеркейĕ (ял халăхĕ ăна çапла чĕнет) Кукăркӳл больницине лав çине вырттарса илсе кайрĕ. Кулинен ашшĕ чаплă платник-ăстаçă. Вăл сарлака хул-çурăмлă, тĕреклĕ те кĕрнеклĕ, çаврака пит-куçлă, шĕвĕр кĕске сухаллă, лутрарахскер, ĕçлеме ӳркенмен, кĕпер хывакан, тирпейлĕ арçын. Çулĕпе çиччĕмĕш теçеткене çитнĕскер, çӳпçе-чĕрес, шетник-катка ăсталать. Урапа кустăрми çапасси, çуна тупанĕ авасси унщăн йывăр ĕç мар.

Шупка çамкаллă тур лаша чупса ăшша пиçсе тарларĕ, платник-ăстаçă тилхепине кăшт пушатрĕ, вара юртма чарăнса янавар малалла ярăнса утрĕ. Çул çинчи тусан урапа кустăрмисемпе явăнса çĕр çийĕн çĕкленсе йăсăрланать. Петруха, вăйран кайнипе çул тăршшĕпех урапа çине сарнă тӳшек çинче выртса пычĕ. Унăн пуçĕ те, ăш-чикĕ те ыратать, вăхăт-вăхăт куçĕ хуралса каять.

Шуршыв урлă хывнă кĕпер çийĕпе каçса лав Анат Паланлă витĕр тухрĕ. Кăнтăрла иртсен ĕлĕкхи вулăс кантурĕнче вырнаçнă Кукăркӳл больницине çитсе чарăнчĕ. Петрухан чирĕ палăрмаллипех палăрнă ĕнтĕ, çавăнпа та ăна çитнĕ-çитменех выртма йышăнчĕç, вăйран кайнăскере, наçилкке çине вырттарса йăтса кĕчĕç. «Сана чĕрĕлме Турă пулăштăрах, кĕрӳ», – тесе сывпуллашрĕ Кашук Çеркейĕ Петрухапа. Платник-ăстаçă больницăран

тухсан: «Çӗрлеччен киле çитсе ӳкесчӗ ман», – шухăшпа хыпаланса урапи çине ларса лашине тапратрӗ.

* * *

Кируш эмел ӗçнӗ хыççăн хăмăр куçӗпе мачча çинчи турат куçне пăхса выртса тӗлӗрсе кайрӗ. Пӳртре нимӗнле сас-чӳ илтӗнмерӗ, амăшӗ тӗпелте кăштăртатни унăн хăлхине кӗмерӗ. Вăл тӗлӗк тӗлленчӗ.

Тӳпери хӗвел вӗсем çине шевлине сапаласа кулса пăхать. Ак, вӗсем ярмăрккăна çитрӗç. Ярмăрккăна килсе çитнӗ лав хуçисем çыран хӗррипе лашисене тăварса утă параççӗ. Тепӗр енче лавккасем вырнаçнă, кашни сутуçă патӗнче халăх хӗвӗшет. Хӗрарăмсемпе хӗрсем çӗнӗ тумтир туянаççӗ. Арçынсем те вӗсенчен юласшăн мар. Ача-пăча черетӗн-черетӗн лимонад сутакан çӗрте тăрать. Ярмăркка ирттерекен пысăк тӳремре аякранах карусель çаврăнни тата малалла-каялла çынсем çӳрени курăнать. Пӗрисем – ун ларкăччисем çине ларса ярăннисем – анаççӗ, теприсем – черетрисем – вӗсем çине ларса вырнаçаççӗ. Халăх пӗрмай хӗвӗшнипе вăрманти кăткă тӗмине аса илтерет. Карусельтен кăнтăр еннелле те суту-илӳ тăвакансем ретӗн-ретӗн вырнаçса ларнă. Кашни сутуçă хăйӗн тӗрлӗ-тӗрлӗ япалисемпе хатӗрӗсене туянакансене сӗнет. Суту-илӳ ретӗнче çӳренӗ вăхăтра ашшӗ Кируша илемлетнӗ, куçа илӗртекен тăм шăхлич илсе пачӗ, амăшне тӗрленӗ çӳçеллӗ тутăр туянса çыхтарчӗ. Унтан вӗсем те карусель çине ларса ярăнчӗç. Ашшӗпе амăшӗн пит-куçӗ те хаваслă. Кируш çӗнӗ шăхличне шăхăртса савăнăçлăн утса пыратчӗ, сисмерӗ те – такăнчӗ те аллинчи шăхличӗ çерем çинчи чул çине ӳксе ванчӗ. Шăхличӗн катăкӗсем çине пăхса макăрса ячӗ Кируш…

Савăт-сапа çăвакан Ялтăрма ывăлӗ макăрнине илтсе тӗпелтен тухса вырăн патне пычӗ.

– Мӗншӗн макăратăн, ачам? – шăппăн ыйтрӗ вăл ывăлӗнчен.

Амăшӗн сассипе Кируш ыйхăран вăранчӗ.

– Шăхлич ванчӗ ман, – калаçрӗ ыйхăллă сассипе ывăлӗ.

– Мӗнле шăхлич? – ним ăнланаймасăр ыйтрӗ амăшӗ.

– Атте илсе пани ара, – ăнлантарасшăн пулчӗ ывăлӗ амăшне.

– Хăçан? – ăнланайманнипе тӗлӗнсе каллех ыйтрӗ Ялтăрма.

– Ярмăрккăна кайсан, – терӗ тăрса ларса Кируш.

– Тӗлӗк куртăн-им?

– Те тӗлӗкре, те чăнах… – темшӗн татса калаймарӗ ывăлӗ салхуллăн тата кулянса хăй умӗнче тăракан амăшне.

* * *

– Манăн килес? – илтӗнчӗ Синепи карчăк сасси уçăлнă алăк патӗнчен.

– Кӗр, кӗр, иртсе лар, – чӗнчӗ Ялтăрма пăшăрханнă сассипе лăпланса çитейменскер. Синепи хăйӗн яланхи шупăрӗпе. Алăк патӗнчи тăрсак çине ларса Петрухан малтанхи арăмӗпе калаçма пуçларӗ.

– Эп сан хуйхуна пусарасшăн татах каçрăм, çилленместӗн-и?

– Кирлӗ мара ан калаç-ха, кинемей, кӳршӗ-аршă килсе çӳренӗшӗн мӗн тума çилленес-ха?

– Эс хуть мĕн кала та, кин, вăл сире пăрахса кайнă хыççăн ырă пурнăç кураймарĕ.

– Çапла çав, Ултутья патĕнче вăрман касрĕ, пӳрт пури пурарĕ. Пӳртне туса пĕтерейменрĕ, тепĕр арăм шырарĕ – Кулинене, икĕ хут качча кайса уйрăлнăскере, çулăхрĕ.

– Кулинепе пĕрлешсен, çынсем патĕнче хваттерте çӳресе йăлăхсан, тепĕр çĕнĕ çурт лартрĕ, – çирĕплетсе калаçрĕ кӳрши. – Пĕренисене Меречен вăрман хуралçи панă терĕç.

– Эп никамран та тĕпчемен, пĕлейместĕп, – кӳршине пӳлсе калаçрĕ Ялтăрма.

– Пӳртлĕх вăрман панăшăн Петруха вăрман хуралçи валли те пĕренесем пĕчченех тиесе турттарса панă тесе мана хамăр касри бригадир Якур каласа пачĕ. Вăрмана вăл ялан ик лав кӳлсе пĕчченех çӳренĕ, лаша пăхакансенчен асли пулнăскер.

– Эпир уншăн ытлашши пултăмăр çав, – сӳрĕкреххĕн тухрĕç Ялтăрман сăмахĕсем. – Уйрăлса япалисемпе пур савăт-сапана тиесе кайнă чухне: «Ачусемпе пĕрле выçă вилетĕн», – тесе хăварчĕ вăл мана. Ку сăмахсем чĕрене çĕçĕпе каснă пек кĕрсе ларнă та ниепле те манăçмаççĕ.

– Çула май хăйне валли те ик лавпах пĕрене тиесе таврăннă тесе калаçаççĕ Анаткасри арçынсем, – пĕлтересшĕн пулчĕ Синепи Ялтăрмана.

– Вăл тар тăкни тата тăрăшни ют çын ачисем валли юлчĕ.

– Пĕренисене турттарса пĕтеричченех выртмара çӳренĕ, пĕр нушасăр çурт лартаймăн çав, – сăмахне малалла тăсрĕ Синепи.

– Урайне çитес çул çĕнĕ хăма сарăпăр тесе киввисенех сартарчĕ пӳрте юсанă çул, пĕр çулталăка кивви те чăтĕ-ха терĕ, – Петрухан сăмахĕсене аса илсе калаçрĕ кил хуçи.

– Кулинесен урай хăми пыл каткинчен те сарлакарах. Çав урай валли кĕреш тиеме кайсан, мĕкĕрленсе йăтнипе, пуç чирĕпе тепĕр хут аптранă вăл, пӳрленсе тăракан хăлхисем çĕнĕрен юхма тытăннă. Ку хыпара эп тахçанах илтнĕччĕ, – Петрухана шеллесе-хĕрхенсе калаçрĕ кӳрши.

– Кирушпа Елюкăн тĕслĕ кăранташĕсем сĕтел çинчен ӳксен урай хăмин хушăкĕсенчен тĕпсакайне анса каяççĕ, – кăмăлсăрланчĕ Ялтăрма.

– Çаплине çапла та-ха, кин, эп мĕн калам, Петруха телейсĕр пулчĕ, ман шутпа.

– Хăй телейсĕр пулни çитмерĕ ĕнтĕ ăна, ачасене те телейсĕр тăвас терĕ пуль.

– Ăна Ултутья та, Кулине те тирпейлĕ те чиста тумтирпе çӳретмерĕç, сан пек кăмăлласа пăхаканни никам та пулмарĕ. Чăкăт пек шурă пуртенккепе çӳретрĕн.

– Çапах та эп ăна юраймарăм, килĕшеймерĕм, унăн кăмăлне каяймарăм пулас. Тен, ăнланаймарăм, хаклаймарăм çумра чухне, пĕрле пурăннă вăхăтра. Пурнăçăм ванчăкĕ çине текех хĕвел пăхмасть, ун шевли те ăшăтмасть. Кĕлленнĕ вучах çийĕн хаваслă хĕлхем ташламасть. Пĕлеймерĕм пулас ăраскалăма упрама. Чӳрече кантăкĕ пек ванчĕ пурнăçăм пĕр самантра. Тепĕр тесен, этем ырă мар шухăш тытсан, кам пĕлет?

– Тен, йӳçĕ сăра ĕçтерсе пуçне çавăрчĕç-тĕр, – ыйтса пĕлесшĕн калаçрĕ Синепи пуçĕпе сĕлтсе.

– Ҫынран хӑйӗнчен нумай килет. Ху ӑс-тӑнлӑ пулсан никам та сан пуҫна ҫавӑраймӗ.

– Ҫаплине ҫапла-тӑр та-ха, кин, эп мӗн калам, Петруха вӑрҫӑран таврӑнсанах ӗҫкӗпе ашкӑнмастчӗ. Мӗн ҫитмерӗ ӗнтӗ ӑна – ҫемйине пӑрахса кайрӗ, ҫитменнине вӑрҫӑри суранӗ аптратнипе ҫут тӗнчерен те уйрӑлчӗ.

– «Каснӑ ҫӑкӑр чӗлли калле ҫыпӑҫмасть», – теҫҫӗ халӑхра. Манӑн та чунчӗре мӗншӗн-тӗр йышӑнмасть ӑна. Мӗн тӑвам? Ӑраскалӑм ҫапла-тӑр...

– Ӗмӗр сакки сарлака, хамӑр пурнӑҫра темӗн курмалла-ха. Пире каҫартӑр ӗнтӗ, – ҫапла калаҫкаласа кӳрши ури ҫине тӑчӗ.

– Кӑшт тӑхтамаллаччӗ. Хуранра чей вӗрететӗп, чей ӗҫсе кай, – кӗтме ыйтса калаҫрӗ Ялтӑрма.

– Маншӑн ан чӑрман, кин.

– Саншӑн ҫеҫ мар. Кирушпа Елюк шкултан таврӑнмалла, пурне те ҫитет.

– Эп мӗн калам, ҫителӗксӗр пурнӑҫпа пурӑнатӑн пулсан та сӗтел хушшине лартмасӑр ямастӑн.

– Кӳрше чей ӗҫтермесӗр мӗнле ярас-ха?

Кӳршипе кил хуҫи калаҫнӑ вӑхӑтра хуранри чей шывӗ вӗреме кӗчӗ. Ялтӑрма ачисем татса килнӗ матрӳшкене чей савӑчӗ ҫине ярса пӗҫерчӗ. Сӑмавар ҫукки кансӗр, анчах вӑл хуранта вӗретме хӑнӑхса ҫитнӗ ӗнтӗ. Ҫӑкӑр касрӗ, юлашки сахӑр катӑкӗсене сӗтел ҫине хучӗ те чӗнчӗ:

– Кинеми, сӗтел хушшине лар, чей ярса паратӑп, – ӑшшӑн калаҫрӗ кил хуҫи.

Синепи туртӑнса тӑмалла маррине ӑнланчӗ. Вӑл шупӑрне хывса ҫекӗлтен ҫакса чей ӗҫме сӗтел хушшине кӗрсе ларчӗ. Тин пӗҫернӗ матрӳшке шӑрши сӑмсана кӑтӑклать.

– Манпа пӗрле ларса ӗҫ-ха эс те, – сӑмах хушрӗ сӗтел хушшинче чей ӗҫекен кӳрши.

– Эп ачасемпе пӗрле ӗҫӗп-ха. Мана ан кӗт, пӗччен ӗҫ-ха, – Синепи карчӑк еннелле ҫаврӑнса калаҫрӗ Ялтӑрма.

Чей ӗҫсе сӗтел хушшинчен тухнӑ хыҫҫӑн кӳршӗ карчӑкӗ килне каҫрӗ. Ӑна хирӗҫ Кирушпа Елюк шкултан таврӑнчӗҫ. Сантӑр – кӗҫӗн ывӑлӗ – урамра выляканскер, вӗсемпе пӗрле килмен. Елюка амӑшӗ шӑллӗне чӗнсе килме хушрӗ. Пӗрремӗш класра вӗренекен хӗрӗ сумкине сак ҫине хурса урама хыпаланса тухрӗ. Елюкпа Сантӑра кӗтсе Ялтӑрма сӗтел ҫине апат хатӗрлерӗ. Нумай та вӑхӑт иртмерӗ – пӳрте шӑппӑн аппӑшӗпе шӑллӗ кӗчӗҫ. Апатланнӑ вӑхӑтра сӗтел хушшинче пӗри те нимӗн ҫинчен те шарламарӗ. Кашнин пит-куҫӗ салхуллӑ, чей те пӗр-пӗрне чӗнмесӗрех ӗҫрӗҫ. Амӑшне сӗтел ҫинчи савӑтсене пуҫтарса, чашӑк-кашӑксене ҫума Елюк пулӑшрӗ. Кируш мӑнакӑшӗ парнеленӗ витресемпе шыв ӑсма ҫӑл патне утрӗ. Сантӑр унран юлмарӗ.

Ялтӑрмана пӑяхӑшӗн хурлӑхлӑ хыпарӗ канӑҫ памарӗ. Петрухана больницӑран илсе килнипе килменнине пӗлесшӗн вӑл, ачисене ертсе Анаткасра пурӑнакан Кулинесем патне утрӗ.

Анна НИКОНОРОВА

Анна Степановна Никонорова 1952 çулхи çу уйăхĕн 27-мĕшĕнче Пăва районĕнчи Таккавар ялĕнче çуралнă. Элшелĕнчи вăтам шкултан, Пăвари сутуçăсене хатĕрлекен училищĕрен, Хусанти коопераци техникумĕнчен вĕренсе тухнă. Тĕрлĕ çулсенче лавккаçăра, лавкка тата склад заведующийĕсенче вăй хунă. 1981 – 2013 çулсенче Ульяновск облаçĕнче пурăннă. Çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх тытăмĕнче тăрăшнă.

Анна Степановнăн пĕрремĕш калавĕ Пăва районĕнчи «Ялав» хаçатра пичетленнĕ. Ентешĕмĕр «Чун туртăмĕ» тата «Чăнлă шывĕ хĕрринче» кĕнекесен авторĕ. 1967 çултанпа тĕрлĕ чăваш хаçачĕ-журналĕсенче пичетленет.

А.С.Никонорова – ТР ЧНКА çумĕнчи Чăваш çыравçисен союзĕн пайташĕ, Пăва районĕнчи ЧНКЦ хастарĕ, «Уяв» фольклор ушкăнĕн юрăçи. Пăвара пурăнать.

АСАМЛĂ ИКĔ КАÇ

Калав

Чăваш çĕршывĕнчен аякра пурăнакан чăваш çыннисенчен сахаллăшĕ Шупашкар хулинче пулса, спектакль тата чăн-чăн артистсене курнă пулĕ. Иртнĕ ĕмĕрти 70-мĕш çулсенче телевизорсем курăнкалама пуçласан та, чăваш кăларăмĕсене Чăваш Республикисĕр пуçне куракансем пулман. Çавăнпа та çуллахи вăхăтсенче Шупашкар театрĕсем чăвашла спектакльсемпе гастрольсене çӳретчĕç, шăпах чăн артистсене куçа-куçăн курма май пулатчĕ.

Ялпо лавккинче ĕçлекен çамрăк хĕр Клара Шупашкартан спектакль килет тенине клуб заведующийĕнчен илтнĕччĕ, правлени, больница умĕсенчи пĕлтерӳ хăмисем çинче те вуланăччĕ. Ячĕ вара кăмăла хуçать – «Хуравсăр юрату».

Ыран спектакль пулмалла тенĕ чух, эрнекун çумăр çума пуçларĕ, кунĕпе те çĕрĕпе çурĕ. Шăматкун кăнтăрла тĕлнелле хĕвел пăхса ячĕ,

вĕçен кайăксем хăйсен юррисене шăрантарчĕç, июнь уйăхĕ пулнипе чечексен шăрши сăмсана кăтăкларĕ.

Кăнтăрлахи апат вăхăтне лавккана хупса икĕ сутуçă чей вĕретсе ĕçрĕç, апат çирĕç. Çумăр çунине пула урайсем вараланнипе кĕçĕн сутуçă Валя витрепе пахчаран çумăр шывне ăсса кĕчĕ те урай çума пуçларĕ, Клара эрне хушшинче пуçтарăннă документсен отчетне тума ларчĕ, магнитофонне майĕпенрех ярса шутлама пуçларĕ. Илемлĕ чăваш юрри чуна пырса тивет:

Ытарайми шăпчăк пек,
Эс ларатăн ман çумра.
Юрататăп эп сана тесе каларăм,
Пĕр саншăн çеç чĕре çунать
Мĕншĕн тесен юратап сана, –

тет. Çак сăмахсене илтекен хĕр питĕ илемлĕ, телейлĕ пулĕ, начар çын валли юрă юрламаççĕ ĕнтĕ тесе Клара хăйĕн шухăшĕсемпе питĕ аякка вĕçрĕ. Ун кăмăлне каякан каччă пĕлтĕр авланчĕ. Вăл виçĕ çул аслăрах, Клара вĕренсе тухасса кĕтмерĕ. Тата хĕрĕ те «качча тухатăп, кăмăллатăп» теме те вăй çитереймерĕ. Клара яланах: «Çук, ан ухмахлан, эпĕ качча каймастăп, вăхăт çитмен-ха, тете те авланман-ха. Вăл мана ун пек тусан нихăçан та каçармасть», – тесе кăна калатчĕ Володьăна. Володя ăсатма çӳретчĕ, чуптуса та, пилĕкĕнчен тытса та курман. Кӳршĕ ял хĕрне шкулта вĕреннĕ чухне кăштах ăсаткаланă пулнă, икĕ эрне çĕнĕрен çӳренĕ хыççăн ял Советне кайса çырăннă та пĕр уйăхран туй турĕç.

Клара Володя авланасса пĕлмен, туй пуличчен хăй çине алă хума та шутланăччĕ. «Ак, вилетĕп те выртатăп, нимĕнле туй та пулмасть ун чухне, авланаймасть те», – текен шухăшсем пуçне кĕнĕ. Темĕнле эмелсем тупса алă тупанĕ çине те хунăччĕ, пуçа шухăш килсе кĕчĕ, мана пытарсан вăл пурпĕрех авланать вĕт, манăн вилсе выртас-и-ха уншăн, пурăнтăр, авлантăр, ял шоферĕ. Эпĕ вара артист тупатăп, ак, техникума вĕренме кĕретĕп те дипломпа Шупашкара каятăп, пысăк лавккана ĕçлеме кĕретĕп, театрсене çӳретĕп, артистсемпе паллашатăпах», – тесе тăвас ĕçне тумасăр, урăх тĕллев лартса малалла пурăнать. Тарăн шухăшран, асаилӳрен ăна Валя аппăшĕ вăратрĕ.

– Темĕнле палламан çамрăк çын лавккана кĕресшĕн, Шупашкар артисчĕ, спектакль кăтартма килтĕмĕр, лавккаран парне илсе каясшăн, апат вăхăтне кăна ячĕç, кайран репетици пулать, пушă вăхăт пулмасть тет, хăй тата мана урай çума чăрмантарать.

– Клара уçса кĕртсе кăлармăн-ши ăна хыçалти алăкран? – тет Валя.

– Манăн вăхăт сахал та, э-э, килтĕрех вара хыçалти алăк патне, мĕн илесшĕн-ши тата хăй? – текелесе пӳлĕмрен тухса склада кĕрсе кайрĕ Клара.

Алăка уçсан чипер çамрăка курах кайрĕ вăл.

– Каçарăр тархасшăн, парк урлă утнă чухне усал йытă сиксе тухрĕ, алăран çыртрĕ пулас, сирĕн аптечка пур пулас, йодăпа çыхасчĕ, тен, йытти пăсăкскер, – терĕ хайхискер, унтан сутуçăпа пĕрле лавккана кĕчĕ. Клара часах çамрăкăн аллине йод сĕрсе бинтпа çыхса ячĕ. Сурана çыхнă вăхăтра каччă хăйĕн ятне, хушаматне каларĕ, паян спектакльте вылясси çинчен

пĕлтерчĕ. Вăл лавккаран пысăк коробкăллă канфет илчĕ, икĕ «Шурă сирень» ятлă духи туянчĕ, пĕрне сурана çыхса янăшăн Кларăна парнелерĕ, теприне амăшĕ валли терĕ. Ваньăн (артиста çапла чĕнеççĕ) амăшĕ те артистка, анчах чирлĕ пулнипе вăл гастрольсене çӳреймест. Унăн ашшĕ çар çынни, майор, Афганистан вăрçинчен аманса таврăннă.

Йытă çыртнă суран сиенлĕ пуласран шикленсе больницăна кайса укол тутарма шутларĕç. Ваня больница ăçта пулнине пĕлменнипе Кларăна çул кăтартма ыйтрĕ. Хĕр килĕшрĕ, Валя аппăшне вăхăт çитсен лавккана уçма хушса хăварчĕ. Больницăна çитсен укол тутарчĕç те çамрăк каччă хĕре лавккана ăсатса хăварчĕ, каçхи спектакле пыма чĕнчĕ.

Клара ĕç пĕтсен мотоцикл çине ларчĕ те хăй пурăнакан яла вĕçтерчĕ. Каçпа илемлĕ сарафан, çӳллĕ кĕлеллĕ босоножки тăхăнчĕ. Вăрăм çӳçне бигудипе кăтралатса салатса тăсса ячĕ. Вăл спектакль курма та мотоциклпах кайрĕ. Вăл çак «Ковровец» транспорт хатĕрне хăй ĕçлесе илнĕ укçа-тенкĕпе туяннă. Тетĕшĕн те «Минск» пур, ăна парасшăнах мар, хăй те мотоциклпа çӳреме юратать. Кларăна амăшĕ вăрçать.

– Хĕрача пуççăн мотоцикл илмесен те юрать, качча кайма тупра туянас пулать, çулусем хушăнсах пыраççĕ ав, 20 çула та çитрĕн, юлташусем пурте тенĕ пекех качча кайрĕç, ачасем çуратаççĕ, эсĕ пур – халĕ те ача ăслă. Каччусем те авланаççĕ, мĕн кĕтетĕн-ши? – амăшĕ хăйĕн пăшăрханăвне пĕлтерчĕ хĕрне.

Клара вара:

– Эпĕ юлташсен пурнăçне пурăнасшăн мар, анне, качча каяс шухăш та çук, вĕреннĕ çынсем пек хулара пысăк лавккара ĕçлес тетĕп. Малтан 10 класс пĕтерсе тухсан сутăçăсем кăларакан училище пĕтертĕм, халĕ ак часах техникум пĕтеретĕп те товаровед пулатăп, тĕрлĕ тавар илетĕп. Сире вара, анне, тутлă апат-çимĕç çитересшĕн. Хăçан эсир çав тутлисене çинĕ? Выçлăх вăрçă вăхăтĕнче сире ача пăхма та ирĕк паман, хире, вăрмана хăваланă. Çавăнпа та мана, анне, качча каясси пирки пĕр сăмах та ан кала. Тен, мана каччисем юратмаççĕ те-ха, – терĕ.

– Юратнине эпир аçупа сисетпĕр-ха, чӳрече патĕнче кулленех шăхăркаласа çӳреççĕ. Пиччӳ, темĕн, пĕрне те кăмăлламасть-ши е сана усалланса çӳреттересшĕн мар-ши, ялан мана: «Анне, Кларăна урамра нумай çӳреме ирĕк ан пар, вăхăтпа çӳретĕр», – тет. Эпĕ вара ăна: «Клара килтен те тухмасăр ларать е кĕнеке вулать, е çырать, телевизор пăхма юратать, çав юрлакансене каçса кайсах юратать пулмалла, вĕсемпе пĕрле юрлать. Аçу «Время» пăхасшăн, Клара вара «Шире круг», «Алло, мы ищем таланты» передачăсене пăхать. Аçу вара яланах эрне пуçланнă чух программа вулать те: «Ах, çав Кларăн передачисем ку эрнере пулаççĕ, татах çĕнĕ хыпарсене итлейместĕп ĕнтĕ», – тет. Эпĕ вара Клара хутне кĕрсе: «Ав, хаçатусене лайăхрах шĕкĕлче, унта темĕн хыпарĕ те пур, каçпа ак килсе лараççĕ кӳршĕ арçыннисем çĕнĕ хыпар сан урлă пĕлме, хăйсем хаçат та вулаймаççĕ пулмалла», – тетĕп. Аçу вара мана çилленсех: «Вуламасан хăçатне мĕншĕн çырăнмалла, кăмака тивертме-и?» – тет. Тĕнче хыпарĕсене пĕлмесĕр ялти хĕрарăмсем сӳпĕлтетнине итлесе кăна пурăнма шутламастăп, ахальтен мар эпĕ вăрçа кайсан 6 патшалăхра

пулнă, вăрçăччĕн икĕ çул хĕсметре тăнă, вăрçă хыççăн тата пĕр çулталăк çурă пулнă, çавăнпа та мана тĕнче пурнăçĕ кăсăклантарать», – тет аçу.

– Юрĕ, анне, хăвăрăнне хăвăр чухлăр, эпĕ те Кларăна начар тăвасшăн каламастăп, ырă ятпа ялта пурăнтарасшăн кăна, – тесе лăпланать пиччĕшĕ...

Ак спектакль те пуçланчĕ, çамрăксем каллĕ-маллĕ сцена тăрăх утаççĕ, виçĕ çамрăк та лётчиксен формипе выляççĕ, Клара вара Ваньăна çухатсах ячĕ, карттус айĕнче кăтра çӳçне курма çук, аллинчи суран çыххинчен кăна палларĕ. Пур сăмахне, хусканăвне, уттине Клара ытарайми юратса пăхса ларчĕ, хăйĕн чĕри сиксе тухасла тапрĕ. Спектакль хыççăн Клара васкамасăр мотоцикл патнелле утрĕ. «Тен, артистсем клубрах юлаççĕ, кайран автобусĕпе каяççĕ», – тесе шутласа тухрĕ халăх.

– Клара, Клара, ăçта эсĕ? Кăштах тăхта-ха, ботинкăна тăхăнатăп, – илтрĕ хĕр сасартăк Ваньăн сассине. Кларăн чунĕ ирĕлсех кайрĕ, ун еннелле çӳлтен пирĕшти вĕçнĕ пекех туйăнчĕ. Унччен те пулмарĕ, каччă ун çумне çитсе те тăчĕ. Кĕçĕр хăна çуртĕнче çĕр выртма юлнине, ыран каç та кӳршĕ ялта спектакль пĕтсен çĕр каçма кунтах килнине пĕлтерчĕ.

Мотоцикл çине ларса çамрăксем ялтан тухса кайрĕç, юханшыв хĕррине çитсен кăвайт чĕртсе ячĕç, кăвайт çине пăхса ăшшăн-ăшшăн калаçрĕç. Ваня хăйне тахçанах Кларăна пĕлнĕ пек тытрĕ, хĕре Шупашкара вĕренме пыма чĕнчĕ, театра артист пулма ăçта вĕренмеллине тата пулăшма пултарнине пĕлтерчĕ. Ир çутăлса килеспе кăна яла таврăнчĕç, уйрăлнă чухне автобус хыçĕнче пĕрне-пĕри хĕрӳллĕн чуптурĕç.

Кăнтăрла тĕлĕнче Валя лавккана килсе кайрĕ, каçхине спектакль хыççăн кӳршĕ ял клубĕн умĕнче тĕл пулма калаçса татăлчĕç. Спектакль курма Клара кĕмерĕ, пĕтес умĕн кăна клуб умне çитсе чарăнчĕ. Клубран паллана, пĕрле вĕреннĕ çамрăксем тухрĕç, хăшĕсем чарăнса сывлăх сунса мĕншĕн клуба кĕменни пирки ыйтса пĕлчĕç. Ваня тухсанах Кларăпа иккĕшĕ мотоцикл çине ларчĕç те юханшыв хĕррине вĕçтерчĕç. Кăвайт çутмасăрах пĕр-пĕрин çине юратуллăн, илĕртӳллĕн пăхса ларчĕç. Ваня хыттăн-хыттăн ыталарĕ хĕре, хĕрӳллĕн чуптурĕ. Клара лавккаран тухса ĕçне урăх çынна парса хăварайсан Шупашкара пыма сăмах пачĕ. Вăл, паллах, кайма хатĕр, анчах та лавкка ĕçĕнчен часах тухса кайма çук, Валя аппăшĕ «пĕччен хам çине илсе юлмастăпах, мана шанса памаççĕ те» тесех тăрать. Клара Хусана сессие экзаменсем пама кайнă чухне те пур ĕçне те хăйех туса хăварать, таварне малтанах çителĕклĕ илсе килсе хăварать, пушă тарăсене вырнаçтарса, документсене мая кӳртсе хăварать.

Тунтикун кăнтăр вăхăтĕнче сывпуллашрĕç Кларăпа Ваня. Текех ку яла килейменнине, урăх района кайнине пĕлтерчĕ каччă. Клара сисрĕ хăй юратса пăрахнине.

Кун хыççăн кун иртрĕ, çулла та иртсе кайрĕ. Кларăна ĕçрен ямарĕç. Ялпо председателĕ аварие лекнĕрен малашне вăл ĕçре ĕçлейменнипе Кларăна директорсем хатĕрлекен курсра вĕренме ӳкĕтлерĕç. Вĕренме кайиччен лавккана илсе юлакан тупса парсан каятăп тесе килĕшрĕ Клара, анчах часах илсе юлакан тупаймарĕç, пурте пысăк лавккара ĕçлейместпĕр тесе каялла кайрĕç. Ноябрь уйăхĕнче кăна хăтăлчĕ Клара лавккаран. Çĕнĕ çулта çил-тăвăл вăхăтĕнче шăннипе Клара чирлерĕ. Больницăна лекрĕ.

Унтан тухсан февраль уйӑхӗнче Шупашкара тухса кайрӗ. Пысӑк лавккана аслӑ сутуҫа вырнаҫрӗ. Икӗ эрнерен смена пуҫлӑхӗ туса хучӗҫ. Апрель-май уйӑхӗнче патшалӑх экзаменӗсем тытрӗ, товаровед дипломне илчӗ. Июль уйӑхӗсенче тӗп пасарти 59-мӗш лавккан директорне лартрӗҫ. Ӑраскал хӑйех илсе ҫитерчӗ Кларӑна Ҫамрӑксен театрӗ патне. Театр юнашар пулни аван-ха, анчах артистсем вара ҫулла Шупашкарта ҫук.

Октябрь уйӑхӗнчи репертуарта Ваньӑн ячӗ пулманнипе Клара администратор патне кӗчӗ. Ваня ҫинчен калаҫма пуҫласанах администратор:

– Вӑл часах тухаймасть-ха сцена ҫине. Больницӑра, йывӑр операци тунӑ. Адресне никама та памастпӑр, хушман, – тесе хуравларӗ. Клара нимӗнле майпа та тӗл пулаймарӗ Ваньӑна. Ваня та пӗлмерӗ Клара Шупашкарта иккенне.

Пуш уйӑхӗнчи репертуарта Ваньӑн ячӗ тухрӗ. Театр ҫывӑхра пулнипе артистсем ку лавккана час-часах кӗркелеҫҫӗ. «Ваня та килмӗ-ши?» – тесе кӗтрӗ Клара. Ҫук, килмерӗ. Кӑнтӑрлахи апат вӑхӑтӗнче администратор патне ҫыру илсе кӗчӗ Клара. Ҫыру ҫине Шупашкартине, ӑҫта ӗҫленине, тӗл пулас килнине ҫырчӗ. Конвертне администратора парасшӑн пулчӗ, анчах администратор: «Эсир кам пулатӑр, мӗнле ҫыру?» – тесе ыйтсан, Клара ҫывӑх ҫынни пулнине, тӗл пуласшӑннине пӗлтерчӗ. «Ҫук, тӗл пулаймастӑр, Ваня авланнӑ, мӑшӑрӗ пур, ҫырусем памастпӑр», – терӗ хайхи.

– Мӗншӗн-ха апла, хӑҫан авланнӑ? Больницӑра выртатчӗ-ҫке? – тесе ыйтре Клара.

– Больницӑра паллашнӑ врачпа, ӑна качча илнӗ. Василиса Ивановнӑпа йывӑр, икӗ инвалидпа врач кирлех ӗнтӗ, Ваня та инвалид, – терӗ администратор.

Кларӑна уяр кун аҫа ҫапнӑ пек туйӑнчӗ ку хыпар. «Мӗн тӑвас-ши ку шӑпапа? Мӗншӗн манӑн юратнӑ ҫынсем урӑххисене качча илеҫҫӗ-ши? Эпӗ ҫын мар-ши вара? Мӗншӗн ҫаплах манӑн телейӗм ҫук?» – тесе нумайччен макӑрчӗ Клара Сергеевна, 59-мӗш лавкка директорӗ, ӗҫ пӳлӗмӗнче.

Майӗпен кӑна суран та тӳрленет, Клара та лӑпланса пычӗ, спектакльсене ҫӳрерӗ, Ваньӑна сцена ҫинче курса савӑнчӗ. Ваня ерипен кӑна вылярӗ. Малтанхи пек тӗп рольсем вылямарӗ вӑл, сцена ҫине сахал тухкаласа кӗркелерӗ. Кашни спектакль хыҫҫӑн Клара макӑрчӗ. Икӗ ҫул иртсен Шупашкартан каялла тӑван енне таврӑнчӗ, артиста вӗренме каяс шухӑша пуҫӗнчен кӑларчӗ. Малаллах суту-илӳре тӑрӑшрӗ. Тӗрлӗ ӗҫсенче ӗҫлерӗ: заведующий, начальник ӗҫӗсене илсе пычӗ вырӑс ялӗнче чӑваш хӗрӗ. Ҫемье ҫавӑраймарӗ. Хӑйӗн йӑмӑкӗсен, пиччӗшӗсен ачисемпе савӑнчӗ.

Кашни хӗлле пуҫтарӑнса Шупашкар хулине спектакльсем курма ҫӳрерӗ, тӗрлӗ артистпа паллашрӗ, вӗсене хӑй пурӑнакан ҫӗре хӑнана илсе ҫӳрерӗ. Сӑвӑ-юрӑсем ҫырчӗ.

Пӗррехинче спектакль хыҫҫӑн Ваньӑна чечек ҫыххи парнелерӗ вӑл, чечексен хушшине хӑна ҫуртне пыма чӗнсе ҫырнӑ ҫыру чиксе хӑварчӗ. Ваня тепӗр кунне пычӗ. Калаҫрӗҫ, савӑнчӗҫ пӗр-пӗринпе, 20 ҫул иртнипе туйӑмӗсем те сивӗне пуҫланӑ. Ваня Кларӑна тата тепӗр кунлӑха Шупашкарта юлма хистерӗ, йӑмӑкӗ те хӑварасшӑн пулчӗ. Ҫук, юлмарӗ Клара, килнех таврӑнчӗ.

Разиль ВАЛЕЕВ

ТАРХАСШĂН, АН КĔРСЕМ ТĔЛĔКСЕНЕ

Сана вĕт эпĕ мантăм тахçанах,
Тархасшăн, ан кĕрсем тĕлĕксене.
Çурхи çилсем инçе, инçе хăваласа
Асатрĕç манăн тунсăх пĕлĕтне.

Тархасшăн, ан кĕрсем тĕлĕксене,
Вăрантăм та – чĕре пусăрăнман.
Ик витрепе шыв ăсма, ăсма килнĕ пек
Ĕнтĕ тахçанах типнĕ пусăран.

Тархасшăн, ан кĕрсем тĕлĕксене,
Шурăмпуçра ыйхă – харама.
Кунăмсене, çулăмсене туртса илтĕн,
Каçăмсене хăвар мана хама.

Тархасшăн, ан кĕрсем тĕлĕксене,
Эрлентерсе ан кул эс аякран,
Сана мар эп хам çамрăк кунсене –
Çапла саватăп, юратап çапла.

Тархасшăн, ан кĕрсем тĕлĕксене.
Мĕн-ма кирлĕччĕ çак ман ĕмĕре?..
Саватăп халĕ кашни, кашни ыйхăра,
Пурнатăп халĕ кашни тĕлĕкре.

Тутарларан **Константин Малышев** куçарнă.

Равиль ФАЙЗУЛЛИН

КРЫМ

Тинĕсĕ шавлать, ун хумĕ – пĕкĕ,
Çумăрĕ хĕве юхса чĕтрет.
Ман чун хĕлĕхĕсен юрлать тĕвви.
Пăшăлтатса ларать йĕркен тирекĕ,
Цикадăсен витĕр курнан кĕвви…
Тинĕсĕ хумханчĕ тĕпĕр-тĕпĕр,
Çумăрĕ – йĕрет…
Ман хуйхă, сĕрме купăс евĕр,
Каçсен симфонине юхса кĕрет.

ÇИЧЧĔММĔШ ТӐПЕН ЮРРИ

Хĕвел патне ывăнмасăр кармашрăм–
Тытаймарăм кăштах шевлине.
Ултă тӳпе хыçалта эп хăвартăм,
Çиччĕмĕшне хал пулмарĕ çитме.

Çиччĕмĕш хучĕ – хĕвеллĕ тӳпе,
Епле-ши ăна тупмалла?
Çавах та унта эп çитетĕпех –
Хăçан та пулин санпала!

ПИРĔН ÇĔР

Тăван çĕртен тухса кайсассăн,
Йĕкĕт юрласа ярать:
«Лайăххи çинчен ан асăн,
Арçури те чăтаймасть».

Чылайран киле çитсессĕн,
Ячĕ ватă юрласа:
«Эрешмен карти те çепĕç,
Çăлĕ те епле таса...»

Зиннур МАНСУРОВ

СĔТ

Час-час мана çынсем паратчĕç тăн:
Тĕкпе çырни хăварĕ ĕмĕр сăн,
Çырни, ачам, чăнах пулать шăпа.
Касса-çке кăлараймăн пуртăпа.

Анчах.. Унтан пĕлтерчĕç пĕлĕшсем,
Ахаль сĕтпе Пăлхарăн çыннисем
Пергаментран сăмах иккен тасатнă.
Çаплах вĕт общество хăй асĕнчен пăрать
Чылай событие, çынна çăвать –
 Сĕте вĕсем каллех кайран таврăннă.

Шăп вăхăт – сĕт пурне те шуратать:
Ырра та, усала та тасатать,
Тирсем çинчен мĕн çырнине хырать вăл,
Кунта эп пурăннă, ăнлантăм тетĕп,
Вăл мăшкăла, хура та шуратать, пĕлетĕп.
Шав тасатать те кăларать çил-тăвăл...

Мĕнле пулать-ха çакă, çав пĕлет,
Кам çылăхсăр мар – шур тĕсе çитет.
Сĕт шурăлăхĕпе вăл пĕрлешесшĕн.
Аннеçĕм! Пытарса хăварнă эс мĕскер,
Мĕн тухайман сăнра, туян темскер,
Манра – хăвна, кăкăрупа сисесшĕн?

Апла пулсан, ёмёрхине хёҫ те витмест,
Ҫёрекенни – юхать те пёрёхет
Сёт пек… Мёскер-ха чун шырать?

***

Анчах анне чёнмест,
Инҫе кайса пырать.

СЮЮМБИКЕ БАШНИ

«Тайӑлнӑ башня, ан ҫывхар сёре,
Аллах ан хуштӑр, ҫӑк часах ӳкет!»
Ун никёсне чултан та ҫирёпрех,
Вырнаҫнӑ пирён хуйхӑ, чёпётет.
Ма кӑшкӑраҫ: «Астӑвӑр, халь ӳкет!» –
Пытараканнисем пыр тёпёпе.
Сююмбике ҫинчен пусма килет,
Пёрлештерет ҫёре вӑл пёлётпе.

Тур ҫеҫ пёлет, кам чӑнлӑха пӑрать,
Чӑнах е шӳтлесе куҫҫуль тӑкать.
Сююмбике башни тӳп-тӳр тӑрать,
Таврашёнче тёнче ҫеҫ тайӑлать…

Айрат ГАЛИМЗЯНОВ

ЕВРОПӐНА УҪАЙНӐ АЛӐК

Ҫумӑр, ҫил, лапка юр айёнче,
Нушаланаҫ ҫынсем, йёрет тёнче.
Юман сӑвай ҫапаҫҫё ёҫченсем –
Пит инҫетрен ҫуран ҫитнё вёсем.
Петёр патша Указё хушнипе,
Хӑваласа килеҫ катӑршан пек,
Ёҫлеттереҫ кунта ҫёрне-кунне
Кётет Голгофа сӑрт мёскёнсене.

Пӑлхар-чӑвашёсем лӑскаҫ чунёсене.
Ҫӑпатапа – мӑрса тӑхӑмёсем,
Ку тутарсем. Кунтах, ав, мӑкшӑсем.
Пёрремёш кун майларёҫ вырӑнне:
Ҫёрпӳрт чавса сӑйлаҫ ӳпресене.
Сив ҫил те нӳрёк, шурлӑх сывлани
Чир-чёр те нишлёх, терт, асапланни –
Уйӑхранах яраҫ масар ҫине…

Вилеҫ вёсем, пёрин хыҫҫӑн тепри
Вӑйсӑррисем каяҫ, чӑтать тёпри.

Тутар утравĕ тенĕ çак тĕле
«Хĕреслĕ вырăн халĕ» темелле.
Тен, чăн та тухатланă вырăн çакă:
Патша хăй, шурлăха чăмсассăн, акă
Путакана çăлма. Сывалайман,
Ӳтне шăнтса, нумай та пурнайман.

Венеци шыв айне майпен путать, ав, теççĕ,
Хавшанă никĕс – сăвайсем çĕреççĕ.
Атăлçисем çапайнă юпасем халь те –
Тăн-тăн тăраççĕ, çирĕп, Питĕрте.
Мăнаçланса ларать мăн Питĕрпур:
Хусан урамĕсем, собор та пур.
Шăм-шак çинче тĕпленнĕ тĕп хула
Пурнать паян мăнаçлă, улăпла…

Галимзян ГИЛЬМАНОВ

ÇУРМАРĔ ÇЕÇКИНЕ СИРЕНЬ

Пăсăлчĕ кăмăл çуркунне кăçал:
Çурмарĕ çеçкине сирень садра…
Турачĕсем пушах тĕмин – таса –
Курмастăп эп сана савни çумра.

Илемлĕн шăпчăкăн янрать сасси,
Ăçта вĕçсе çӳрен-ши? Хăш енче?
Пăхсан унта, кунта та – çук усси,
Сăнна курманнипе сӳнет тĕнче.

Тен, кăнтăрта эс, тинĕс хĕрринче,
Илĕртнĕ-кайнă, тен, шăпу манран?
Тен, керменте, патша читлĕхĕнче,
Хăв юррупа ăна савăнтаран?

Тен, ыррине анчах ĕмĕтленсе,
Çакланнă ăнсăртран ют капкăна.
Халь ак, сунарçă килессе кĕтсе,
Ларан ыраттарса эс яш чунна?

Тавра ташлать хаваслă çуркунне,
Эс манпа мар, ăçта, савни, çӳрен?
Чăтма, тен, пулĕ те эс çуккине,
Çуралаймасть вĕт-ха халь те сирень…

Тутарларан **Евгений Турхан** куçарнă.

ТУПМАЛЛИ

Ирина ТРИФОНОВА — Шурăмпуç килмесĕр кун тытăнмасть 2

Вера АЛЕКСАНДРОВА — Пар аллуна, тăван хаçат «Сувар»! 5

Николай ЗИМИН — Кĕтнĕ ывăл пек килсе çуралтăн..................18
Ман пуянлăх 19
Эсĕ пирĕн пĕртен-пĕр… 19
Ӳксе ан юл, чăвашлăх, çул хĕрне 20

Анатолий МАЛЫШЕВ — Чăн чăваш монологĕ 22

Евгений ТУРХАН — Тĕлпулу 25

Андриян ГРИГОРЬЕВ — Чирĕсем те нумай, чирлисем те нумай....... 33
Ӳстересчĕ чунра ыррине 33
Кĕрхи вăрманта 34
Юратса чĕре тапсан 34
Нарăс уйăхĕ ак çитрĕ 34
Хакли çук-тăр, чăн та, сывлăхран 34
Çăмăл мар çĕнтерме 34
Çĕнтерӳ уявĕ çĕршывпа пырать.................35

Ирина ТРИФОНОВА — Кĕпе 36

Константин МАЛЫШЕВ — Укçа 41
Юратнă хĕр 43

Антонида САУШКИНА — Тăван чĕлхе 45
Тăван ялăм 45
Ăсату 46
Кус эс, кустăрма! 46
Çурхи юрă 47
Вулаканпа калаçни.................................... 47
Шухăшсем 47

Ирина КУЗЬМИНА — Вĕсен аллинче çĕршыв малашлăхĕ, шăпи 49

Маргарита ЛИТТА — Андрей Кульметьев – Тăван çĕршывăн чăн-чăн патриочĕ 58

Ренат ХАРИС — Хусан Тур амăшĕ 64

Николай НЕСТЕРОВ — Фронтран салам кукамая 70

Алексей РОМАНОВ (КУЗЬМИЧ) — Пĕтет ку вăрçă, пулать Çĕнтерӳ! 71

Ухтияр ИЛЮХИН	Ма чӗнеп-ши?..	72
	Шӑрттан	73
Юрий АДЪЮТАНТОВ	Тӑван кил ӑшши	75
	Хаҫат тусӗ	77
Наталия КЛЕМЕНТЬЕВА	Ан айӑпла	79
	Кӗтетӗп	79
	Амӑш пӑшӑрханӑвӗ	79
	Шухӑшсем	80
	Ачасем	80
	Мӑшӑрӑма	80
Николай АНДРЕЕВ	Усӑллӑ «тӑкак»	81
Аскольд Де ГЕРСО	Таврӑнни	83
Ирина БОЛЬШАКОВА	Никама та ан кала	89
	Пурте пӗрле	91
Иван ПАВЛОВ-АКТАЙ	Ҫуралнӑ ял – тӑван кӗтесӗм	92
	Хӑнана сире кӗтетпӗр	92
	Эпир пур, эпир пулатпӑр	93
Лидия УГАХИНА	Марье	94
Валери ТУКТАР	Ялтӑрма	97
Анна НИКОНОРОВА	Асамлӑ икӗ каҫ	110
Разиль ВАЛЕЕВ	Тархасшӑн, ан кӗрсем тӗлӗксене	115
Равиль ФАЙЗУЛЛИН	Крым	115
	Ҫиччӗмӗш тӳпен юрри	116
	Пирӗн ҫӗр	116
Зиннур МАНСУРОВ	Сӗт	116
	Сююмбике башни	117
Айрат ГАЛИМЗЯНОВ	Европӑна уҫайнӑ алӑк	117
Галимзян ГИЛЬМАНОВ	Ҫурмарӗ ҫеҫкине сирень	118